63.3(2)722
П37

Г. А. Пласкин



ПИРЁН ЯНТАШСЕМ – ПЕРЕМЫШЛЬ ПАТТĂРЁСЕМ

Г. А. Пласкин

ПИРĔН ЯНТАШСЕМ – ПЕРЕМЫШЛЬ ПАТТĂРĔСЕМ

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1989

ББК 63.3(2)722.1
П 37

Алçырăвне СССР писательсен Союзĕн членĕ, Тăван çĕршыв аслă вăрçине хутшăннă офицер, халĕ отставкăри полковник *Прохор Трофимович Трофимов* рецензиленĕ

Пласкин Г. А.
П 37 Пирĕн янташсем — Перемышль паттăрĕсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989.—96 с.

Автор пирĕн янташсем — чăвашсем, вырăссемпе тата ытти наци çыннисемпе пĕрле, Тăван çĕршыв аслă вăрçин малтанхи кунĕсенче чикĕре, Перемышль хулипе ун таврашĕнче, гитлеровецсемпе паттăррăн çапăçнине кăтартнă. Очерксене вăрçă паттăрĕсем каласа пани тăрăх çырнă, çавăнпа пĕрлех çар пуçлăхĕсен, историксен документлă материалĕсемпе, салтаксен тата командирсен çырăвĕсемпе усă курнă.

ББК 63.3(2)722.1

П $\frac{0503020600 - 034}{\text{М } 136(03) - 89}$ 109 — 89

ISBN 5-7670-0219-3

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1989 ç.

МАЛТАН КАЛАНИ

СССР Оборона наркомĕ Совет Союзĕн Маршалĕ С. К. Тимошенко 1940 çулхи сентябрьте Киевпа Белорусси çар округĕсенче тактика вĕренĕвĕ ирттернĕ. Унта Киев çар округне кĕрекен 99-мĕш стрелковăй дивизи те хутшăннă. Ку вĕренӳрех Г. К. Жуковпа К. А. Мерецков арми генералĕсем те пулнă. Сентябрĕн 25—27-мĕшĕсенче С. К. Тимошенко 99-мĕш дивизие уйрăммăн тĕрĕслесе. Кайран халăх комиссарĕ ку дивизие приказпа Хĕрлĕ Çарăн куççа çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Пĕрремĕш стрелковăй полка вара Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăлама ыйтса, М. И. Калинин патне çыру çырнă. Дивизири нумай командирпа политработника, кĕçĕн командирпа салтака хаклă парнесем панă. Чылай командирăн çар званине пысăклатнă.

Вăрçă умĕн 99-мĕш стрелковăй дивизи пĕтĕм Хĕрлĕ Çарта чи лайăххисенчен пĕри шутланнă. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ тĕлне ку дивизин уйрăм пайĕсем çак позицисенче тăнă: 206-мĕш стрелковăй полк Медыка ялĕ çывăхĕнче, Сан шывĕнчен икĕ çухрăм çурăра, 1-мĕш полкăн икĕ батальонĕ Седлиска ялĕнче, ку полкăн тепĕр батальонĕ Нижанковичи ялĕнче пулнă, 197-мĕш полк Перемышлĕн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи хĕллехи казармăсенчех юлнă; 22-мĕш артиллери, 71-мĕш гаубичнăй артиллери полкĕсене тата 113-мĕш зенитнăй уйрăм дивизиона, корпусри икĕ артполка вăрçă пуçланиччен икĕ эрне маларах Седлиска ялĕ çумĕнчи вăрмана лагере куçарнă.

Тăшманпа тӳрремĕнех çапăçмалли тата запасри позицисем, батарейăсен сăнамалли пункчĕсем йăлтах хатĕр пулнă. Дивизи штабĕпе тата 206-мĕш полкпа çыхăну телефонпа, погранзаставăпа посыльнăйсем урлă тытнă.

Разведчиксен 46-мĕш уйрăм батальонĕ, автотранспортăн 12-мĕш батальонĕ хулара е çывăхри ялсенче тăнă.

Дивизин 45 çухрăма тăсăлакан чикке хӳтĕлемелле пулнă.

92-мĕш погранотряда 1939 çулта йĕркеленĕ, унăн 215 çухрăм тăршшĕ тăсăлакан чикке сыхлама тивнĕ. Чикĕ йăлтах Сан шывĕпе пынă. Çак тăрăхра пурĕ 21 застава, темиçе комендатура, маневрла ушкăнсем туса хунă. Заставăсене винтовкăсем, автоматсем, станоклă пулеметсем икшер тата тăватшар алă пулемечĕ панă. Пограничниксем, çавăн пекех 99-мĕш дивизири салтаксемпе командирсем, пĕр-пĕрне пулăшса, питĕ туслă пурăннă. Дивизин сылтăм флангĕнче 97-мĕш стрелковăй дивизи, сулахайĕнче 72-мĕш горно-стрелковăй дивизи тăнă.

1941 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче, шăматкун, Берлинран нимĕç армийĕсен штабĕсене шифрланă телеграммăсем ярăççĕ. «Кăнтăр» арми хăйне пăхăнакан чăсен штабĕсене «Паттăрсем çинчен халап. Вотан. Некар. 15» текен пароль панă. Ку июнĕн 22-мĕшĕнче, ирхине, Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçлатпăр, тенине пĕлтернĕ.

Вăрçăн малтанхи сехетĕнче уйрăмах вăйлă çапăçусем Перемышль хулине икĕ пая уйăракан Сан шывĕ урлă хывнă чугун çул кĕперĕ, электростанци тата ашкакай комбиначĕ патĕнче пынă. Чугун çул кĕперне застава начальникĕн заместителĕ С. П. Нечаев лейтенанг ертсе пынипе хӳтĕленĕ. Халиччен çăмăллăнах çĕнтерме хăнăхнă фашистсем кĕпер çине пĕшкĕнмесĕр-тумасăр, кулса-калаçса пырса кĕнĕ. «Рус, капут!» — кăшкăрашнă хăшпĕрисем каппайланса. Кĕпер варринчи шурă лини урлă каçсан, Нечаев лейтенант вĕсем çине пĕрремĕш граната ывăтать. Çак хушăрах пирĕн пограничниксем винтовкăсемпе алă пулемечĕсенчен çунтарма пуçларçĕ. Çакна пачах кĕтмен фашистсем малтан выртаççĕ, унтан, кĕпер фермисен хыçĕпе пытана-пытана, каялла тараççĕ. Чылайăшĕ кĕпер çинех выртса юлать.

Г. С. Поливада аслă лейтенант ертсе пынипе пограничниксен тепĕр ушкăнĕ чугун çул кĕперĕнчен анатарах гитлеровецсемпе паттăррăн кĕрешнĕ.

Гитлеровецсем 14-мĕшпе 15-мĕш заставăсен хушшине вăйсăртарах вырăн тесе шутланă, кунтан, Сан урлă каçса, пограничниксен тылне çăмăллăнах тухма ĕмĕтленнĕ. Анчах ку вырăна И. И. Жомов политрук ертсе пыракан взвод станоклă икĕ пулеметпа, пĕр алă пулемечĕпе тата винтовкăсемпе çирĕп хӳтĕленĕ. Вăл тăшман атакине пилĕк хутчен сирсе янă, çĕр ытла фашиста вĕлернĕ.

Перемышльти çирĕплетнĕ районăн огневой точкисен гарнизонĕсем пограничниксене пысăк пулăшу параççĕ. Чаплин кĕçĕн лейтенант ертсе пыракан ДОТ чикĕрен пурĕ те 70—80 метрта çеç. Çак виçĕ хутлă ДОТра пĕр тупăпа икĕ пулемет. Вĕсем нимĕçсен Сан шывĕн лешенчи çунтармалли хатĕрсен складне тупăран персе вут хыптараççĕ, фашистсен кĕпер патĕнче тăракан эшелонне те лайăх ăшалаççĕ. Çак ДОТ çине нимĕçсем пилĕкçĕре яхăн снаряд кăларса янă, анчах вăл çаплах «чĕрĕ». Вĕсем нимĕçсемпе талăк çурă пĕр чарăнмасăр çапăçнă: хамăрăннисем чаксан та, паттăрсем унтах юлнă.

Тепĕр ДОТра Данин кĕçĕн лейтенант, коммунист расчечĕ фашистсемпе икĕ талăк кĕрешнĕ.

Перемышль хулинчи парторганизаци, парти комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ П. В. Орленко ертсе пынипе, вăрçăн пĕрремĕш сехетĕнчен пуçласах йĕркелĕхе çирĕп пăхăннă. Нимĕçсем пеме пуçласанах хулари коммунистсемпе комсомолецсем, совет активисчĕсем парти комитетне пухăнаççĕ. Хĕрлĕ Çара пулăшма калаçса татăлаççĕ. Часах 187 рабочипе служащие винтовкăсемпе хĕçпăшаллантараççĕ. Вĕсем пограничниксемпе танах паттăрăн кĕрешеççĕ.

Çапла вара, пограничниксен отрячĕн вăйĕпе, çирĕплетнĕ районти огневой точкăсен гарнизонĕсен хастарлăхĕпе, дивизин уйрăм подразделенийĕсем тата ополченецсем çине тăрса çапăçнипе, кăнтăрлаччен чикĕ линине çирĕп тытса тăнă. 12 сехетре пограничниксен 92-мĕш отрячĕн командирĕ Я. И. Тарутин майор чикĕ тăрăхĕнчи çарсен округĕн начальникĕнчен, В. А. Хоменко генерал-майортан, Перемышль хулинчен тухса кайма приказ илнĕ. Пограничниксемпе пĕрлех ополченецсен отрячĕ те чакнă. Хула хĕрринчи масар çывăхĕнче Я. И. Тарутин майор Г. В. Черных капитана, пограничниксемпе ополченецсене пĕрлештерсе, батальон йĕркелеме приказ панă.

Хулара вăрçă шавĕ çаплах лăпланман. Унта та кунта винтовка, автомат, пулемет пени çĕрĕпех илтĕнсе тăнă. Çĕрле 99-мĕш стрелковăй дивизи хулан хĕвелтухăç енне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пухăнса çитнĕ те, июнĕн 23-мĕшĕнче çапăçăва кĕрсе, Перемышль хулине нимĕçсенчен йăлтах тасатнă. Çуртсем çинче хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшме тытăннă, магазинсемпе столовăйсем уçăлнă, тĕрлĕ учрежденисем ĕçлеме пуçланă.

1941 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Совинформбюро çапла пĕлтернĕ: «Ĕнер пирĕн мухтавлă çарсем, хирĕç çапса, Перемышль хулипе крепоçне каялла туртса илчĕç».

Перемышль хулипе крепоçне хӳтĕленĕ 99-мĕш дивизизие халăхра легендарлă дивизи теççĕ, нимĕçсем вара ăна «Коммунистсен дивизийĕ» тесе ят панă. Ку дивизи чăнах та юмахри пек паттăр пулнине нумай-нумай документ тата çав дивизире пулнă, мĕн халичченех пурăнакан çынсем витĕмлĕ, ĕненмелле çирĕплетсе параççĕ.

СССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Фронтра Германи фашисчĕсемпе çапăçнă вăхăтра командованин боевой заданийĕсене чыслăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн 99-мĕш стрелковăй дивизие Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
М. И. Калинин.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. Горкин.

Мускав, Кремль, 1941 çулхи июлĕн 22-мĕшĕ.
(Правда. 1941. Июлĕн 23-мĕшĕ).

Çапла, Аслă Отечествăлла вăрçăра 99-мĕш стрелковăй дивизи чи малтан Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçлĕ пулать.

СССР Оборона министрĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ А. А. Гречко нимĕç фашисчĕсене çĕнтернĕренпе 25 çул тултарнă ятпа тунă докладра çапла каланăччĕ: «Паттăр та хăюллă кĕрешнĕ совет воинĕсем Брест крепоçĕпе Перемышльшĕн...»[1]

Совет Союзĕн Маршалĕ, тăватă хутчен Совет Союзĕн Геройĕ Г. К. Жуков хăйĕн «Воспоминания и размышления» ятлă кĕнекинче 99-мĕш стрелковăй дивизин вăрçăн малтанхи кунĕсенчи паттăр та хăюллă кĕрешĕвне пысăка хурса хаклать, ăна тĕплĕн тишкерсе тухать. Маршал çапла ăнлантарать: Перемышль хулине пулеметчиксен 52-мĕшпе 150-мĕш батальонĕсем тата 92-мĕш погранотряд хӳтĕленĕ. Вĕсем июнĕн 22-мĕшĕнче ултă сехет тĕлнех хăйсен малтанах хатĕрленĕ позицийĕсене йышăнма ĕлкĕрнĕ. Кунта рабочисемпе интеллигенцин хĕçпăшалланнă отрячĕсем те пулнă. Фашистсем вĕсенчен темиçе хут ытларах пулнă пулин те, паттăррăн кĕрешсе, тăшмана чылай вăхăт хушши тытса тăнă. Унтан 92-мĕш погранотряд

[1] Правда. 1970. 10 мая.

начальникĕ Я. И. Тарутин майор пурне те, хула хыçне чакса, çĕнĕ рубеж йышăнма приказ парать. Кунта вĕсем тăшмана тепĕр хут тытса чараççĕ. Çакă лагерьте тăнă 99-мĕш стрелковăй дивизие (командирĕ Н. И. Дементьев полковник) килсе çитме май парать. Июнĕн 23-мĕшĕнче дивизи, пограничниксемпе ополченецсен пĕрлештернĕ батальонĕпе пĕрле, хирĕç çапса, фашистсене хуларан каялла хăваласа кăларать. 99-мĕш дивизи фашистсен пысăк вăйне çĕмĕрсе тăкнă, çичĕ талăк хушши совет çĕрне пĕр метр та паман. Вилнисене шутласа пăхнă та пĕр совет салтакне виçĕ нимĕç тивнине палăртнă. Июнĕн 29-мĕшĕнче ирхине тин, командовани приказне пăхăнса, дивизи хуларан тухса кайнă [1].

«Правда», «Известия», «Красная Звезда», фронтсемпе армисенче, дивизисенче тухса тăнă пур хаçатсенче те вăрçăн малтанхи кунĕсенче, пирĕншĕн чи йывăр вăхăтра, 99-мĕш дивизин паттăрла ĕçĕсем çинчен çине-çинех статьясем, унăн боецĕсемпе командирĕсен сăнӳкерчĕкĕсем пичетленеççĕ. Çав статьясене политработниксемпе агитаторсем салтаксене вула-вула панă. Пирĕннисем пĕтĕм фрончĕпех тăшманпа çапăçса чакса пынă вăхăтра, 99-мĕш стрелковăй дивизи, хирĕç çапса, чикĕри Перемышль хулине хăйĕн аллинче çирĕп тытса тăни пурне те тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтернĕ.

Александр Васильев «Возвращение к легенде» кĕнекинче вăрçăн çиччĕмĕш кунĕнче хăйсен чаçĕнче пулса иртнĕ митинга çапла çырса кăтартать:

«Дивизи командирĕ грузовик çине хăпарса тăчĕ.

— Юлташсем! — тесе пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне. — Эпĕ никама та айăпламастăп: эсир пурте паттăррăн çапăçрăр. Анчах та текех чакма юрамасть. Эпир çакăнта оборона йышăнатпăр та текех пĕр утăм та чакмастпăр! Эсир пĕлетĕр-и? 99-мĕш стрелковăй дивизи мĕн халиччен ех чикĕ хĕрринчи Перемышль хулине хăй аллинче тытса тăрать. Эпир вара ăçта? Сиртен ыйтатăп, ăçта эпир?! Чикĕрен икçĕр çухрăмра!

Генерал дивизи ялавне çĕклеме приказ пачĕ. Сывлăшра хĕрлĕ ялав вĕлкĕшме пуçларĕ.

— Эпир те çак ялав умĕнче Перемышль паттăрĕсем пекех кĕрешме тупа тăватпăр!

— Тупа тăватпăр! — янăраса кайрĕ ретсем тăрăх.

— Текех пĕр утăм та чакмастпăр!

---

[1] См.: Жуков Г. К. Воспоминания и размышления. М., 1969. С. 255.

— Тупа тăватпăр! Чакмастпăр!»[1]

Çав кĕнекеренех тепĕр тĕслĕх.

«Окопсем тăрăх политпайран килнĕ агитаторсем çӳреççĕ. Вĕсем сасăпа статьясем, очерксем, калавсем, сăвăсем вуласа параççĕ. «Навеки овеянный славой крылатой, да здравствует путь девяносто девятой!» Эпир паттăрсен сăнӳкерчĕкĕсем çине тĕмсĕлсе пăхатпăр. Вĕсем пирĕн пекех. Пирĕн пурин те тăшманпа хăвăртрах тепĕр хут тĕл пулас килет» [2].

Тата тепĕр тĕслĕх:

«Эпир, тăшман ӳнкине лекнисем, июлĕн 24-мĕшĕнче вăрманта радио итлетпĕр. СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 99-мĕш стрелковăй дивизие Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлани çинчен Указ вулаççĕ. Репродуктор патне салтаксемпе командирсем йышлăн пухăннă. «Шухăшлăр-ха, пĕрремĕш орден!» — тет пĕр офицер. «Пурте ăнса пырать-çке ку 99-мĕш дивизире. Телейлĕ унти салтаксем», — тĕлĕнет тепри. «Апла пирĕн те вĕсем пекех çапăçмалла. Кĕçĕр ункăран мăйкăча татса тухмалла!»— татăклăн калать сăмси çине пенсне лартнă типшĕм генерал» [3].

Вăрçă пуçламăшĕнче 99-мĕш дивизи Перемышле çапла паттăррăн хӳтĕлени хура тӳпери çутă çăлтăр пекех пулнă, çав çăлтăрăн çути пур фронтсенче те ялкăшса çуталнă, совет воинĕсене фашистсемпе паттăр та хăюллă кĕрешме хавхалантарнă.

Асăннă дивизире чăвашсем те нумай пулнă. Çав паттăр янташсем çинчен тăван халăха каласа памаллах.

---

[1] Васильев А. Возвращение к легенде. М., 1967. С. 12—13. (Перевод наш. — Г. П.)

[2] Там же. С. 19.

[3] Там же. С. 18.

ПĔРРЕМĔШ ТĔЛПУЛУ

Савăнса-çунатланса, хумханса-пăлханса вулатăп Ю. К. Стрижковăн «Герои Перемышля» кĕнекине. 138-мĕш страница. Тăпах чарăнатăп. «Чернигов тăрăхĕнче партизан отрядĕнче 1-мĕш стрелковăй полкран А. Г. Ефимов сержант çапăçнă, халĕ вăл Чăваш АССР-ĕнче пурăнать» тенине блокнота çырса илетĕп. Малалла вулатăп. «Чăваш республикинчи Элĕк вăтам шкулĕнчи «Чайка» клуб йĕрлевçисем те нумай ĕç тунă, вĕсене Перемышль хўтĕлевçи, 1-мĕш стрелковăй полк сержанчĕ пулнă М. В. Бурмистров ертсе пырать» тенине те блокнотра паллă тăватăп.

Ку мана тĕлĕнтерсе-савăнтарса ячĕ. Ара, эпĕ ку шкултан пурĕ те виççĕр метрта çеç пурăнатăп-çке. Юлашки страницине вуланă хыççăн кĕнекене хупатăп та пĕр тăхтаса тăмасăрах шкула васкатăп.

— Манăн Бурмистров учителе курса калаçмаллаччĕ, — тетĕп Иван Алексеевич Агафонов директора алă парса сывлăх суннă хыççăн.

— Пирĕн шкулта унашкал хушаматлă учитель çук,— тавăрать мана директор. Хăйĕн тути çинче ăшă кулă палăрать.

Эпĕ алăри кĕнекене уçатăп та директора кăтартатăп.

— Мĕнле çук? Акă, кунта шурă çине хурапах çырнă-çке, М. В. Бурмистров тенĕ.

— Унта çаплах çырнă та, анчах кăштах пăтраштарнă. Айтăр, паллаштарам, вăл халĕ шăпах «Чайка» клубра пулма кирлĕ, — тесе, директор мана сада вырнаçнă уйрăм классенчен пĕрне илсе кĕчĕ. Кунта ачасем пĕвĕпе икĕ метра яхăн, кĕлеткипе чăн-чăн улăп паттăра аса илтерекен çынна çавăрса илнĕ те пĕр-пĕрне пўлсех калаçаççĕ.

— Меркурий Владимирович, сирĕнпе çак юлташ паллашасшăн, — терĕ директор, çав учитель патне пырса.



М. В. Никифоров, сержант, аслă радиотелеграфист.

Тĕрĕссипе вара, пире паллашма кирлĕ те мар иккен: эпир пĕр-пĕрне чылайранпа пĕлетпĕр. Анчах вăл халиччен маншăн Бурмистров мар, Никифоровчĕ.

Ĕçĕ çапла пулнă. Элĕкри «Чайка» клуба пынă материалсене (копийĕсене, паллах) «Герои Перемышля» кĕнеке авторне Никифоров яраяра панă иккен, Вăрмарта ĕçленĕ М. В. Бурмистров учитель-краевед та Ю. Стрижкова тĕрлĕрен материалсем ярса тăнă. Кĕнеке авторĕ «М. В. Никифоров» вырăнне «М. В. Бурмистров» тесе пичетлесе кăларнă.

— Акă, Стрижков çырăвне вулăр, — тет мана Меркурий Владимирович.

Кĕнеке авторĕ çапла йăнăш пулса тухнăшăн Никифоровран каçару ыйтнă, паха материалсем ярса панăшăн чĕререн тав тунă. Сăмах май каласан, вĕсем халĕ çывăх туссем, пĕр-пĕрне тăтăшах çырусем çырса тăраççĕ.

— Пирĕн паянхи почта уйрăмах пуян пулма кирлĕ. Малтан çак бандероле уçар-ха, — тет Меркурий Владимирович, аллинчи пысăк конверта кăтартса.

Эпир сĕтел тавра пуçтарăнса лартăмăр. Бандероль Валерий Иванов пионер ячĕпе килнĕ. Уçрĕç. Унтан А. С. Ильин генерал-майорăн пысăк сăнӳкерчĕкĕ тата 38 страницăллă çырăвĕ тухрĕ. Вăл 99-мĕш дивизин политпай начальникĕ пулнă. Халĕ Киев хулинче пурăнакан отставкăри генерал ӳркенмен. Дивизири коммунистсемпе комсомолецсен тĕлĕнмелле паттăрлăхĕ çинчен чĕрене хумхантармалла, ĕмĕр асра юлмалла çырнă вăл. «Эпир, мухтавлă Совет çĕршывĕн çамрăк çыннисем, калама çук пысăк, кирлĕ, усăллă ĕç тăватăр. Хăвăр клуба ертсе пыракан М. Никифоров учителе, пирĕн дивизире пулнă паттăр салтака, манран хĕрӳллĕ салам калăр. Алçырăвне каялла ярса пама ыйтатăп», — теннĕ генерал çыру вĕçĕнче.

— Акă, мĕн, ачасем, çапла тăвар, — терĕ Меркурий Владимирович, çыру текстне 10 пая пайларĕ. Вара вĕсене клуб членĕсене валеçсе пачĕ. — Генерал мĕнле çырнă, шăп та лăп çавăн пек, пĕр сăмах улăштармасăр хăвăрăн тетрадьсем çине куçарса çырса илĕр. Кайран вĕсене пĕрлештерсе çĕлĕпĕр, ытти документсемпе пĕрле шкапа хурăпăр. Унтан алçырăвне генерала каялла ярса парăпăр, тав çырăвĕ çырăпăр.

«Чайка» клуб членĕсем парта хушшинне кĕрсе ларчĕç те çырма пикенчĕç.

Пĕр шкап çыру! Ăçтан-ăçтан килмен, кам-кам кăна çырса яман пулĕ кунта!

— Кăмăлăр пулсан, кусене киле илсе кайсах вулама пултаратăр. Уйрăмах интереслисем, ятлă-сумлă çынсем çырнисем, — ман ума пĕр çыру хыççăн тепĕрне хурать Меркурий Владимирович. — Акă, ку пирĕншĕн уйрăмах хаклă. Ана дивизи штабĕн начальникĕ пулнă Горохов генерал-майор çырнă. Ун чухне вăл полковникчĕ. Кунта дивизи кунçулне уйрăмах тĕплĕ çырса кăтартнă. Ана та, паянхи пекех, куçарса илтĕмĕр, копине кунта хăвартăмăр, çырăвне каялла ярса патăмăр. Кайран Горохов пире тав туса хуравларĕ.

Меркурий Владимирович ман ума машинкăпа пичетленĕ тепĕр çыру пырса хучĕ. Бакуран Борис Кумариташвили çырать.

— Унпа тата мĕнле çыхăннă эсир?

— Аван пĕлеттĕм эпĕ ăна. Пулеметчикчĕ. Унăн адресĕ те упранса юлнăччĕ. Чĕрĕ юлнă-ши тесе, çыру çырса ятăм та, авă, мĕн хулăнăш çыру ячĕ. Вĕсем 52-мĕш пулемет батальонĕнче пурĕ вуникĕ грузинччĕ, чикĕ хĕрринчех тăратчĕç. Вулăр. Вара пирĕн пулеметчиксем фашистсемпе мĕнлерех çапăçнине хăвăрах лайăх ăнланса илĕр. Акă, çакăн адресне вулăр тата, — Никифоров мана 10 страницăллă тепĕр çыру тыттарчĕ. Вулатăп: «Одесская область, Татар-Бунарский район, колхоз «Правда», Федор Тихонович Лепилин».

— Кам вара вăл?

— Пĕлместĕр-и? Вăл пĕтĕм Одесса облаçĕнче чапа тухнă колхоз председателĕ. Пирĕн дивизире рядовой салтакчĕ, —хуравларĕ Меркурий Владимирович, вăл мана тата тепĕр çыру пачĕ. Вулатăп: «Артиллери, 99 ст. д. 1941 ç. Перемышль патĕнчи çапăçусенче» тесе ят панă ăна. Авторĕ — Калюжный, запасри подполковник.

— Чи хакли пирĕншĕн, темле пулсан та, çакă. —Меркурий Владимирович хальхинче хытă хуплашкасем хуш-

шине хунă виçĕ страницăллă çыру тыттарчĕ. Эпĕ ăна куртăм та тата ытларах тĕлĕнтĕм. Совет Союзĕн Маршалĕ Иван Христофорович Баграмян «Чайка» клубăн членĕсене тĕплĕ çыру ярса пама ӳркенмен, ăна вăл «Çĕнтерӳ çулĕпе» ят панă.

Унти хăшпĕр вырăнсемпе вулакана паллаштарар-ха.

«Кăнтăр — Хĕвеланăç фрончĕн летописĕ маншăн шăпах Перемышльтен пуçланчĕ. Ун чухне эпир пурте, фронт командующийĕнчен пуçласа рядовой боец таранах, Сан шывĕ хĕрринчи хĕрӳллĕ çапăçусем çинчен пĕлеттĕмĕр, Перемышле хӳтĕлекенсен паттăрлăхĕпе хăюлăхĕнчен тĕлĕнсе савăнаттăмăр. Çак паттăр гарнизон, ума лартнă задачăсене чыслăн пурнăçласа, чакнă чухне те тăшмана пĕр хăрамасăр аркатса-çĕмĕрсе пычĕ, хăйпе кӳршĕллĕ дивизисемпе уйрăм чаçсене те пысăк пулăшу пачĕ. Уншăн вĕсене, 99-мĕш стрелковăй дивизири боецсемпе командирсене, чĕрĕ юлнисем мĕн виличченех манмĕç.

Ун чухне кунсем шутсăр йывăрччĕ. Çавăн пек хăрушă самантра эпир каялла чакни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Эпĕ çар çынни. Чакнине те тӳснĕ, Аслă Çĕнтерӳ кунне курса та савăннă. Çавăнпа 1941 çулхи çуллахи йывăр пулăмсен тĕп пĕлтерĕшне палăртса хăварасшăн.

Анăçри патшалăхсене турта-турта илнĕ чухнехи çăмăл çĕнтерӳсене хăнăхса çитнĕ фашистсем Хĕрлĕ Çар çирĕп те хăватлă пуласса кĕтмен. Вăрçăн йывăр та трагедиллĕ пĕрремĕш уйăхĕсем пирĕншĕн малашнехи çĕнтерӳсем валли шкул та, опыт та пулса тăчĕç. Çакă вара тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе çапса аркатма пулăшрĕ...

Пирĕн çамрăксен ашшĕсен паттăрлăхĕ, эпир Çĕнтерӳ патне утса тухнă çул çинчи йывăрлăхсем çинчен пĕлмеллех...»

Меркурий Владимирович шухăша кайнă пек пулчĕ, унтан çапла хушса хучĕ:

— Пирĕн мухтавлă дивизи пирки вăрçă пуçламăшĕнче пĕтĕм тĕнче шавласа каларçĕ. Вăл пĕтĕм Совет Çарĕшĕн ырă тĕслĕх пулса тăчĕ. Халĕ те, акă, пирĕн дивизи çинчен кĕнеке хыççăн кĕнеке кăлараççĕ. Тĕрлĕрен хаçатсемпе журналсенче интереслĕ статьясем пичетленеççĕ. Ку дивизире чăвашсем те нумай пулнă. Пирĕн районтан кăна аллă çынна яхăнчĕ. Эпĕ пĕлменнисем мĕн чухлĕ пулнă пулĕ, — хумханать вăл аса илнĕ май.

— Халлĕхе хăвăр çинчен каласа кăтартăр-ха. Сывлăх пулсан, ыттисем патне те çитсе курăп, — шантаратăп Никифорова, вăл мĕн каласса интересленсе кĕтетĕп.

— Радиотелеграфист пулнă май эпĕ хамăр полкри командирсемпе боецсене çеç мар, ытти чăссенчи чылай çынна та аван пĕлеттĕм. Ыран июнĕн çирĕм иккĕмĕш тенĕ каç эпĕ дежурствăра тăраттăмччĕ. Наушник тăхăннă, алăсем — аппарат çинчех. Тул çутăлса килнĕ вăхăтра умри аппарат темле канăçсăррăн, хыпăнуллăн çатăртатса илчĕ. Пирĕн çине фашистсем тапăнни çинчен пĕлтерчĕç заставăран. Эпĕ тӳрех дивизи штабне шăнкăравларăм. Дежурнăй офицерпа калаçнă хушăра сыхăну татăлчĕ. Пирĕн полк ун чухне лагерьте тăратчĕ, чикĕрен инçерехчĕ. Çавна пула вăрçăн пĕрремĕш кунĕ нимĕнле тытăçу таврашĕ те пулман. Каç пулса çитнĕ çĕре, пĕр çапăçусăр-çухатусăрах, хулан хĕвелтухăç енне, масар патне пырса çитрĕмĕр. Çĕрле, çур çĕр иртсен, полк командирĕн политпай заместителĕ Розенштейн парти пухăвĕ пухрĕ.

— Кун йĕркинче пĕр ыйту, — терĕ вăл. — Перемышль хулине штурмламалла, тăшмана Сан шывĕ урлă каялла хăваласа ямалла. Коммунистсем, пирĕншĕн кашни минут хаклă. Эпир вăрçă хирĕнче çакна кăтартса памалла: большевиксем тăшмана пĕтĕм чунтан, пĕтĕм чĕререн кураймаççĕ, кирек епле пулсан та, Тăван çĕршыв приказне пурнăçламалла.

Эпир пурте тупа турăмăр. Хулана пирĕн Вонче ялĕн çурçĕр-хĕвелтухăç енчен тапăнмалла. Пĕрлештернĕ батальон та пирĕнпе пулать. Тăшман хăй çине эпир çапла хăюллă та шиксĕр тапăнасса кĕтмен. Пире Розенштейн хăй ертсе пычĕ. Пирĕн рота, пĕчĕк-пĕчĕк ушкăнсене пайланса, артиллери хӳтĕленипе, наступлени туса пычĕ. Тăшмана кашни шăтăкран, кашни çуртран, подвалран тасатса пырса, вокзал патне тухрăмăр. Хула варринче пирĕн çине нимĕçсен пĕр батальонĕ тапăнчĕ. Малтан гранатăсем, унтан штыксем хута кайрĕç. Тăшман пире хĕсме пуçларĕ. Шăп çак йывăр вăхăтра вĕсен тылне пĕрлештернĕ батальон пырса тухрĕ те хыçалтан тапăнчĕ. Фашистсем пĕр саманта çухалса кайрĕç. Çакăнпа эпир питĕ меллĕ усă куртăмăр. Штыксене малалла тăсса, мĕн сас çитнĕ таран урра кăшкăрса, тăшман çине ыткăнтăмăр. Фашистсем хушшинче арпашу пуçланчĕ. Тарма ĕлкĕрекенсем тарчĕç, хăравçисем аллисене çĕклерĕç, вилнисемпе суранланнисем выртса юлчĕç.

Рестораншăн та вăйлă çапăçусем пулчĕç. Фашистсем кунта пулеметсем вырнаçтарса лартма ĕлкĕрнĕ. Анчах малтанхи çитĕнӳсемпе хавхаланса кайнă боецсемпе командирсене тăшман текех хăрушă мар. Фашистсем

ресторантан аллисене çĕклесе тухма пуçларĕç. Çапла эпир вăрçăн иккĕмĕш кунĕнчех тыткăна парăнакан фашистсене пĕрремĕш хут хамăр куçпа куртăмăр. Вĕсене тыла ăсатрĕç. Анчах, ун чухнехи лару-тăрăва пула, вĕсене пурне те персе пăрахнă. Кăнтăрла иртнĕ тĕле пирĕн дивизи, пĕрлештернĕ батальонпа пĕрле, Перемышль хулине йăлтах ирĕке кăларчĕ. Тепĕр кунне площадьре, Мицкевич поэт палăкĕ патĕнче, хулашăн паттăрăн çапăçса ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă юлташсене çар йĕркипе чысласа пытартăмăр. Фашистсем кашни кунах, кашни каçах темиçе хутчен те — е унтан, е кунтан Сан урлă каçма хăтланса пăхаççĕ, анчах пирĕннисем чикĕ хĕрринче çирĕп тăраççĕ. Ун чух эпир, кадровиксем, пурте çирĕп сывлăхлăччĕ, кĕрнеклĕччĕ, вăйлăччĕ. Шыв урлă каçса çыран хĕррине тухма хăтланакан фашистсене штыксемпе шапасене тирнĕ пекех тирсе ывăттăмăр. Тĕрĕссипе каласан, эпир хамăр, Сан урлă каçса, нимĕçсене анăçалла хăвалама пултарнă, анчах апла тума çӳлтен приказ пулман. Çакăншăн эпир шутсăр тарăхаттăмăр.

— Нимĕçсен пропаганди пирки мĕн те пулин калаймăр-и?

— А-а, ку япала вăйлă та, вăйсăр та вĕсен. Июнĕн çирĕм виççĕмĕшĕнче каç пулнă-пулманах Сан леш енче нимĕçсен громкоговорителĕ вырăсла кĕрлеттерме пуçларĕ. Мĕн ирчченех пакăлтатрĕç. Мĕнле кăна хăратмарĕç пуль пире. Паянхи çапăçушăн сире пĕри юлмиччен шăлса тăкатпăр, теççĕ. Çутăлса çитсен вара хула çине пиншер листовка тăкма пуçларĕç. Хальхинче мĕнле кăна йăпăлтатмаççĕ пуль. Парăнăр, парăннисене çăтмахри пек ырă пурнăç туса паратпăр, теççĕ. Анчах пĕрремĕш çапăçусемех çакна кăтартса пачĕç: пирĕн дивизири боецсемпе командирсем хамăрăн Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратаççĕ, тăшмана вара пĕтĕм чун-чĕререн кураймаççĕ, — тăруках çиллессĕн пăхса илет Меркурий Владимирович.

Вăл вăрçăн хĕрĕхмĕш кунĕнче суранланнă, ăна тылри госпитале ăсатма ĕлкĕрнĕ. Юсаннă хыççăн танксемпе кĕрешекен артиллери дивизионне лекет, 45 миллиметрлă тупă наводчикĕ пулса тăрать. Ку тупă ялапах пехотăпа пĕрлех çӳрет, тăшман çине тӳрĕ наводкăпа перет. Çавăнпах ĕнтĕ фашистсем чи малтан çав тупăсене пĕтерме тăрăшатчĕç.

— Пĕррехинче нимĕçсен самолечĕ ăша çунтарчĕ манăнне. Малти линире çапăçакансем валли пĕ михĕ су-

хари леҫсе пама приказ пачӗҫ мана. Ун чух фашистсен самолечӗсем саранча пекех вӗҫетчӗҫ. Уҫӑ вырӑнпа упаленсе пыраттӑм. Пӑхатӑп: пӗри манран юлмасть те юлмасть. Пӗрре пулеметран ҫатӑртаттарса иртсе каять кӑна, каллех хыҫалтан ҫаврӑнса килет. Ҫапла темиҫе хут хӑтланчӗ. Пӑхатӑп, пӗр михӗри сухари ҫурри ҫеҫ юлнӑ: миххе пульӑсем ҫурса пӗтернӗ иккен. Самолечӗ ҫухалчӗ. Эпӗ те окопа ҫитрӗм. Пӗр лейтенанта ҫапла калатӑп: камӑн ҫиес килет, авӑ, унта кайса суйлаччӑр, эпӗ айӑплӑ мар, тетӗп, — пулни-иртнине аса илет Меркурий Владимирович. Унтан ҫапла хушса хурать: — Унашкал япаласем нумай пулнӑ манӑн. Ӑҫта ответлӑ ӗҫ, ҫавӑнта мана яратчӗҫ.

— Вӑйлӑ, пултарулӑ пулнӑ эсир. Ҫавӑнпа шаннӑ.

Пульӑн куҫӗ ҫук. Никама та тиркемест. Пӗррехинче, нимӗҫсен ункинчен тухнӑ чухне, Никифоров йывӑр сураланать, контузи пулать. Нумайччен асапланать вӑл госпитальте. Костыльсем йӑлӑхтарсах ҫитереҫҫӗ ӑна. Вара рапорт хыҫҫӑн рапорт ҫырма пуҫлать. «Эпӗ радиотелеграфист. Ларнӑ ҫӗртех ӗҫлеме пултаратӑп. Текех госпитальте анекдотсем итлесе выртма пултараймастӑп. Эпӗ радиотелеграфист. Ҫавна шута илӗр».

Часах Меркурий Владимирович авиацие лекет. Связистсен 190-мӗш уйрӑм роти, 18-мӗш сывлӑш флочӗн иккӗмӗш авиадивизийӗ. Кунта ӑна вӗр-ҫӗнӗ хӑватлӑ радиостанцин аслӑ радиотелеграфисчӗ туса хураҫҫӗ.

Иккӗмӗш авиадивизире йӑлтах ҫӗрле инҫете, тӑшман тылне, вӗҫекен йывӑр бомбардировщиксем пулнӑ. Малтан, Никифоров пынӑ чухне, вӗсем Каменск-Подольск облаҫӗнче тӑнӑ, каярахпа Польшӑна куҫнӑ. Ҫавӑнтан бомбардировщиксем Данциг, Кенигсберг, Берлин тата ытти хуласем ҫине вӗҫнӗ.

— Ку авиадивизин мухтавлӑ ӗҫӗсем ҫинчен нумай ҫырнӑ. Дивизи командирӗ, икӗ хутчен Совет Союзӗн Геройӗ Федоров полковник, чӑннипех те никамран, нимрен хӑраман, шикленмен, ҫав тери тӗлӗнмелле ҫынччӗ. Вӑл тӑшман тылне кӑнтӑрла пӗр-пӗччен вӗҫсе каятчӗ, сайра хутра ҫеҫ истребительсем илетчӗ. Ӑҫта, хӑш вырӑнта тӑшман капланса тӑнине пӗлсе килетчӗ. Тепӗр чухне ӑна нимӗҫсен теҫеткешер самолечӗ хупӑрласа илни те пулнӑ. Тӗлӗнеттӗмӗр. Чип-чиперех таврӑнатчӗ. Ҫӗрле вара ҫав вырӑнсене бомба пӑрахма ыттисене ертсе каятчӗ. Хам ҫинчен калани аван мар та, хӑй вӗҫсе кайнӑ чухне дежурствӑна ялан тенӗ пекех мана хӑва-

ратчĕ. Эпĕ ĕнтĕ йăлтах хăнăхса та палласа çитнĕччĕ, кам самолечĕ иккенне, хăш стрелок-радистпа çыхăну тытнине пĕрремĕш сигналранах пĕлекен пулнăччĕ, — аса илет Никифоров.

Пĕррехинче, тĕтреллĕ кун, бомбардировщиксем кăнтăрлах Кенигсберг çине вĕçсе каяççĕ. Çамрăк летчик Иванов самолечĕн пĕр моторне фашистсем персе стройран кăлараççĕ. Вăл ыттисенчен çухалса юлать, çапах задание пурнăçлать, радйоузелти Никифоровпа татăлми çыхăну тытнăран самолетне хамăр аэродрома чиперех антарса лартать. Çавăнпах ĕнтĕ, самолетĕнчен тухсан, летчик ниçта каймасăр тӳрех радиоузсла чупать; Меркурие тав туса, унăн аллине чăмăртать.

Майăн пĕрремĕшĕпе иккĕмĕшĕнче çăра тĕтре тăнă. Самолетсем Берлин çине кăнтăрла вĕçнĕ. Хăшпĕрисем, хăйсен аэродромне тупаймасăр, кӳршĕри аэродромсене ана-ана ларнă. Никифоров радиотелеграфист вĕсене пĕр минут тăхтамасăр шыранă, пурне те хăйсен аэродромне тавpăнма пулăшнă.

— Аса илмелли нумай. Анчах пĕрне нихçан та, виличчен те манас çук, — каласӑва малалла тăсать Меркурий Владимирович. — Дивизи командирĕ радиоузела пырса кĕчĕ. Эпĕ рапорт пама хатĕрлентĕм. «Çук, кирлĕ мар. Часах вăрçă пĕтет. Эсĕ кунта ларса Берлина курмасăрах юлатăн. Айта хампа, стрелок-радист вырăнне. Берлина кăтартатăп. Асăнмалăх. Çӳлтен питĕ лайăх курăнать», — тет. Эпĕ чутах çухалса каймарăм. Шухăшлăр-ха эсир. Дивизи командирĕ, икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ Федоров полковник Берлин çине сывлăшран пăхма мана хăйпе пĕрле илсе каять! Чăнах та, куртăм вара Гитлер йăвине. Берлин çунать, манăн чĕре савăнăçпа тапать. «Çун, пĕт, аркан, фашизм йăви!» — тетĕп ăшăмра.

— Çапла вĕçлерĕм эпĕ иртнĕ вăрçа. Лайăх вĕçлерĕм, — калать юлашкинчен паттăр чăваш, халĕ Элĕкри çутĕç пайĕнче ĕçлекен Меркурий Владимирович Никифоров коммунист.

Вăл нумай çул хушши районти Мире хӳтĕлекен комитет председателĕнче ĕçлерĕ. Районти ĕççыннисем Мир фондне нумай пин тенкĕ укçа хывнă. Меркурий Владимирович обществăлла ĕçсене активлă хутшăнать. Колхозсемпе совхозсенче, шкулсенче, районти тĕрлĕрен предприятисемпе учрежденисенче тăтăшах лекцисем вулать, радиопа тухса калать, районти «Ленин çулĕпе» хаçатра час-часах статьясем пичетлесе кăларать. Вăл пуçарса,

ертсе пынипе район центрĕнчи Пионерсен çуртĕнче çамрăк йĕрлевçĕсен «Чайка» клубне йĕркелесе янă. Мухтавлă 99-мĕш дивизире çапăçнă салтаксемпе командирсенчен (маршал таранах) «Чайка» клуба тата М. В. Никифоров ячĕпе ике пине яхăн çырупа тĕрлĕрен документ, нумай-нумай сăнӳкерчĕк килнĕ, халĕ те килеççĕ. Вĕсене пурне те типтерлĕ упраççĕ, патриотизм темипе ирттерекен калаçусенче усă кураççĕ. 1987 çулта Меркурий Владимировича вăрçăпа ĕç ветеранĕсен районти Совечĕн секретарьне суйларĕç.

99-мĕш стрелковăй дивизи ветеранĕсем кашни çулах пĕр вăхăтра малтанах палăртнă хулана пуçтарăнаççĕ. Вĕсем тăватă хутчен Киевра, унсăр пуçне, Харьковра, Львовра, Одессăра тата ытти хуласенче тĕл пулнă. Çав тĕлпулусенче М. В. Никифоров кашнинчех пулнă, вăрçăри юлташĕсене Чăваш çĕршывĕпе унти çынсен мухтавлă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа кăтартнă. Дивизи ветеранĕсем 1987 çулта Мускавра тĕл пулчĕç.

ИККĔМĔШ ТĔЛПУЛУ

Районти çар комиссариатĕнче 99-мĕш дивизире пулнă янташсен списокне илсен, хама валли ятарласа план туса хатĕрлерĕм. Манăн çав паттăрсемпе хăйсемпе курса калаçмалла. Малалла курăнать-ха унта. Шырасантĕпчесен Перемышль хулипе крепоçне хӳтĕленĕ чăвашсем татах та тупăнĕç.

Малтан, паллах, çывăхрисенчен пуçламалла. Ку — Тавăт ялĕ. Вăл Элĕкрен тăхăр çухрăмра. Кунтан 99-мĕш дивизире пĕр çын çеç мар, иккĕн те çапăçнă.

Иван Федорович Федоров учитель-историкпа калаçма ансатрах пултăр тесе, малтан И. Ефремов аслă лейтенантăн «Чайка» клуба ярса панă çырăвĕпе тĕплĕн паллашрăм. Çыру авторĕ унта И. Федоров çинчен темиçе хут та асăннă.

Темшĕн-çке Ю. К. Стрижков хăйĕн çав тери тĕплĕ çырнă, нумай ӳкерчĕкпе пуянлатнă «Герои Перемышля» кĕнекинче связистсен питех те йывăр, ответлă ĕçĕ, вĕсен паттăрлăхĕ çинчен нимех те каламан. Связистсем пĕтĕм çарăн «нерви, куçĕпе хăлхи» пулни çинчен лайăх пĕлетпĕр-çке-ха эпир.

Вăрçă пуçланнă чухне И. Ефремов çыхăну взвочĕпе Львов хулинче тăнă. Ыран июнĕн 22-мĕшĕ тенĕ каç вăл батальонра дежурнăй пулнă. Шăпах хурал начальни-



И. Ф. Федоров, кĕçĕн лейтенант, связистсен взвочĕн командирĕ

кĕпе тата разводящипе пĕрле шалти хурала тĕрĕслесе çӳренĕ вăхăтра (ку вăл 4 сехет те 40 минутра пулнă) малтан чугун çул станцийĕ патĕнче, унтан танксен полкĕ вырнаçнă çĕрте бомбăсем ӳксе çурăлаççĕ, пĕлĕтре хура хĕреслĕ самолетсем явăнма тытăнаççĕ.

Çыхăну батальонĕ вырнаçнă выраăна малтанхи бомбăсем ирхине тăхăр сехетре ӳкме пуçлаççĕ. Шоферсем, салтаксемпе командирсем, самолетсенчен çăвакан суккăр пульăсенчен хăтăласчĕ тесе, кирпĕчрен тунă гаража пытанма васкаççĕ. Анчах пĕр бомби шăп та лăп гараж варрине ӳксе çурăлать. Тăруках 33 çын вилет, нумайăшĕ суранланать, контузи пулать. Штаб начальникĕ те çавăнта куçне ĕмĕрлĕхех хупать.

Хулара çак самантра тата хăрушăрах ĕçсем пулса иртеççĕ. Шпион-диверсантсен сигналĕпе пĕр самолет çинчен пăрахнă тăватшар тоннăллă икĕ бомба шăп та лăп облаçри çыхăну уйрăмĕн çурчĕ çине ӳкет. Пĕри, çак пысăк çуртăн тăватă хутне те шăтарса тухса, подвал урайне тăрăнса ларать. Çурăлмасть. Тепри иккĕмĕшпе вилçĕмĕш хутсем хушшинче кĕрĕслетсе çурăлать те тĕлĕнмелле хăрушла ĕç тăвать. Çав вăхăтра почтăра ĕçленĕ çынсем пурте тенĕ пекех пĕтеççĕ. Пĕр минут хушшинче облаçри çыхăну системи йăлтах арканать. Ку пĕтĕм армишĕн пысăк инкек пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл çыхăнăва облаçри почтамт урлă туса пынă.

«Мана çапла приказ пачĕç,— тесе çырать И. Ефремов. — Саккăрмĕш корпус штабĕ урлă хăвăртрах 99-мĕш дивизипе çыхăнмалла. Кунĕпе те çĕрĕпе ĕçлерĕмĕр. Июнĕн 23-мĕшĕнче ирхине эпĕ 99-мĕш стрелковăй дивизин командирпе Н. И. Дементьев полковника армин штабĕпе çыхăнтартăм. Çакăншăн мана тата ытти боецсене Н. И. Дементьевпа штаб начальникĕ С. Ф. Горохов полковниксем чĕререн тав турĕç. Çапла мана, 99 мĕш ди-

визие юлса, унти пирĕн салтаксемпе командирсен юмахри пек паттăрлăхне, фашистсен тискерлĕхне хам куçпа курма тиврĕ».

Пĕтĕм тавралăх чĕтренсе-чӳхенсе тăнă вăхăтра вĕсем дивизин çĕнĕ çыхăну узелне хута яраççĕ. Анчах фашистсем, икĕ станции дежурнăйсене вĕлерсе, аппаратсене çĕмĕрме ĕлкĕреççĕ, çухрăм çурă тăршшĕ кабель те çухалать. Çыхăнăва каллех çĕнĕрен йĕркелемелле. Хăйсен тĕп ĕçне туса пынă хушăрах связистсене фашистсемпе куçа-куçăн, хире-хирĕç тăрса çапăçма та тивет.

Июнĕн 27-мĕшĕнче И. Ефремов взводне Львова куççа кайма приказ параççĕ. «Тамăкри пек вут-çулăмра та, бомбăсемпе снарядсем çĕре чĕтретсе çурăлнă самантра та çыхăну пĕр кăлтăксăр ĕçлет. Кунта манăн уйрăмах 99-мĕш дивизири И. Федоров аслă сержант ертсе пыракан связистсен взвочĕ лайăх ĕçленине палăртса хăварас килет. Питех те шел, эпĕ çак пилĕк кун хушшинче хамăн вунвиçĕ салтака çухатрăм», — тесс çырать запасри аслă лейтенант.

Паллах, И. Ефремов çав хушăра И. Федоров мĕнле наци çынни, хăш облаçран пулнине пĕлме пултарайман. Анчах вăл Элĕк районĕнчи Тавăт ялĕнче çуралса ӳснĕ Иван Федорович Федоров çинчен асăнни халĕ ĕнтĕ никама та иккĕлентермест. Кăна М. Никифоров та, çар комиссариатĕнчи документсем те çирĕплетсе пачĕç.

Апла пирĕн çул — Тавăта.

Тавăтăн тĕп урамне кивĕ клуб патĕнчен пуçланакан пĕчĕк çырма касса каять. Ун урлă кĕпер хывнă. Çав кĕпер урлă каçсан, сулахайра, пысăк чул çурт ларать. Йĕри-тавра йĕркелĕх, тирпейлĕх сисĕнет. Пуян сад ӳсет. Улмуççисем çывăхĕнче — вĕллесем. Çакăнта пурăнать Иван Федорович.

Кил хуçи, утмăл урлă каçнă пулин те, çаплах вĕри чунлă, хастар чĕреллĕ, лара-тăма пĕлмен канăçсăр çын. Унăн тап-таса хăмăр куçĕсем çиçсе-выляса тăраççĕ. Капла пăхсан, ăна никам та вăрçăн хăрушă хуранĕнче вĕренĕ, çич-сакăр хут та суранланнă çын тесе калаймĕ.

Иван Федоровича çара 1939 çулхи кĕркунне илнĕ. 1940 çулта Перемышльте ăна, студент пулнине шута илсе, тӳрех специалистсен кĕçĕн командирĕсем хатĕрлекен шкула вĕренме яраççĕ. Лайăх вĕренет вăл.

Ытти курсантсенчен кăштах шухăрах та чăрсăртарах пулни тепĕр чухне чутах пĕр-пĕр инкек патне илсе çитереймест ăна. Анчах чăваш каччи ун пек чухне те

хăйĕн командирĕсен кăмăлне çавăрса ямалли меле шыраса тупать-тупатех. Пĕр-пĕр шӳтлĕ анекдот-мыскара каласа кăтартать те — ахăлтатса кулнипех иртсе каять.

Полк шкулĕнче ăна сержант званийĕ параççĕ те 99-мĕш дивизири танксен дивизионĕнчи связистсен пĕрремĕш отделенийĕн командирĕ туса хураççĕ. Взвод командирĕн помощникĕ те вăлах шутланать.

— Самаях пурăнаттăмăр. Мирлĕ вăхăтри службăна хăвăрах пĕлетĕр. Пĕр кун иртрĕ — киле таврăнмалли тепĕр кун çывхарчĕ.

— Иван Федорович, шӳтрен ĕç çине куçар-ха. Çапах та, вăрçа мĕнле кĕтсе илтĕр эсир? — ыйтатăп хăюлăх çитерсе.

— Темле-çке, хам та пĕлместĕп. Çав ирхине ирех вăрантăм та паян, вырсарникун, савнă тусăм патне вăрăм-вăрăм çыру çыратăп-ха, тесе шутласа выртатăп. Унччен те пулмарĕ, танкодром енче снаряд ӳксе çурăлнине илтетĕп. Мĕнле-ха капла, танкодромра паян занятисем пулмалла мар-çке, тетĕп. Тата, пулас-тăвас пулсан та, снарядсем унта мар, сăрт леш енче çурăлмалла. Снарядсем çурăлнине шутлама пуçларăм: пĕрре, иккĕ, виççĕ... Унччен те пулмарĕ, тепĕр снарячĕ пирĕн казармăпа юнашарах ӳксе çурăлчĕ. Тутлă ыйхăпа çывăракан салтаксем командăсăр-мĕнсĕрех сике-сике тăчĕç. Пĕрпĕрин çине пăхаççĕ, нимĕн те ăнланса илеймеççĕ. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ хам та çухалса кайрăм. Казармăра пĕр офицер та çук. Дежурнăй та ман пек аслă сержант çеç. Унпа иксĕмĕр телефонпа штаба, командирсен хваттерĕсене шăнкăравлама пуçларăмăр. Ниçтан та ответ таврашĕ çук: çыхăну ĕçлемест, ăна йăлтах татса пĕтернĕ.

Кассан — турпас, калаçсан — сăмах. Пирĕн калаçу шалтан-шала кĕме пуçларĕ.

— Эпир çавăн пек ним тума аптăраса тăнă вăхăтра казармăна танксен дивизионĕн комиссарĕ чупса кĕрет те: «Ачасем, вăрçă! Пирĕн çине фашистсем тапăнчĕç. Çапăçăва хатĕр пулăр!» — тесе кăшкăрать, хăй çавăнтах каялла чупса тухать.

Иван Федоров аслă сержант хăйĕн взводне хула хĕрринчи ыраш пуссине ертсе каять. Çаплах мĕн тумаллине пĕлеймеççĕ-ха: взвод командирĕ Чернопуб лейтенант та, рота командирĕ те çук.

Танксен 41-мĕш дивизионĕн штаб начальникĕ пырса тухать. Вăл связистсене шоссе хĕррипе оборона йышăнма приказ парса хăварать. Часах рота командирĕ çитет. Вăл Чернопубпа арăмне иккĕшне те хваттерĕнчех

контузи пулни çинчен пĕлтерет, Федорова вăхăтлăха, офицер ярса пăриччен тесе, взвод командирĕ вырăнĕнче пулма приказ парать.

Хăрушă çапăçусем пуçланаççĕ. Вăрçăн пĕрремĕш кунĕнче связистсем пограничниксемпе, хулана юлнă ытти боецсемпе, ополченецсемпе пĕрле çапăçаççĕ, вĕсемпе пĕрлех хулан хĕвелтухăçĕнчи масарĕ патне чакаççĕ. Федоров çакăнта, вăрçăн пĕрремĕш каçĕнчех, приказ илет: юпасем çинчи татăлнă пралуксене çыхăнтармалла. Вуникĕ çын çĕр хута пĕтĕм вăя парса ĕçлет, ире приказа пурнăçлаççĕ. Çапла аслă сержант пĕрремĕш боевой приказа чыслăн вăхăтра пурнăçланă. Апла связистсен взводне вăл хăех ертсе пыма пултарать. И. Федоров Львовран килнĕ И. Ефремов аслă лейтенантпа паллашать. Нумай боевой задание иккĕшĕ пĕрле пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем паттăр пулнăран ĕнтĕ, июнĕн 23-мĕшĕнче хирĕç çапса фашистсене Перемышльтен каялла хăваласа янă хыççăн, дивизи штабĕпе полксен, батальонсен, уйрăм чаçсен штабĕсем хушшинчи çыхăну пĕр чăрмавсăр ĕçленĕ.

Дивизи, ку е тепĕр вырăнта оборона тытса, нимĕçсен чĕрĕ вăйĕпе техникине арката-арката чакса пынă. Çавăн чухне И. Федорова линейнăй взвод командирĕ туса хураççĕ, калама çук пысăк та ответлă ĕç шанса параççĕ: дивизипе ытти чаçсен штабĕсем, НПсемпе артиллеристсен позицийĕсем хушшинчи çыхăну пĕр минутлăха та татăлмалла мар. Татăлас-тăвас пулсан, вилсен те, чĕрĕ юлсан та, çийĕнчех çыхăнтармалла.

Пĕр хутчен мар, çĕр хутчен те вилĕмпе хире-хирĕç пулнă аслă сержант хăйĕн салтакĕсемпе, анчах çыхăну яланах ĕçленĕ. Дивизи тискер тăшмана аркатса-пĕтерсе чакса пынă.

Июлĕн 17-мĕшĕнче Коростень хули çывăхĕнче Федоров ответлă задание пурнăçланă чухне аманать. Колосков хушаматлă боец ăна санчаçе илсе çитерет. Икĕ уйăх госпитальте сипленнĕ хыççăн Федоров каллех фронта каять. Анчах вăл хальхинче те фашистсемпе вăрахчен çапăçаймасть: ăна иккĕмĕш хут суранлатаççĕ.

Çурçĕр Кавказра сывалаканнисем патне фронтран пĕр офицер пырать. Ана связистсем кирлĕ пулнă иккен. Çакна пĕлсен, Федоров, йăлтах сывалса çитмен пулин те, офицера хăйпе пĕрле илме тархаслать.

Хальхинче кĕçĕн лайтенант Иван Федоров танксен 102-мĕш бригадинчи çыхăну взвочĕн командирĕ пулса тăрать. Аçта-аçта кăна пулман пуль, мĕнле кăна пăтăр-

маха лекмен пуль вăл хăйĕн паттăр салтакĕсемпе! Сталинград, Курск пĕкки, Дон шывĕ айĕнчен çыхăну кабелĕ хуни...

1944 çулхи январĕн 4-мĕшĕнче Кировоград облаçĕнчи Верблюжка ялĕ çывăхĕнче Федоров хăйĕн взвочĕпе пралук карнă. Çак вăхăтра фашистсен самолечĕсем вĕçсе килеççĕ. Взвод командирĕ связистсене ăçта май пур, çавăнта пытанма хушать. Хăй те йăран хушшине кĕрсе выртать. Пĕр самолечĕ, ыттисенчен уйрăлса, связистсене пулеметран ăшалама пуçлать. Федоровăн пĕр урине икĕ пуля, аллине тăватă пуля шăтарса тухаççĕ.

— Çав йăран хушшинче чутах ĕмĕрлĕхе выртса юлаттăм. Юрать-ха, пуç çине катушка хума чухларăм. Икĕ пуля умлă-хыçлă чанклаттарса илчĕ ăна. Иккĕшĕ те, рикошетпа ӳксе, сăмса умĕнчи çĕре шăтара-шăтара кĕчĕç. Аха, тетĕп ăшăмра, пуç сывă пулсан, ура-алă вăл темех мар. Вĕсене протезпа та улăштарма пулать, пуçа вара ылтăнпа та улăштарма çук. Хăвăрах куратăр, пуç ман халичченех хăй вырăнĕнче, — каллех шӳтлеме пăхать кил хуçи.

Çак йывăр сурансем хыççăн Федоров текех вăрçă хирне таврăнаймасть. Харьковри госпитальте икĕ эрне выртнă хыççăн ăна Читана çитиех ăсатаççĕ. Кунта вăл 1944 çулхи май уйăхĕччен сипленет, темиçе операци тӳссе ирттерет.

Яла таврăнсан 4-мĕш кунне Иван Федорович Ураскилтри çичĕ çул вĕренмелли шкулта (халĕ кунта вăтам шкул) военрукра ĕçлеме пуçлать. Çав хушăрах Шупашкарти педагогика институтне заочно вĕренсе пĕтерет, Тавăтри вăтам шкулта çамрăк ăрăва вĕрентет, халĕ тивĕçлĕ канура.

Иван Федоровичпа эпир пĕр-пĕрне тахçантанпах пĕлекен тус-юлташсем пекех уйрăлтăмăр. Çак ялтах Перемышлĕн тепĕр паттăрĕ И. М. Осипов пурăнать. Иван Моисеевич Осипова еплерех тупмалли çинчен Иван Федорович мана тĕплĕн каларĕ:

— Пурăнасса вăл хăрах касра, тура пурăнать. Эпĕ сире ăсатсах яма пултаратăп. Анчах та вăл халь почтăра пулма кирлĕ. Почта пирĕн шăпах Элĕкрен яла пырса кĕнĕ çĕрте. Магазинпа юнашар. Унăн контузийĕ мĕн халичченех иртсе кайман та, сире унпа калаçма йывăртарах пулать пулĕ, — терĕ.

ВИҪҪӗМӗШ ТӖЛПУЛУ



И. М. Осипов, ефрейтор.

Эпӗ пынӑ чухне çыхӑну уйрӑмӗнче хӗрӳллӗ ӗç пыратчӗ. Элӗкрен тин çеç килнӗ почтӑна салатаççӗ, тӗрлӗрен хаçатсемпе журналсене, çырусемпе укçа хучӗсене майлаштарса уйрӑмшарӑн хуратчӗç. Кунта иккӗн ӗçлеççӗ. Арçынни, утмӑл патнелле çывхараканскер, çӳллӗ, самаях кӗрнеклӗ. Хӗрарӑмӗ вӑтам пӳллӗ. Вӑл тап-таса чӑваш чӗлхипе васкаса калаçать. Арçынӗ ун çине пӑхать те пуçне сӗлте-сӗлте илет, сайра хутран çеç тӑруках ӑнланса та илмелле мар чӗлхепе тем калать. Анчах хӗрарӑмӗ вӑл мӗн каланине унӑн тути çинче пӑхнипех ӑнланать пулмалла: тепӗр хут ыйтмасть. Çаксем арӑмӗпе упӑшки пулчӗç. Анастасия Прокопьевна Семенова пӗр улшӑнмасӑр 26 çул хушши çыхӑну уйрӑмӗн начальникӗнче, Иван Моисеевич Осипов почтальонра ӗçлеççӗ.

Ку тӗлпулу мана тарӑн шухӑша ячӗ. Гитлерла Германие тӗп тунӑранпа миçе çул иртсе кайрӗ, анчах хӑрушӑ вӑрçӑ инкекӗсем вара мӗн халичченех хӑйсем çинчен аса илтерсе тӑраççӗ.

— Ваня хӑй вӑрçӑра пулнӑ çинчен çырса пыни те пур пирӗн. Пӗр тетрадь. Çавна кирлӗ кайӗса илме хушас-и? — сӗнчӗ Анастасия Прокопьевна, хӑй хӗрелсе кайрӗ. — Иксӗр пӗрле кайӑр. Çул хыççӑн сирӗн хырӑм та выçнӑ пуль. Пирӗн кунта столовӑй таврашӗ çук. Эпӗ эсир çаврӑнса киличчен пӗчченех ӗçлӗп кунта.

Пӗлетӗп: сӑпайлӑ, йӗркеллӗ чӑваш хӗрарӑмӗ килнӗ çынна нихçан та анат лартмасӑр кӑларса ямасть. Ку чӑвашсен ӗмӗртен пыракан ырӑ, пархатарлӑ йӑли. Эпӗ выçӑ мар тесе тем пек ӗнентерме тӑрӑшрӑм пулин те — килӗшмелле пулчӗ. Мана Иван Моисеевичпа пӗрле вӗсен килне кайма тиврӗ-тиврех.

Çемье альбомне пӑхса ларнӑ май калаçатпӑр. Эпӗ Иван Моисеевича аванах ӑнланма пуçларӑм. Вӑл

хăйне контузи пулнăшăн вăтанать иккен. Эпĕ ăна çапла ăнлантартăм:

— Сан уншăн вăтанмалла-именмелле мар, пуçна çӳлерех тытса çӳремелле. Эсĕ ялта чи хисеплĕ çынсенчен пĕри. Арăму та маттур пулас.

Кил хуçи йăл! кулать. Вăл çемьере çав тери телейлĕ çын. Вĕсем пилĕк ача ӳстерсе çитĕнтернĕ. Пĕри тепринчен маттур. Аслисем, Ленăпа Витали — аслă пĕлӳ илнĕ врачсем, виççĕмĕшĕ, Светлана, педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, вăтам шкулта математика вĕрентет. Тольăпа Гена — студентсем. Часах вĕсем те учитель пулаççĕ.

Иван Моисеевич çав тери тăрăшуллă упăшка тата ачисен юратнă ашшĕ пулни унăн кашни сăмахĕнчех сисĕнет.

Юлашкинчен вăл мана хăй вăрçăра ăçта-ăçта пулнине тата мĕн курнине, тӳснине çырса пынă тетрадьне пачĕ те манпа пĕрлех почтăна çити пычĕ. Унăн халĕ, ял тăрăх кайса, тин кăна килнĕ хаçатсемпе çырусене валеçмелле.

Киле таврăнсан, эпĕ Иван Моисеевич çырнă тетраде уçса вулама пуçларăм. Паллах, вăл çыру ĕçне ăстах мар ĕнтĕ. Анчах чĕрери пысăк туйăмне, хăй мĕн тӳссе иртернине, мĕн шухăшпа пурăннине пĕр пытармасăр тӳремĕн каланă. Ара, вăл хăй çыра-çыра пынине хăçан та пулин пичетре усă курĕç, ăна çынсем вулĕç тесе шутламан. Иван Моисеевич хăй те çаплах калать: «Ачасем валли тесе çеç çырнăччĕ. Эпĕ вилсен, ашшĕпе унăн юлташĕсем, вăрçă вăхăтĕнчи çынсем, мĕнлерех пулнине пĕлччĕр тенĕччĕ». Çавăнпа манăн Осипов çырăвне вырăнĕ-вырăнĕпе редакцилеме те, кăштах илемлетме те тиврĕ. Ку ĕçе эпĕ асаилӳсен авторĕпе килĕшсе турăм.

«1941 çулхи майăн 1-мĕшĕнче уяв ячĕпе Перемышльте чаплă парад пулчĕ. Çавăн чухне трибуна çинче нимĕç офицерĕсем те пурччĕ. Пирĕн подразделени трибуна умĕнчен питĕ илемлĕ, пĕр çын пек шаплаттарса утса иртрĕ. Çавăнпах ĕнтĕ уяв хыççăн пире командовани тав турĕ. Унччен те вĕренӳпе хуçалăх ĕçĕсенче пирĕн рота ырă тĕслĕхсемпе çеç палăрса тăнă. Çавна шута илсе, уйрăмах пултаруллисене отпуска ямалла турĕç. Çав списокра ман ят та пурччĕ. Анчах та ку хаваслăх, яла курма таврăнасси ĕнтĕ, вăхăтлăха çеç пулчĕ: тепĕр кунне штабран приказ пулнă — халлĕхе никама та нимĕнле отпуска та ямалла мар.

Ротăра эпĕ ытти ачасенчен юлсах каймастăмччĕ. Вĕ-

ренессе лайăх вĕренеттĕм, «Ворошиловла тĕл перекен» значок илме тивĕç пултăм. Ытти енĕпе те аптăрасах каймастăм. Командирсен приказне яланах вăхăтра, чыслă пурнăçлаттăм. Çаксене шута илсе, взвод командирĕ Тухаченко мана алă пулемечĕ шанса пачĕ.

Июнĕн 21-мĕшĕнче каçхине мана ытти юлташсемпе пĕрле наряда ячĕç. Ирхине, тул çутăлса килнĕ чухне, эпĕ шăпах постра тăраттăм. Пăхатăп: хĕвеланăç енчен пĕрин хыççăн тепри кунталла хура пăнчăсем çывхараççĕ. Акă, часах хура кураксем пек курăнма пуçларĕç. Унтан самолетсем пулса тăчĕç. Вĕсем, пирĕн лагерь çийĕн тискеррĕн кĕрлесе, тухăçалла вĕçсе кайрĕç. Ку ушкăн хыççăн тепĕр ушкăнĕ вĕçсе килчĕ. Кусем вара пирĕн лагерь çине бомба пăрахма пуçларĕç. Хурал начальникĕ Павиленко ман пата чупса пычĕ те васкасах взвода таврăнма хушрĕ. Ун приказĕсĕр эпĕ хамăн поста пăрахса хăварма пултарайман. Пирамида патне чупса çитрĕм те хамăн пулемета ярса илтĕм. Ку вăхăта манăн помощник Ревчук та килсе çитрĕ. Пире виçĕ диск тата икшер граната пачĕç. Винтовкăллисене вара виçшер-тăватшар граната таранах панă.

Пăтăрмах сиксе тухсан, эпир позицисем ăçта йышăнмаллине лайăх пĕлеттĕмĕр. Тактикăлла вĕренӳре пĕрре кăна мар пулнă. Тухаченко команда парсан, хамăр малтанах хатĕрлесе хунă позицисене йышăнтăмăр. Сывлăшра çаплах фашистсен самолечĕсем вĕçеççĕ. Чылайăшĕ, хăрушшăн уласа, таçта хăямата каяççĕ. Ак тамаша! Бомбăсем çеç мар, минăсем те ӳксе çурăлма пуçларĕç. Пульăсем чăвик! чăвик! шăхăрни те илтĕнет. «Пограничниксем фашистсемпе çапăçаççĕ ĕнтĕ», — тетĕп ăшра. Унччен те пулмарĕ, умра саланчăк стройпа фашистсем килни курăнса кайрĕ. Акă, вĕсем çывхарнăçемĕн çывхараççĕ, çаннисене чавса таран тавăрнă, автомачĕсене хырăм умне тытнă. Васкаççĕ. Çак вăхăтра вĕсем мана выçă кашкăр кĕтĕвĕ пек туйăнчĕç. Çывхараççĕ. Эпир команда парасса чăтаймасăр кĕтетпĕр. Вĕсем пире таптаса çĕмĕрме те пултараççĕ. 400 метр, 300, 250, пирĕн хушшăмăрта 150 метр юлсан, Тухаченко команди янăраса каять: «Пемелле!» Пуçларĕ вара ман алăри пулемет шатăртатма. Ыттисем те татти-сыпписĕр переççĕ. Акă, малта пыракан нимĕçсем тăвăл вăхăтĕнчи кĕлтесем пек тӳне-тӳне каяççĕ. Вĕсен хыçĕнчисем, юлташĕсен виллисене таптаса, малаллах, пирĕн çинех килесшĕн. Эпир тата хĕрӳлленетпĕр. «Вырăс кучченеçне тутанса пăхма килтĕр пулсан, мĕнех, туянăр. Кунашкал кучченеçе

сирĕншĕн хĕрхенсе тăмастпăр!» тесе, çивĕчрех неме пуçлатпăр.

Нумай, питĕ нумай фашист вырtса юлчĕ çапăçу хирне. Юлашкисене Сан шывне хăваласа кĕртрĕмĕр те хамăрăн позицисене тепĕр хут йышăнтăмăр. Паллах, çухатусем пирĕн енчен те пулчĕç.

Нимĕçсем, малтанхинчен чылай ытларах вăй пухса, иккĕмĕш наступлени пуçларĕç. Малтан вĕсем пирĕн çине темиçе минометран персе тăчĕç, унтан пехотинецсем хускалчĕç. Хăрушă самант çитрĕ. Мана пулăшаканĕ диск хыççăн диск улăштарса тăрать. Эпĕ пенĕ вăхăтра хăйĕн винтовкинчен ăшалать фашистсене. Акă юлашки диск, юлашки икĕ граната. Юлашки диска кăларса янă чухне манăн пулемет арканса кайрĕ те — алăран тухса ӳкрĕ. Çав хушăра юнашар мина ӳксе çурăлчĕ.

Çапăçу хирĕнчен мана, плащ-палатка çине хурса, Ревчук сĕтĕрсе тухнă. Манăн суран таврашĕ çук иккен. Хăватлă сывлăш хумĕ минретсе хăварнă мана.

...Акă пирĕн чакса пырас вăхăт çитрĕ. Рава-Руск текен ял патне çывхаратпăр. Унта çитеспе пĕр юханшыв пур. Вăрттăн çĕре вырнаçрăмăр та вилнĕ лаша какайне пĕçерсе çирĕмĕр. Çĕрле, пурпĕрех пĕр патрон та çук тесе, винтовкăсене шыва ярăнтартăмăр. Хамăр, пĕртен-пĕр кинжалпа юлса, шыв урлă ишсе каçрăмăр. Пăртак каннă хыççăн вар тăрăх ялалла çул тытрăмăр. Ахăртнех, кунта пире нимĕçсем ятарласа кĕтсе тăнă пулмалла. Вĕсем пĕр кĕтмен çĕртен сиксе тăчĕç те: «Рус, капут! Рус, капут!» тесе кăшкăрма пуçларĕç. Тарнин усси çук. Пирĕнписенчен пĕри команда пачĕ: «Кинжалы в бой!» Эпир сĕм-çĕрле нимĕçсемпе алла-аллăн çапăçма пуçларăмăр. «Виличчен çапăçатăп, парăнмастăп, пĕрех тыткăна лекместĕп», — тетĕп ăшăмра. Пĕр фашистне кинжалпа чиксе пăрахрăм, тепĕрне урапа тапса сирпĕнтертĕм. Виççĕмĕшĕ çине кинжалпа ыткăннă вăхăтра мана пуçран йывăр япалапа шаплаттарчĕç те, эпĕ каснă йывăç пек тӳнсе кайрăм.

Пире, тăватсăмăра та, машина çине пăрахса, яла илсе кайрĕç. Кунта пĕр сарая хупса хучĕç. Кăштах вăхăт иртсен, шăршланнă пулă пăрахса пачĕç.

Часах пире хупнă сарая хĕрарăмсен пĕр ушкăнне хăваласа кĕртрĕç. Вĕсенчен виççĕш-тăваттăшĕ «шыв! шыв!» тесе антăхса йăнăшрĕç те тепĕр çур сехетрен вилсе те кайрĕç.

Çур çĕр иртсен пирĕн сарай алăкĕ ерипен уçăлчĕ те, шала пĕр карчăк кĕрсе тăчĕ.

— Чĕррисем пур-и? — ыйтрĕ вăл шăппăн.

— Пур-çке, — тетĕп.

— Паян нимĕçсен темĕнле пысăк праçник пулас. Пурте ĕçеççĕ. Утма пултаракансем хăвăртрах тухса шăвăнăр, — хушать çак карчăк.

Эпир тăватсăмăр та, карчăка тав туса, пуля пек тухса вĕçтертĕмĕр. Таçтан вăй пырса кĕчĕ, çавăнтан мĕн халичченех тĕлĕнетĕп. Пуринчен ытла тыткăна лекесрен хăрани пулăшрĕ ĕнтĕ. Часах эпир ял хĕрринчи пĕр вара çитсе ӳкрĕмĕр. Темиçе минут каннă хыççăн малалла шăвăнтăмăр. Пĕр тăватă çухрăма яхăн кайсан, таптаса пĕтернĕ кукуруза уйне пырса тухрăмăр. Таптанмасăр юлнă вырăна тăсăла-тăсăла выртрăмăр та кукуруза сĕткенне ĕмме пуçларăмăр. Часах вăй хушăннă пек туйăнчĕ.

Асапланса-тертленсе, Львов хулине çитрĕмĕр. Кунта комиссие лекрĕм. Мана, сываличчен тесе, вăхăтлăха киле ямалла турĕç.

Сывалса çитнĕ-çитменех иккĕмĕш хут çара илчĕç. Хальхинче 8-мĕш армири 285-мĕш дивизие кĕрекен минометсен батарейине ячĕç. Пире Волхов юханшывпа Ладога кӳлли хушшинче чугун çул хывнă çĕрте ĕçлеме тиврĕ. Икĕ эрне çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ хыççăн, майăн 5-мĕшĕнче, Кляжево станцийĕ патĕнче мана бомба ванчăкĕ лексе амантрĕ. Ленинградри 79-мĕш госпитале вырнаçтарчĕç. Кунта 1942 çулхи сентябрьччен выртса сиплентĕм. Комисси юсанса çитме киле ямалла турĕ.

1943 çулхи апрельте виççĕмĕш хут çара илчĕç. Хальхинче Шупашкар пристанĕнчен пăрахутпа Куйбышева илсе çитерчĕç. Мана, пуç шавланине тата хăлха япăх илтнине шута илсе, ездовой туса хучĕç. Темĕн тĕрлĕ япала та турттарма тиврĕ. Çăкăр тиенĕ вăхăтра шăп та лăп пирĕн пуç тăрринче нимĕç самолечĕ çаврăнма пуçларĕ. Вăл аялалла анса-анса пычĕ те пирĕн çине бомбăсем пăрахма пикенчĕ. Каярах хам çине купаланнă тăпрана сирсе пăхатăп та тĕлĕнстĕп: темиçе лаша вилнĕ, темиçе лаша тапăртатса выртаççĕ, çын таврашĕ пачах курăнмасть. Çакăнта вара эпĕ тăна пачах çухатнă. (Миçемĕш хут ĕнтĕ!) Саратов госпиталĕнче тин тăна кĕнĕ. Кунта мана врачсем нумай вăхăт сиплерĕç. 1944 çулхи ноябрьте, çар службинче тăма юрăхсăррине пĕлтерекен документ парса, яланлăхах киле ячĕç.

Халĕ ĕнтĕ Тăван çĕршыва фашистсенчен тасатнă. Вăрçă анăçри çĕршывсен территорийĕнче пырать. Эпĕ кушăн чĕререн савăнатăп, анчах хам Берлина çитмĕ пултарайманшăн кулянатăп та.

Тăван яла таврăнсан, тепĕр куннех, правление ĕç пирки кайрăм. Манăн сывлăха кура, правлени членĕсем почтальонра ĕçлеме сĕнчĕç. «Шанатăр пулсан, ыранах ĕçлеме пуçлатăп», — хуравлатăп правлени членĕсене. Вăт çавăнтан пуçласа мĕн халичченех почтальонра çӳретĕп. Çак хушăра Тавăтпа Ходяк урамĕсем тăрăх миçе пин çухрăм утман-ши! Хĕллехи шартлама сивĕпе асарписер çил-тăманлă çанталăкра та, кĕрхи-çурхи йĕпесапара та, çуллахи шăрăх кунсенче те...

Ĕçре хастар пулнăшăн Иван Моисеевич Осипова темиçе хутчен те Хисеп грамоти, укçан премисем панă. Коммунизмла ĕç ударникĕн ятне тивĕçлĕ пулнă паттăр фронтовик. Текех çĕр çинче вăрçă ан алхастăр, кăвак тӳпе яланах таса пултăр тесе пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă вăл фашистсемпе. Шел, Иван Моисеевич çĕре кĕчĕ ĕнтĕ.

ТАВАТТĂМĔШ ТĔЛПУЛУ

«Советская Чувашия» хаçатра 1967 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче «Партизанский фельдшер» статья пичетленсе тухнăччĕ. Унăн авторĕ партизан отрячĕн комиссарĕ пулнă В. Ямщиков вăрттăн хушаматпа çӳренĕ Кирей фельдшерăн паттăрла ĕçĕсем çинчен çырса кăтартнăччĕ, вăл чăваш пулни çинчен асăннăччĕ. Çакăн хыççăн 13 кун иртсен, 1967 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче çав хаçатрах И. Кузьмичев çырнă «Вот он, партизанский фельдшер» ятлă материал пичетленсе тухнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ çав Кирей ятпа çӳренĕ фельдшер кам иккенни йăлтах паллă пулчĕ. Вăл Чăваш Сурăмĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкул директорĕ Кирилл Васильевич Воронов иккен.

Эпĕ Чăваш Сурăмне çул тытатăп. Çуллахи каникул вăхăчĕ. Директор курорта-мĕне кайман пулсан юрĕччĕ тесе, иккĕленсе шкула пырса кĕретĕп. Унта пĕр çын та çук. Шкул пахчине тухатăп. Кунта çирĕм-вăтăр ача ĕçлет. Вĕсем хушшинче пĕр пысăк çын купăста йăранĕ хĕрринче чакаланать. Пуçне хăмăр тĕслĕ шлепке, çине кĕске çанăллă кăвак пурçăн кĕпе, самаях кивелнĕ хура шăлавар тăхăннă. Ĕçлекен ачасене сывлăх сунатăп та тӳрех çав çын патне пыратăп, саламлатăп та унран ыйтатăп:

— Шкул директорне Кирилл Васильевича ăçта курма пулать-ши?

Мана хирĕç тăракан арçын, самаях пысăк та кĕрнеклĕскер, йăл кулчĕ:

— Эсир шăпах ăна куратăр. Эпĕ вăл, Кирилл Васильевич...

— Малтанах ятарласа калаçса татăлнă пек пулса тухрĕ ку,— палăртатăп хамăн савăнăçа. Тӳрех ĕç пирки сăмах хускатма аван мар тесе, шкул пахчи пирки ыйтса пĕлетĕп.

Кирилл Васильевич биолог иккен. СССР Географи обществин членĕ. Çутçанталăк тусĕсемпе — хастар ачасемпе пĕрле вăл шкул пахчинче нумай тĕрлĕ пахчаçимĕç, тырăпулă çитĕнтерет, авă, çав вăхăтрах ачасене опытсем тăва-тăва кăтартать.



К. В. Воронов, старшина, санинструктор.

Кирилл Васильевич ачасене малалла мĕн-мĕн тумаллине кăтартса хăварчĕ те мана хăй хваттерне илсе кайрĕ.

— Эрех-сăра таврашĕ ĕçместĕп эпĕ. Акă, хам тунă варенипе чей ĕçнинчен пахи нимĕн те çук, — тет вăл. Унтан чейнике шыв ячĕ те, газ плитине чĕртсе, ăна вĕретме лартрĕ.

Сиплĕ варенипе чей ĕçсе ларнă хушăра ăна хам Перемышль хулине хӳтĕленĕ чăвашсем çинчен материал пухма шутланине пĕлтеретĕп.

— Лайăх япала. Çырмаллах. Унта историшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем пулса иртрĕç. Чăвашсем те чылайччĕ. Пирĕн районтан çеç çитмĕл-сакăрвунă чăваш пулнă унта. Анчах çурри ытла таврăнаймарĕ. Таврăннисенчен те хăшпĕрисем çĕре кĕчĕç ĕнтĕ. Ун пек кĕнеке кăларсан, паянхи çамрăксемшĕн питех те усăллă пулĕччĕ, — ырлать ман шухăша Кирилл Васильевич.

Ытти нумай чăвашпа пĕрле 1940 çулта Воронов та Перемышль хулинче тăракан 99-мĕш стрелковăй дивизие лекет. Пĕрремĕш полк штабĕнче вăл учитель иккенне пĕлсен, ăна тӳрех кĕçĕн командирсем хатĕрлекен полк шкулне яраççĕ. Кунта çара иличчен учительте ĕç-

ленĕ чăвашсем чылай иккен. Вĕсен шутĕнче Элĕк районĕнчен кăна çич-сакăр çын вĕренет. Виçĕ уйăх вĕреннĕ хыççăн Воронов курсанта сержант званийĕ параççĕ.

Дивизире, çаплах полкра та ĕнтĕ, медицина работникĕсем çителĕклĕ пулман. Воронов полк шкулĕнче мĕн тери тăрăшса вĕреннине, дисциплинăллă пулнине шута илсе, ăна Киев хулине медработниксем хатĕрлекен виçĕ уйăхлăх курса яраççĕ. Çак курса та вăл лайăх паллăсемпе вĕренсе пĕтерет. Унтан таврăннă-таврăнман, вăрçă пуçланать.

Дивизи каялла чакнă чухне Воронов суранланнисене тăтăшах пулăшу парса пырать. Çав хушăрах Федор Иванович Канахин лейтенантпа туслашать. Чернигов облаçĕнчи Оржица местечки патĕнче пирĕннисен пысăк мар ушкăнне фашистсем хупăрласа илеççĕ. «Русь, сдавайся! Русь, капут!» — кăшкăраççĕ вĕсем. Анчах никам та парăнмасть, никам та, аллисене çĕклесе, вĕсем еннелле утмасть. Нумайăшĕ пĕтет. Çĕрле темиçе çын, ункăран çăлăнса, вăрмана çитсе ӳкме ĕлкĕрет.

Канахин лейтенант Брянск облаçĕнчи Копыниха ялĕнче çуралса ӳснĕ иккен. Федор Иванович мĕнле те пулин çавăнта, тăван çĕршывне çитсе, партизан отрядне йĕркелеме шутлать. Хăй шухăшне юлташне те пĕлтерет.

— Кирилл, пĕлетĕн-и, пирĕн енче вĕçĕ-хĕррисĕр вăрман. Унта партизансене пурăнма питех те меллĕ. Ман шутпа, ку вăрçăра партизансем те пысăк вырăн йышăнма кирлĕ. Пирĕн енчи вăрмансенче Наполеон вăхăтĕнчех партизансем нумай пулнă. Мускавран каялла чакакан французсене вĕсем, пĕлетĕн-и, сенĕксемпе, пуртăсемпе, чукмарсемпе мĕн чухлĕ аркатнă...

— Кăна пĕлетĕп эпĕ: нумай вуланă вĕсем çинчен. Уйрăмах Лев Толстойăн «Война и мир» кĕнекинче тĕплĕ çырса кăтартнă. Анчах мĕнле çитĕпĕр унта? Кунтан ытла та инçе-çке.

— Хăть пĕр уйăх, хăть виçĕ уйăх ирттĕр, пурпĕрех çитетпĕр. Ку вăрçă паян-ыран пĕтмелли япала мар. Унта çитиччен фашистсен аллинче çеç лекес марччĕ, — тавăрать лейтенант.

Чăнах та, каймалли-утмалли ытла та инçе. Пăхсан та курăнмасть, кăшкăрсан та илтĕнмест. Вĕсен вара çăвара çыртма, выçă хырăма кăшт та пулин ултăлама пĕр татăк çăкăр та çук. Анчах вăрах шухăшласа тăма вăхăт çук. Васкамалла. Малашне мĕнле пуласси курăнать унта. Мĕн кăна чăтса-тӳссе ирттермеççĕ пулĕ вĕсем çак

вăрăм çулта. Вăрманта çырла пухса çиеççĕ, нимĕçсем тăман ялсене кĕрсе, пĕр-пĕр кăмăллă çын патĕнче пурăнса вăй илеççĕ. Унтан каллех малалла утаççĕ. Ыраш-па тулă пулса çитсен, вĕсен пучахне йăваласа-шĕкĕлчесе çиеççĕ, каярах çĕрулми ĕлкĕрсен, ăна пĕçереççĕ, каллех пĕр-пĕр яла кĕрсе вăй пухаççĕ.

— Вăрçăра пулман, тăшман тылне тăрса юлман, хăй тӳссе курман çынсем ăна каласа кăтартсан та ĕненес çук, — ассăн сывласа илчĕ Кирилл Васильевич, унтан çапла хушса хучĕ: — Кĕркунне çитрĕ. Сивĕ çил. Çире çумăрпа лачкам йĕпеннĕ, таткаланса пĕтнĕ шинельпе гимнастерка, урара тĕпĕ хăпăннă кивĕ атă, хырăмра пĕр чарăнмасăр «Мускав чанĕ» çапать.

Этем тени тӳсет çав. Çутă пуласлăха çирĕп шанса тăракан, Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратакан комсомолецсен чĕри темле йывăрлăхра та тапма чарăнмасть. 1941 çулхи ноябрьте вĕсем Копыхино ялĕ патне çитеççĕ-çитеççех. Çав вăрăм çулта вĕсене лейтенант аллинчи компос та, планшеткăри карттăсем те нумай пулăшаççĕ.

Анчах мĕн тумалла-ха? Ял тахçанах фашистсен тылне тăрса юлнă. Апла унта фашистсен штаб пекки, пилĕк-ултă фриц тата сутăнчăк полицайсем пулма кирлĕ. Фрицĕсем хăйсем тухсах çӳремеççĕ. Вĕсене мĕн кирлине: ĕçмелли-çимеллине, ăшă тумтирне, вутти-шанкине — йăлтах полицайсем илсе пырса параççĕ. Хитре хĕрсемпе çамрăк маткасене сĕтĕрсе пыма та именсе тăмаççĕ вĕсем. Çавнашкал Гитлерăн «Европăри çĕнĕ йĕрке» саккунĕ. Лейтенантпа старшина фашистла йĕркесене çул çинче лайăх тĕпчесе пĕлчĕç. Полицайсем уйрăмах тыла тăрса юлнă совет воинĕсене хытă сыхлаççĕ. Асăрхас тăвас пулсан, нимĕнле хĕрхенӳ те çук — тӳрех штаба, гестапăна. Вара — сывă пул çут тĕнче е Германие, ĕмĕрлĕхе чуралăха.

Лейтенантăн ашшĕпе амăшĕ те чĕрĕ-ха, те çук. Сĕмçĕрле Федьăпа Кирилл, анкарти хыçĕпе пырса, картишне кĕреççĕ, пӳртре чĕп куçĕ мĕлтлетнине кураççĕ.

Пурте йĕркеллĕ. Федор Ивановичăн ашшĕ те, амăшĕ те сывах. Никам шутлама пултарайман тĕлĕнмелле тĕлпулу. Тăватă уйăха тăсăлнă тамăкри пурнăç хыççăн сĕтел çинче вĕри апат, çире — типĕ тумтир. Шăппăн, хăлхаран калаçнă пек калаçаççĕ вĕсем. Ашшĕпе амăшĕ ывăлне текех ниçта та ямĕччĕç, ун çине пăхса савăнĕччĕç, ăшшăн калаçса сивĕнме пуçланă юнĕсене ăшăтĕччĕç, анчах юрамасть. Малтан вăрă-хурах тăшмана

аркатса тĕп тумалла, Гитлер йăвине çитсе тустармалла, пĕтĕм халăха ирĕклĕ пурнăç туса памалла.

— Атте, партизансем пирки мĕн те пулин илтмен-и эсĕ? Пур-ши вĕсем пирĕн таврара? — шăппăн ыйтать ывăлĕ.

— Татса калама пултараймастăп, ывăлăм. Пире тухса çӳреме, урамра пухăнса калаçма юрамасть. Анчах хутран-ситрен çĕрле автоматсенчен перкелешнине аннӳпе иксĕмĕр те илтетпĕр, — тавăрать ашшĕ.

— Ĕнер ирхине çăл патне шыва кайсан, пĕри, çăварне тутăр вĕçĕпе хупласа, çапла пĕлтерчĕ: инçетри «хăнасене» вăрман çыннисем хăналанă, тет, — çирĕплетет амăшĕ.

Сывпуллашаççĕ. Федя, çакăнта çуралса, çакăнтах ӳснĕ. Вăл кунти вырăнсене хăйĕн пилĕк пӳрнине пĕлнĕ пекех пĕлет.

Тепĕр кунне вĕсене чăтлăхалла каякан сукмак çинче тытса чараççĕ. Штаба илсе çитерсен, тĕлĕнмелле япала пулса иртет. Пĕри тăрать те Федор Ивановича ыталаса илет.

— Федя, чăнах-и? Эсех-и? Санах куратăп-и эпĕ?! Мĕнле майпа? Ăçтан?

— Ку вăл, Петя, истори. Малтан, акă, юлташпа паллаш-ха. Старшина-санинструктор. Наципе—чăваш,— Кирилл енне çаврăнать Федя.

Паллашнă хыççăн Воронов çапла евитлет:

— Федор Иванович хăй пирки каламарĕ-ха сире. Вăл лейтенант, взвод командирĕ.

— Эпир ăна пĕлетпĕр. Часах партизансен соединенийĕ йĕркелетпĕр те Федьăна тӳрех полковник ятне паратпăр, — кулса-савăнса, таса сенкер куçĕсене вылятказаса каларĕ Петя.

Федьăпа Петя пĕр-пĕрне лайăх пĕлеççĕ иккен: вăрçă умĕн ВЛКСМ райкомĕнче пĕрле ĕçленĕ.

Отрячĕ пысăк мар: пурĕ те вăтăр çын çеç. Штаб начальникĕ — Елизаров, взвод командирĕ — Ковалев.

Штаб кăларнă приказпа К. Воронова — партизансен тухтăрĕ, Ф. Канахина взвод командирĕ туса хураççĕ. Отряд ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Унăн комиссарĕ В. Ямщиков пулса тăрать. Отряд ӳссе пынăçем (унта ĕнтĕ 280 çын) унăн диверсиллĕ ĕçĕсем вăйланса, сарăлсах пыраççĕ. Партизансен тухтăрĕн ĕçĕ те нумайланать. Ун пирки Воронов хăй те çаплах калать.

— Партизан отряднĕнче мĕн-мĕн тушшне уйăх калаçан та пĕтмĕ. Кĕскен çапла: партизансем пĕр кун та

ахаль ларман. Тăшман эшелонĕсене, вĕсем каçса çӳрекен кĕперсене сывлăша сирпĕнтернĕ, фашистсен гарнизонĕсем çине тапăннă, вĕсен штабĕсене аркатса, вăрттăн упранакан документсемпе «чĕлхесем» иле-иле килнĕ. Çав документсемпе фашистсен командирĕсене Мускава çитиех ăсатнă. 1943 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче мĕн пулса иртнине каласа хăварасах килет манăн, — килĕшессе кĕтнĕн пăхса илет ман çине Кирилл Васильевич.

— Пĕр взвод командирĕн çемйи Пральня ятлă ялта пурăннă. Ку ял партизан отрячĕ вырнаçнă вырăнтан 25 çухрăмра, ялĕнче фашистсем тăнă. Яла разведкăна кайнă партизан взвод командирне темле йывăр хыпар пĕлтерет. Командир шуралса каять, каллĕ-маллĕ утма пуçлать. Çакна Воронов çийĕнчех асăрхать.

— Мĕн пулнă сире, командир юлташ? — ыйтать вăл унран.

— Нимех те мар, — командир аллине кăна сулать, анчах хăй çаплах вырăн тупаймасăр утать.

— Калăр-ха, тархасшăн, мĕн пулнă? — çине тăрать партизансен тухтăрĕ.

— Пурпĕрех ним тума та çук. Арăм вилес пек выртать, тесе пĕлтерчĕç.

Воронов унăн арăмĕ ăçтине ыйтса тĕпчет, юлашкинчен çапла калать:

— Пральня ялне пĕлекен пĕр автоматчик парăр. Халех каятпăр.

— Ан ухмахланăр, Кирей. Унта фашистсем,— тавăрать командир.

— Мĕнех вара, эпир çак икĕ çул хушшинче сахал курнă-и вĕсене?

Тавлашаççĕ. Тухтăр каялла тавранаймасран хăрать командир. Анчах Кирей хăй сăмахĕнчен чакмасть.

— Эсир мана апла каласа чарас çук! Эпĕ, старшина çеç пулин те, сире хам приказ пама пултаратăп. Халех мана пĕр автоматчик парăр!

Кирей, кирлĕ эмел илсе, пĕр автоматчикпа çула тухать. Пральня ялне партизансем шăпах вăхăтра çитнĕ, командир арăмне кирлĕ пулăшу панă, ăна вилĕмрен çăлса хăварнă.

Партизансем 1943 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çарпа пĕрлешеççĕ. Партизансене юсанса вăй илме Орел хулине ăсатаççĕ. Кайран, сывлăхĕ кăштах лайăхлансан, К. Вороновăн Тăван çĕршыв умĕнчи пысăк ĕçĕсене шута илсе, ăна икĕ çулталăкшăн шалу параççĕ те тăван ялне ăсатаççĕ.

Çапла, Кирилл Васильевич Воронов Хĕрлĕ Çарта чухне те, партизансен ретĕнче фашистсемпе кĕрешнĕ вăхăтра та тăшмана çапса аркатма мĕнпур вăй-халне, пĕлĕвне панă.

1944 çулта районти çар комиссариачĕ Воронова тепĕр хут çара илет. Хальхинче вăл вĕренӳ полкĕнче служ-бăра тăрать, вăрçă пĕтсен, çавăнтанах тăван ялне тавра-нать. Кайран ăна «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» тата «Брянск партизанĕ» медальсем параççĕ.

Халĕ Воронов хăй йĕркеленĕ музей директорĕ, Чă-ваш АССР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Музейре 3000 ытла экспонат шутланать.

Кирилл Васильевич — районти атеистсен методикăл-ла секцийĕн председателĕ. Вăл таврари ялсенче çеç мар, район центрĕнче те атеизм темипе час-часах докладсем туса парать.

Халĕ К. Вороновпа В. Ямщиков (вăл Подольск ху-линче пурăнать) пĕр-пĕринпе çырусем çӳретеççĕ, отпуск вăхăтĕнче пĕр-пĕрин патĕнче хăнара пулаççĕ.

ПИЛЛĔКМĔШ ТĔЛПУЛУ

Кĕçĕн Тăван ялне эпĕ пĕрремĕш хут кĕркунне, уяр çанталăк тăнă чухне кайрăм. Çыранĕсем ишĕлсе пыра-кан çырма яла шăп та лăп çурмалла уйăрса каять. Çав çырма хĕрринчи çăлран мана хирĕç икĕ хĕрарăм кĕвен-тепе шыв çĕклесе хăпараççĕ.

— Вăйлă пулăр. Каçарăр, эсир Савватий Кузьмич Кузьмин ăçта пурăннине калаймăр-ши? — ыйтатăп çак-сенчен.

— Ăçтан килетĕр-ха? Мĕнле çăмăлпа? — тĕпчеме пуç-ларĕ ватăрах хĕрарăм.

— Çăмăлĕ-мĕнĕ, курмаллаччĕ-ха ман ăна.

— Халех курас тесен, эсир луччĕ килне мар, тӳрех машинăпа трактор паркне кайăр. Халĕ шăпах унта вăл,— терĕ çамрăкраххи. Çавăнтах парка мĕнле çитмел-лине те ăнлантарса пачĕ.

Савватий Кузьмич, вăтам пӳллĕ, самаях типшĕм, сайра сухаллă çын, кунта хуралçă иккен.

Вăл нумай калаçса тăмарĕ — документсемпе пал-лашма тесе хăй патне килне илсе кайрĕ. Эпир, вăрçă ветеранĕсем, çийĕнчех пĕр чĕлхе тупрăмăр.

Савватий сăмах илме кивçене каякан йышши пул-

марĕ. Кулăшларах, анчах та питĕ ĕненмелле калаçать вăл.

— Эпĕ снайпер пулнă. Снайперăн пĕр пули те сĕт шырама каймалла мар. Фрица шăп та лăп е чĕререн, е çамкаран тирмелле. Урăх çĕре тивертсен, эсĕ вара снайпер мар. Манăн сăмахăм та çапла. Каларăм-тăк — тӳррине. Кукăр-макăрăм çук. Куншăн мана хăшпĕрисем юратсах та каймаççĕ те, ну пĕлеççĕ...

...1941 çулхи июнь вĕçĕнче Кĕçĕн Тăван ял Советне Кузьма Ефимов ячĕпе хут килет. Унта Савватий Кузьмин, Перемышль хулине фашистсенчен хӳтĕлесе, паттăрсен вилĕмĕпе вилни çинчен пĕлтернĕ. Çыру ял Советне вăрçăран килнĕ пĕрремĕш хурлăхлă хыпар пулнă.

Çав хута илсен, Савватин ашшĕпе амăшне ватă этем чăтайми хăрушă хыпар пусса антарнă, вĕсем ним тума та пĕлмен. Тĕпелти сак çине ларнă та пуçĕсене уснă, каласа сăмах та тупайман. Арăмĕ куççульне юхтарнă, упăшки хытарса хунă кĕлетке пек ларнă. Çапла шăпăртах ларсан-ларсан, карчăка чун кĕнĕ пек пулнă. Вăл, ерипен тăрса, кĕтесри турăш патне пынă, çурта çутнă, сăхсăха-сăхсăха, турăран ывăлĕн чунне çăтмаха яма ыйтса, кĕлтума пуçланă. Унтан старикне те турăш умне тăрса кĕлтума ыйтнă. Куçма мучи çапла каланă:

— Вăрçăра вилнисем кĕлтумасăрах пурте çăтмаха каяççĕ.

Куçмапа мăшăрĕн куçĕсем типме те ĕлкĕреймен — Савватирен çыру персе çитнĕ. Вăл сып-сывах иккен, снайпер винтовкинчен фашистсене вăрçăн пĕрремĕш кунĕнченех пакша мăйăра шĕкĕлченĕ пек шĕкĕлчĕни çинчен çырать, ытарайми ашшĕ-амăшне, тăванĕсене, пĕтĕм ялйыша снайперла хĕрӳллĕ салам ярать.

Ак тамаша! Мĕнле япала ку? Ватă çынсем тĕлĕнсе каяççĕ: хăшĕ тĕрĕс-ши? Пуç тавра çавăрттарса шухăшлама пуçлаççĕ.

— Ашшĕ, кала-ха, хăшĕ тĕрĕс пек сана? — ыйтать арăмĕ.

— Чĕрӳ мĕн тет? Хăшĕ тĕрĕс пек тет? Амăшĕн чĕри пĕлме кирлĕ, — тавăрать Куçма.

— Вăл ним те шарламасть. Тапма чарăннă пекех.

— Штаб хучĕ хăвăртрах, салтак çырăвĕ вăрах çӳретчĕ ĕлĕк. Тен, амăшĕ, Саввати маларах çырнă пуль те...

— Çук, çук, ашшĕ, апла мар, апла ан кала...

Çак самантра вĕсем патне мăнукĕ чупса кĕнĕ те пĕтĕм ыйтăва самантрах татса панă.

— Нимĕн иккĕленмелли те çук. Штабран июнĕн çирĕм виççĕмĕшĕнче çырнă, Саввати пичче вара çирĕм тăваттăмĕшĕнче çырса алă пуснă,— ăнлантарнă мăнукĕ, пĕчĕк пӳрнипе çырусене хăçан çырнине пĕлтерекен вырăнсене тĕке-тĕке кăтартнă.

Кузьма Ефимович васкасах куçлăхне тăхăннă, мăнукĕ кăтартнă вырăнсене тинкерсе пăхнă.

— Эх, ватсупнă. Ара, эп çавна та чухласа илменçке. Маттур, мăнукăм, маттур. — Куçма мăнукне ыталанă та мăшăрĕ енне çаврăннă. — Амăшĕ, вилмен пирĕн Саввати. Чĕрĕ.

Карчăкĕ халĕ ĕнтĕ хурланнипе мар, савăннипе куççульне тутăр вĕçĕпе шăлма пуçланă.

Мĕн пулса иртнĕ-ха çак кĕске вăхăтра? Мĕншĕн-ха штабран Савватий паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ тесе пĕлтереççĕ, ывăлĕ вара эпĕ чĕрĕ, нимĕçсене шĕкĕлчетĕп тесе çырать?

Савватий Кузьминăн Хĕрлĕ Çарти службби йăлтах йĕркеллĕ пулса пынă. Çарта мĕнле пулмалла — çапла. 1939 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче ăна тăванĕсемпе пĕтĕм ялйыш, мĕн авалтан килекен йăлапа, уй хапхинчен тухичченех ăсатса янă. Декабрĕн 5-мĕшĕнче вăл ытти юлташĕсемпе пĕрле Бердичев хулине çитнĕ. Çамрăк боец кунта, Тăван çĕршыва мĕн юлашки юн тумламĕ юличчен хӳтĕлеме сăмах парса, тупа тунă. 1940 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче вĕсене Перемышль хулине илсе çитернĕ...

Темиçе кун иртсен, Савватие снайперсем хатĕрлекен ултă уйăхлăх курса вĕренме яраççĕ. Курсран лайăх вĕренсе тухнă ятпа шкул начальникĕ ăна тав тăвать. Савватий Кузьмич, чаплă снайпер пулса, хăйĕн чăсне тавраçнать. Чаплă тени вăл халлĕхе чĕпсене кĕркунне шутлаççĕ тенĕ манерлĕрех-ха. Тăшманпа куçа-куçăн пулма тӳр килсен, тем пулса тем килет. Халлĕхе вара службăра пурте йĕркеллĕ унăн. Анчах...,

Вăрçă пуçланнă чухне Кузьмин службăра пулнă часть Перемышль хулинче тăнă. Снайпер вăл, мĕнле каламалла, вăрçăра хăйне кура çын. Пĕр-пĕр вăрттăн позици йышăнать те вара хăйне хăй «хуçа» пулса тăрать. Кирек мĕнле лару-тăрура та решенисене командир мар, хăй тĕллĕнех йышăнать. Çавăнпа снайпершăн лайăх пеме пĕлни кăна çителĕксĕр. Унăн вăрçă тактикине, вырăнти лару-тăрăва вăхăтра тавçăрса илсе, тĕрĕс решени йышăнма та пĕлмелле.

Ансăртран ун пек-кун пек сиксе тухас пулсан, хăй

йышăнмалли позицисене Кузьмин малтанах палăртса хунă, вĕсене маскировка тунă. Çав позицисем ăçта-ăçта вырнаçнине рота командирне кăтартса çӳренĕ, лешĕ мĕн каласса кĕтнĕ. Командир, юлашки позицие тĕрĕсленĕ хыççăн, снайпера çурăмĕнчен лăпкаса илнĕ.

— Позицисене тĕрĕс суйласа илнĕ. Маттур. Пултаратăн, — тенĕ вăл.

Командира уйрăмах лăпсăркка йывăç çинчи позици килĕшнĕ.

Акă перкелешӳ пуçланнă. Кузьмин пĕр йывăç çине, малтанах лайăх хатĕрлесе хунă, хăйĕн командирĕ мухтанă вырăна хăпарса ларнă. Кунтан снайпера пурте курăнать, ăна вара никам та асăрхамасть.

— Хăйсем йăтса килекен кимĕсене шыва ячĕç те, хăнана кайнă чухнехи пек, ним шикленмесĕр-тумасăр вĕсем çине кĕрсе ларчĕç, пирĕн еннелле ишме пуçларĕç. Пĕри çăвар купăсĕпе хаваслă кĕвĕ шăрантарса пырать,— аса илет С. Кузьмин.

Пирĕннисем чăтăмлăн кĕтеççĕ. Сан шывĕ çурри вĕсен, çурри — пирĕн. Çавăнпа тăшман шывăн çурринчен иртмесĕр пеме ççĕ. Утмăл-çитмĕл метр сарлакăш тарăн мар çырма мĕн вăл — темиçе хутчен авăссанах пĕр енчен тепĕр енне каçса ӳкме пулать.

Чикĕ хĕрринчи пограничниксем тăшман çине малтан автоматсенчен переççĕ, унтан гранатăсем ывăтаççĕ. Нумай фашист Сан шывĕнчи пулăсем валли апата каять. Çапах чылайăшĕ ку енне каçса ӳкме ĕлкĕрет. Вĕсем Кузьмин роти йышăннă оборона линийĕ патне çывхарса пыраççĕ. «Рота, залпом пли!» команда илтĕнсен, пирĕннисем тăшман çине винтовкăсенчен пĕр харăс персе яраççĕ. Çапла тепĕр залп, виççĕмĕшĕ. Сулахай позицире «максимка» шăкăлтатса «каласать». Нимĕçсем лаплата-лаплата ӳкеççĕ. Йывăç çинчи позицирен Савватий кăларса яракан пульăсем те, хăй калашле, кĕтмен хăнасене пакша мăйăра шĕкĕлченĕ пекех шĕкĕлчеççĕ. Унăн пĕр пули те «сĕт илме» каймасть, шăп та лăп тăшман чĕрине тирĕнет. Аялта çакнашкал хĕрӳ çапăçу пынă чухне йывăç çинчи снайпер пирки кам мĕн шутлама пултартăр? Сылтăмран, чылай аякран тепĕр ушкăн çаврăнса тухать. Ахăртнех, вĕсем пирĕн рота позицине хыçалтан пырса тапăнма шутланă. Савватий бинокльпе çаксене çийĕнчех асăрхать, аялта çапăçакансем вара вĕсене курмаççĕ те пулас.

Ун пек чухне чи малтан тăшманăн командирне пĕтермелле, ăна пăхăнакан салтаксем хушшинче пăтăр-

мах кăларма тăрăшмалла. Çакна Кузьмин лайăх пĕлет. Çапла вĕрентнĕ вĕсене курсра. Çапла турĕ те снайпер. Сылтăм куçне хĕссе, курок çине пусрĕ кăна — кĕреш пек офицер çĕре лаплатса та ӳкрĕ. Тепĕр икĕ пулипе икĕ унтер-офицера леш тĕнчене ăсатрĕ. Командирсăр тăрса юлнă салтаксем сурăхсем пек кăн-кан! пăхкаласа илеççĕ, ним тума та пĕлмеççĕ. Вĕсене командирсене çеç итлеме вĕрентнĕ, хăйсем тĕллĕн мĕнле те пулин решени йышăнма хăнăхтарман. Салтакăн командирсăр пĕр утăм та тума юрамасть.

Çак самантпа вара Савватий питех те пĕлсе усă курчĕ. Пĕрре! Иккĕ! Виççĕ!.. Ыттисем каялла çаврăнчĕç. Çурăмран, паллах, тăшмана пеме те аван мар, анчах Савватий мар-çке, хăйсем айăплă. Ан кĕччĕр пирĕн çĕр çине, ан хапсăнтăр çичĕ ют пирĕн мула! «Пер, Савватий, аркат, çунтар тăшмана, Савватий!» — хушать салтака чĕри. Чĕтремен çирĕп алăра снайпер винтовки — тăшманшăн хăрушă, хуçишĕн шанчăклă хĕçпăшал. Шĕкĕлчет те шĕкĕлчет фашистсене Кĕçĕн Тăван каччи Савватий.

Пирĕннисем ку лаптăкра та тăшмана кăнтăрлаччен пĕр утăм малалла кайма паман, хăйсен позицине çирĕп тытса тăнă. Приказ илнĕ хыççăн, çапăçа-çапăçа, тăшман вăйне арката-арката, часть каялла чакать. Анчах снайперăн мĕн тумалла-ха? Йывăç çинчен анса хамăрăннисем патне кайма май çук-çке. Ана пĕрре ура ярса пусма ĕлкĕричченех леш тĕнчене ăсатаççĕ. Е, пуринчен те хăрушши, тыкăна илме пултараççĕ. Паллах, алăра патронлă винтовка пур çĕртенех вăл нимĕçе чĕрĕллех парăнас çук-ха, çапах та... Эх, пĕлмен-çке вăл пирĕннисем чакасса. Пĕлнĕ пулсан, маларахах, хамăрăннисем чакса кайиччен, йывăç çинчен анса, вĕсемпе хутшăнса кайнă пулĕччĕ...

Тăшман тылне тăрса юлнă снайпер шухăша каять. «Тата тăхăр патрон. Пĕрне хам валли хăваратăп. Апла тата сакăр фрица пĕтерме пултаратăп-ха».

Июнĕн 22-мĕшĕ. Çулталăкри чи вăрăм кун та, чи кĕске çĕр. Хĕвел анса ларнă хыççăн тĕттĕмленме те ĕлкĕреймест, тухăçран çутăлма та пуçлать.

Савватие хырăмĕ паян ăша пĕр чĕптĕм те яманни çинчен систерет. Эх, кăна пĕлнĕ пулсан-и? Пĕлнĕ пулсан, старшинаран ыйтса ĕнерех çакăнта мĕн те пулин çимелли илсе килсе хунă пулĕччĕ. Анчах ку вăл тĕп ыйту мар-ха. Ана пуринчен ытларах хамăрăннисен шăпи пăшăрхантарать. Аçта-ши, мĕнле-ши вĕсем?...

Савватий хăйне йывăç çинче çĕрлехи тăмана пек ларма юраманнине лайăх пĕлет. Унăн тул çутăлса çитиччен, йывăç çинчен анса, мĕнле те пулин хамăрăннисем патне çитмелле, анчах инçех те мар, унта та кунта нимĕçсем каласнине, вĕсем ахăлтатса кулнине илтет те — шăпăртах ларать. «Нимĕçсем кунтах чарăннă пулсан, пирĕннисем те инçех кайман ĕнтĕ. Унсăрăн фрицсем вĕсене малалла хăваласа кайнă пулĕччĕç. Ирхи ăс каçхинчен лайăхрах тенĕ ваттисем. Мĕн пулать те мĕн килет, ир пуласса кĕтетĕп...» — хăй шухăшне çапла татать снайпер.

Полк штабĕнче вилнисен списокне тăваççĕ. Çавă, çавă... Савватий Кузьмин снайпер та çук. Ирхине вара вăрçăн пĕрремĕш куннех вилнисен ашшĕ-амăшĕ е тăванĕсем патне хурлăхлă хыпарсем çырса яраççĕ. Çав списока Савватий те лекет.

Июнĕн 23-мĕшĕнче пирĕннисем контрнаступлени пуçлаççĕ. Снайпер винтовки каллех «чĕрĕлет». Перет те перет вăл. «Хам валли мар, сирĕн валлиех пулнă иккен!» — тесе, хăй валли хăварнă патронне те кĕпçене чикет — тепĕр фрица леш тĕнчене ăсатать. Шăпах йывăç çинчен анма хатĕрленнĕ чухне ун патне рота командирĕ чупса çитет.

— Кузьмин, эсĕ чĕрĕ-и вара? — хĕпĕртесе ӳкет командир.

— Вилме шутламан та, аслă лейтенант юлташ! — шӳтлет снайпер.

— Эсĕ фашистсене мĕнлерех ăшаланине эпĕ сăнасах тăтăм. Лайăх ĕçлерĕн. Фашистсен нумай командирĕпе салтакне пĕтертĕн. Куншăн сана орден пама тăрататпăр,— пĕлтерет командир, йывăç çинчен сиксе аннă снайпера хăй ытамне илет.— Ĕнер чакнă чухне маларах килсе пĕлтерме май пулмарĕ... Каçар. Эпир сана...

— Мĕн «сана»?

— Сана вилнĕ тесе пĕлтертĕмĕр. Яла...

— Апла эпĕ, аслă лейтенант юлташ, тата çĕр çул пурăнатăп-ха, — хавасланать снайпер.

Савватий Кузьмин пурнăçĕ халăх хушшинче çӳрекен сăмаха çирĕплетсе панă пек. Паттăр юлташĕсемпе пĕрле ăçта кăна пулман вăл иртнĕ вăрçăра! Тăшмана Сталинградра аркатнă, Дон çинчи Ростов, Шахты, Севастополь хулисене ирĕке кăларнă, темиçе хутчен те вилĕмпе куçа-куçăн пулнă, çапах сывă юлнă.

Вăрçă хирĕнче пиçнĕ Савватий Кузьмин коммунист, тăван яла таврăнсан, темиçе çул хушши ферма заведую-

щийĕнче ĕçлерĕ. Вăл халĕ те хастар чĕреллĕ, тӳрĕ кăмăллă колхозник, машинăпа трактор паркĕнче халăх пурлăхне сыхлать.

УЛТТĂМĔШ ТĔЛПУЛУ

Хураварти Иван Кириллович Кириллов патне мана икĕ хутчен кайма тиврĕ. Пĕрремĕш хут кайнă чухне кĕçĕн ывăлне тин çеç Совет Çарне ăсатса янă иккен. Вăл мана шутсăр лайăх кăмăл-туйăмпа кĕтсе илчĕ. Анчах эпĕ вара пысăк йăнăш турăм: сăмаха тӳрех Перемышль пирки хускатрăм. Эпĕ çавăнта чăн-чăн паттăрлăхпа çапăçнă чăвашсем çинчен çырма шутланине пĕлсен, унăн кăмăлĕ хуçалчĕ.

Тепрехинче эпир Иван Кирилловичпа Хуравар библиотекинче вăрахчен калаçса лартăмăр.

Перемышле юлнă боецсем ыран июнĕн 22-мĕшĕ тенĕ каç вилнĕ пек çывăрнă: кăнтăрла занятире пулнă, каçкӳлĕм хуçалăхри ĕçсене тунă. Пурте ывăннă, ĕшеннĕ.

— Эпĕ, ялта ирех тăрса ĕçлеме хăнăхнăскер, çарта та çавахчĕ. Виçĕ сехетре вăранаттăм та, «подъем» пуласса кĕтсе, койка çинче йăваланса выртаттăм. Хăвăр та çар çынни пулнă. Пĕлетĕр-çке-ха, «подъем» пуличчен тăрса тумланма юрамасть.

— Курсант чухне эпĕ хам та, çав «подъема» кĕтсе, нарăн иккĕмĕш хутĕнче нумай тертленнĕ, — килĕшетĕп юлташ шухăшĕпе.

— Кĕтмен-туман, пĕр шутламан çĕртен снарядсем çурăлни, автоматсенчен пени хăлхана кĕрех кайрĕ. Сехет çине пăхам-ха, мĕн амакĕ ку тесе, пуçа кăна çĕкленĕччĕ, казармăна пĕр капитан хашкаса чупса кĕнине курах кайрăм. «Боевая тревога!» — кăшкăрса ячĕ вăл тӳрех. Эпир пурте яштах сике-сике тăтăмăр.

— Васкавлă пулăр, юлташсем! Пирĕн çине фашистсем тапăннă! Патронсемпе гранатăсене старшинаран илĕр! Тăшманпа çапăçма хатĕр пулăр! — приказ пачĕ капитан, хăй каялла чупса тухса кайрĕ. — Çапла аса илет Кириллов вăрçăн малтанхи минучĕсене.

Кириллов, çав тери вăр-варскер, чи малтан тумланать те, пирамида çинчен винтовкине илсе, старшина патне чупать. Ăна çавăнтах 45 патрон тата виçĕ граната параççĕ. Вăл площадкăна чупса тухать. Чăнах та вăрçă иккен. Икĕ çĕрте ирхи тап-таса тӳпене хура тĕтĕм мăкăрланса хăпарать. Сан шывĕ хĕрринчен татти-сып-

писĕр пулеметсемпе автоматсенчен, винтовкăсенчен пенĕ, гранатăсем шартлатса çурăлнă илтĕнет. Палла: пограничниксем чикĕ урлă каçма хăтланакан фашистсемпе çапăçаççĕ.

Казармăран винтовкăпа гранатăсем тытнă боецсем пĕрин хыççăн тепри ыткăнса тухаççĕ. Часах Полоцкий лейтенант чупса çитет, пурне те хăй хыççăн пыма приказ парать. Лейтенант вĕсене аш-какай комбиначĕ патне ертсе каять. Малтанах палăртса хунă: апла-капла сиксе тухсан, Полоцкий лейтенант взвочĕн комбината хŭтĕлемелле, кирлех пулсан, пограничниксене пулăшмалла. Халлĕхе кунта çапăçусем пымаççĕ-ха. Вĕсем пограничниксем патне çул тытаççĕ.

Кимĕсем çине ларнă нимĕçсем, автомачĕсенчен таттисыпписĕр шатăртаттарса, пирĕн енне шăвăнаççĕ, анчах çыран патне çитеймеççĕ, пограничниксемпе боецсем гранатăсем ывăтса, пулеметпа винтовкăсенчен персе, вĕсене шыва путараççĕ. Хутран-ситрен, вырăнăн-вырăнăн, фашистсем пирĕн çыранах тухаççĕ, анчах вĕсене, штыкпа та кăкăрпа хĕссе, çавăнтах пĕтерсе пыраççĕ, чĕрĕ юлма пултарнисем, каялла çаврăнса, Сан шывне сикеççĕ. Çапла темиçе хутчен.

— Пирĕн вăйсем чаксах пыраççĕ. Кăнтăрла çитеспе Полоцкий чĕрĕ юлнă боецсемпе хăйĕн тĕп позицине йышăнма аш-какай комбиначĕ патне чакать. Пĕр боец, пĕр тумлам юн юлмиччен унăн çак комбината хŭтĕлемелле. Анчах мĕн ку? Çĕнĕ приказ: хуларан тухса каймалла, тухăçалла чакмалла.

Иван Кириллов, пысăк та кĕрнеклĕскер, вăйлăскер, алă вĕççĕнех виçĕ фашиста пĕрин хыççăн тепĕрне сывлăша çĕклесе, Сан шывне ывăтнă. Миçе фрица штыкпа тирсе ывăтман-ши тата!

Полоцкий лейтенант аш-какай комбиначĕн хŭттипе каялла чакма приказ парсан та, Кириллов чи кая юлнă, юлашки патронĕпе тепĕр фашиста пĕтерме шутланă, анчах хальхинче ĕç тухман: касса янă йывăç пек, вăл çĕре лаплатса ŭкнĕ, икĕ аллипе çĕр-анне тăприне ывăçласа чăмăртанă.

Йывăр суранланнă Кириллова нимĕçсем кимĕ çине сĕтĕрсе кĕртеççĕ те хăйсен енне илсе каçаççĕ. Тахăш ялта кăштах юсаннă хыççăн ăна Берлин леш енчи лагере илсе çитереççĕ.

— Çав лагерьте çитмĕл пин çынччĕ. Унта Европăра пурăнакан пур наци çыннисем те пурччĕ пуль. Лагерьте кашни кунах икçĕр-виççĕр çын вилетчĕ. Йĕри-тавра

сывлама çук шăршă тăратчĕ,— аса илет Кириллов.

Икĕ уйăхран çак лагерьти 200 ытла çынна автобуссем çине хăваласа кĕртнĕ. Вĕсем хушшинче пирĕн янташ та пулнă.

— Пире тӳрех сӳс-кантăр заводне илсе кайрĕç. Питĕ шукăль тăхăннă, нимĕç пистолетне çакнă тăлмачă пирĕн малашне çак заводра ĕçлемелли çинчен пĕлтерчĕ. Сăмах май каласан, вăл Челябинскра çуралнă, Тăван çĕршыва сутнă Вася Сучковчĕ. Пирĕнпе шутсăр хаяррăн калаçатчĕ, пирĕнтен кам та пулин фашистсене тарăхса калаçнине илтсен е кунти йĕркене пăснине пĕлсен, çийĕнчех хăйĕн пуçлăхĕсене пĕлтерсе тăратчĕ. Виçĕ уйăх иртсен, пĕр тĕттĕм каç эпир ăна пăвса вĕлертĕмĕр, — каласа парать Иван Кириллович.

Тыткăнрисем кунĕн-çĕрĕн мăкăрланса тăракан цехсенче ĕçленĕ. Сăмсапа çăвара таса мар сывлăшран хӳтĕлеме марлĕ ăшне вата хурса çĕленĕ çыхă та пулман вĕсен. Ахаль те начарланса, вăйсăрланса çитнĕ çынсем чахотка чирĕпе чирлеме пуçланă. Пурăнасса вĕсем лаша витисенче пурăннă.

— Ĕç норми шутсăр пысăкчĕ. Нормăна тултармасан хĕнетчĕç, çăкăр нормине чакарса паратчĕç. Çакнашкал çынсем начарланнăçемĕн начарланса, вăйсăрланса çитетчĕç те ĕçленĕ вăхăтра тӳнсе кайса вилетчĕç. Анчах мастерсем хушшинче ырă кăмăллă нимĕçсем те пурччĕ. Каярахпа эпир вĕсем антифашистсен ретĕнче пулнине пĕлтĕмĕр. Ун пеккисем пире нормăна тултарнă хыççăн ларса канма та ирĕк паратчĕç, — малалла аса илет Кириллов.

Пĕррехинче, çĕрлехи сменăра, Иван Кириллович, ĕç нормине тултарнă хыççăн кăштах канам-ха тесе, туалета кĕрсе ларать. Ларма çеç ĕлкĕрет, надзиратель вăркăнса кĕрет те йывăр ĕçре халтан кайнă Ивана питĕнчен çупса ярать. Чăваш каччи, таçтан хăюлăх та вăйхал çитерсе, надзирателе урипе тапса сирпĕтет те ун çине хăпарса сикет. Надзиратель, туалетран аран-аран упаленсе тухса, телефон патне чупать. Кириллов — ун хыççăн. Лешĕ телефон трубкине ярса илет. Иван Кириллович, халĕ ĕнтĕ мана пĕрех е персе, е çакса вĕлерессĕ тесе, телефон аппаратне çапса аркатать, надзирательне хăлха чиккинчен янклаттарса çĕре ӳкерет.

Тепĕр кунне кантур умне такан пырса лартаççĕ. Ку таканран чылайăшне çакса вĕлернĕ ĕнтĕ.

Совет салтакĕ хăйĕн мастерне аса илет. Темшĕн-çке вăл ăна пĕрре те ытти хăшпĕр нимĕçсем пек тискер туй-

ăнмастчĕ. Тыткăнрисем ăна хисеплетчĕç. Ку пирĕн çын мар-ши тесе калаçкаласа та илетчĕç тепĕр чухне.

Шыва путакан улăм пĕрчинчен те пулин тытса çăлăнма тăрăшать тенĕ пек, совет салтакĕ çав мастера чĕнтерме тархаслать. «Эпĕ хамăн мастер ирĕк панипе кăштах канма ларнăччĕ кăна, мана надзиратель хĕнеме пуçларĕ», — тесе ăнлантарма тăрăшать Иван кантурти нимĕçсене. Анчах унăн сăмахĕсене хăлхана чикекен те çук. Кириллова кантуртан илсе тухаççĕ те такан умĕнчи пукан çине хăпартса тăратаççĕ, мăйне такан кукăрĕнчен усăнса тăракан вĕрен йăллине тăхăнтартаççĕ.

Шăп та лăп Кириллов урисем айĕнчи пукана пĕр фашист тапса сирпĕтме хатĕрленнĕ самантра Иван мастерĕ чупса çитет. «Нормăна тултарнă хыççăн вырăс Ивана ларса канма эпĕ ирĕк патăм. Апла надзирателĕн ăна çупа-çупа яма нимĕнле право та пулман. Иван тĕрĕс тунă. Уншăн эсир ăна çакса вĕлерме пултараймастăр!»— тенĕ çак нимĕç мастер фашистсене. Йĕри-тавра пухăнса тăнă нимĕçсен ушкăнĕнчен те ик-виçĕ сасă илтĕнчĕ: «Тĕрĕс! Çакма кирлĕ мар. Иван халиччен йĕркене пăсман! Йăлтах итленĕ, лайăх ĕçленĕ. Пĕррелĕхе каçармалла ăна!»

Çак вăхăтра, пĕр сехете яхăн, Иван Кириллович такан умĕнче пукан çинче мăйĕнчен йăлланă халлĕнех тăнă. Кайран вăл хăйне вилĕмрен çăлса хăварнă нимĕçсем антифашистсем пулнине те пĕлет: апла нимĕçсем те пурте фашистсем мар, вĕсем хушшинче пире хŭтĕлекенсем те пур иккен тесе, чĕререн савăнать. Вĕсем хŭтĕленипех чĕрĕ юлать, кайран Тăван çĕршыва, тăван килĕшша таврăнать Иван Кириллович.

Хăйĕн мăйĕнче вилĕм çакки пулнине аса илнĕ иккен вăл эпĕ малтанхи хут пырсан, çавăнпа йĕме пуçланă.

Яла таврăнсан, Иван Кириллович тŭрех бригадирта ĕçлеме пикенет, 1955 çултанпа вара пĕр улшăнмасăр почтальонра ĕçлет. Халăх дружининче лайăх ĕçленĕшĕн ăна Хисеп грамотĕ панă.

Тыткăнра сŭс-кантăр заводĕнче сывлăхне пĕтернĕ Иван Кириллович вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Ятлă-сумлă çынна юлашки çула пĕтĕм ял халăхĕ ăсатрĕ.

ÇИЧЧĔМĔШ ТĔЛПУЛУ

Районти хаçат редакцийĕ хушса янă ĕçсене «Звезда» колхозра пурнăçланă хыççăн эпĕ Элĕке кайма васкама-



В. С. Мальцев, аслă сержант, взвод командирĕн помощникĕ.

рăм. Кунти ырă çынсем кăтартса янипе тӳрĕ çулпа çуранах Ассакасси ялнелле утрăм: унта Перемышль паттăрĕ Ванифатий Степанович Мальцев учитель пурăнать. Манăн унпа курса каласмалла.

Колхоз сачĕ витĕр тухсан, яла илсе çитерекен пĕр пĕчĕк сукмак çине тухрăм. Вăл хĕрлĕ кирпĕчрен лартнă чиркӳ патне илсе пырать. Унăн алăкĕсене пысăк çăрапа питĕрсе илнĕ. Вунтăххăрмĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнчех туса лартнă çак чиркӳ халĕ архитектура палăкĕ шутланать. Эпĕ ăна йĕри-тавра пăхса çаврăнтăм. Ниçта пĕр çын, пĕр чĕрчун курăнмасть. Чиркĕвĕн пĕр кантăкĕ тĕлĕнчи шăтăкра вак укçа асăрхарăм. Апла кунта килсе çӳрекенсем халĕ те пур иккен.

Элĕкелле тухса каймалли урамра, пилĕк кĕтеслĕ пысăк çуртра, Ванифатий Степановичпа унăн мăшăрĕ Ефросиния Михайловна (вăл та учительница) пурăнаççĕ. Сăмах хыççăн сăмах. Чăрăшкассинчи Степан Егорович Мальцевăн тăватă ывăл пулнă: Ванифатий, Варлам, Всеволод тата Геннадий. Вĕсене вĕрентсе кăларса çын тусан, ватăлмалăх кунра хăйне çăмăлрах пуласса ĕмĕтленнĕ. Çавăнпах ачисене аслă пĕлӳ пама тăрăшнă. Хăçан та пулин хăйне ывăлĕсемпе пĕрле вăрçăра тăшмана хирĕç çапăçма тивессе шутламан.

Унăн аслă ывăлĕ Ванифатий 1939 çулта учителе вĕренсе тухать. Виçĕ уйăх çеç ĕçлеме ĕлкĕрет шкулта — çара илсе каяççĕ. Перемышль хулинче вăл 99-мĕш стрелковăй дивизири 206-мĕш стрелковăй полка лекет. Курсантсен шкулĕнче виçĕ уйăх вĕренсен, ăна сержант ятне параççĕ те Спиридон Холод лейтенант взводне минометчиксен отделенийĕн командирĕ туса яраççĕ. Лейтенант та учитель пулнă иккен. Вĕсем туслашаççĕ. В. Мальцев виçĕ уйăх партшкулта вĕренет, çав хушăрах минометчиксемпе политзанятисем иртторет. Вăхăт сис-

месĕрех иртет темелле. Часах, акă, яла тавръ̆нмалли кун та çитĕ. Анчах киле тавръ̆ниччен, Тăван çĕршывăн çапăçса, нумай пăтăрмах тӳссе ирттермелле пулнă иккенха унăн.

Мальцев взводне пехотинецсен батальонне çирĕплетсе параççĕ. Пехотăна пулăшма, ăна хӳтĕлеме ĕнтĕ. Сержант командипе Адам Клименко наводчик кăларса яракан минăсем шăп та лăп тăшман ушкăнĕсем çине ӳке-ӳке çурăлаççĕ. Сĕмсĕрленсе килекен фашистсене минометсемпе 45 миллиметрлă тупăсенчен те татти-сыпписĕр ăшалаççĕ.

Фрицсен речĕсем сайралансах пыраççĕ пулин те, сывă юлнисем пирĕн пехотинецсен малтанхи окопĕсем патнех çитеççĕ. Команда. Боецсем, штыксене малалла тăсса, ура! кăшкăрса, окопсенчен ыткăнса тухаççĕ, контратакăна çĕкленеççĕ. Гитлерăн вилнĕ йыттисене таптаса, юлашкисене Сан шывне хăваласа кĕртеççĕ те каллех хăйсен позицине йышăнаççĕ. Лерен çĕнĕ вăй килет. Ванифатий Мальцев миномечĕ каллех хăй ĕçне тăвать. Контратака. Кăнтăрлаччен çапла пилĕк хутчен.

Акă кĕтмен-туман япала! Совет салтакĕсен тумне тăхăннă çынсем юнашарти ыраш пуссинчен вирхĕнсе тухаççĕ те пирĕннисемпе хутшăнса каяççĕ. Вĕсем çийĕнчех хĕрлĕ боецсемпе командирсем çине сике-сике лараççĕ. Паллă: ултав. Хăрушла тытăçу пуçланать. Кун пек чухне алă айне мĕн лекни пĕтĕмпех кирлĕ: гранати, штыкĕ, кинжалĕ, çĕççи, каски. Çак тытăçура хăй çине миçе нимĕç сике-сике ларнине те, ун чухне юман кĕреш пек çирĕп пулнă Ванифатий Мальцев хăй миçе фашиста вĕлернине те астумасть.

Перемышль хулине контрнаступленипе ирĕке кăларнă хыççăн минометсемпе 45 миллиметрлă тупăсен расчечĕсем тата ответлăрах задани илеççĕ: Сан шывĕ урлă хывнă тимĕр кĕперпе Гитлерăн пĕр салтакне те, пĕр танкне те каçармалла мар.

Мальцевăн миномет расчечĕ пĕр эрне хушши, каялла чакмалла текен приказ пуличченех, историе юлнă çав кĕпере хӳтĕленĕ.

Каярахпа Мальцева разведка взводне куçараççĕ. Боецсен ушкăнĕпе пĕрле ăна, асли туса, «чĕлхе» тытма яраççĕ.

— Юлташсем, асра тытăр: тăшман çинчен штаб валли тĕплĕ сведенисем кирлĕ. Пирĕн «чĕлхе» тытса килмеллех, — асăрхаттарать сержант.

Акă, маскхалатсем тăхăннă разведчиксен ушкăнĕ тăшман хуçаланакан шоссе хĕррине çывхарать. Малта —

Мальцев, ун хыçĕнче — Ивановпа Ковалев, ыттисем. Разведчиксене самантлăха чарса, сержант çапла калать:

— Шоссе çинчи патрульсем, каллĕ-маллĕ утса, пĕрпĕринпе вунă минутран тĕл пулаççĕ. Вĕсене çаклатма пулать — усси çук, штаба кирлĕ сведенисем ĥараймаççĕ. Пирĕн пысăкрах кайăкне тытмалла.

Мотор сасси илтĕнсе каять. Телее тенĕ пек, шоссен икĕ енĕпе те йывăç тĕмĕсем ӳсеççĕ. Мальцев пĕр гранатине сылтăм аллине илет, тепĕрне юнашар хурать. Ыттисем халь тесен халь тăшман çине сиксе ӳкме хатĕр. Машина çывхарсах килет. Хăйпе танлашас умĕн сержант машина умне пĕрремĕш гранатине ывăтать. Кĕрĕс!.. Разведчиксем çавăнтах машина патне ыткăнаççĕ. Аслă офицер çăварне пăкăласа лартаççĕ, ăна йывăç тĕмĕсем хушшине сĕтĕрсе каяççĕ. Ыттисене «леш тĕнчене» янă хыççăн машинăри пĕтĕм документсене илеççĕ. Часах Мальцев ушкăнĕ вăрмана кĕрсе çухалать.

Питех те тĕплĕн хатĕрленсе ирттернĕ çак операцишĕн Мальцев сержанта Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса чыс тăваççĕ.

Каярахпа Ванифатий Мальцев — каллех миномет расчечĕн командирĕ. Вăл Корсунь — Шевченковский, Яссы—Кишинев «хуранĕсене» лекнĕ фашистсене пĕр хĕрхенмесĕр ăшалать; Румыни, Венгри, Чехословаки халăхĕсене фашизм пусмăрĕнчен хăтарассишĕн пынă çапăçусенче те нумай хутчен паттăрлăхпа хăюлăх кăтартать. Унăн вăрçă çулĕ çакăнпа вĕçленмест-ха. Вăл хăйĕн миномечĕпе тӳсмелле мар вĕри çанталăкра Монголин вĕçĕ-хĕррисĕр пушхирĕсем урлă каçать. Нумай хула витĕр тухать. Япони империализмĕн Квантун çарне çĕмĕрсе тăкнă çĕре хутшăнать В. Мальцев, вăрçă çулне Порт-Артура çитсе вĕçлет.

Унăн ашшĕ, Степан Егорович, Мускав хулине хӳтĕлет, Варлам ятлă ывăлĕпе пĕрле Ленинград блокадине аркатать. Варлам çакăнта паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Каярах Всеволод та çарта пулнă.

— Мĕнлерех çын вăл сирĕн ялти Ванифатий Степанович Мальцев? — тесе ыйтсан, ассакассисем çапла хуравлаççĕ:

— Иртнĕ вăрçă ветеранĕ, Перемышль паттăрĕ, чи ăста лектор тата агитатор. Район хаçатне тăтăшах çырса тăрать.

САККĂРМĔШ ТĔЛПУЛУ

Алексей Ксенофонтович Пыркинпа эпĕ малтанхи хут Элĕк райĕстăвкомĕнче, хăй ĕçлекен пӳлĕмре курса калаçрăм. Утмăл патне çывхаракан типшĕмрех вăтам пӳллĕ çын вăл, районти гражданла оборона штабĕн начальникĕ. Иртнĕ вăрçăра пысăк опыт туянни ăна халĕ хăйне шанса панă ответлă ĕçе йĕркеллĕ туса пыма пулăшать.

Ача чухне эпĕ вилĕмсĕр «Арçури» баллада авторĕ М. Федоров 14 çула çитсен тин пĕрремĕш класа вĕренме кĕнине пĕлсен, тĕлĕнсех кайнăччĕ. «14 çулта пĕрремĕш класа! Ку вăл XIX ĕмĕрте пулнă çав», — тенĕччĕ ун чухне. Йăнăшнă эпĕ. Ун пек тĕслĕхсем пирĕн вăхăтра та пулнă иккен. Татмăш ялĕнче чухăн çемьере çуралнă Элекçей шăпи те çав майлах пулнă. 14 çула çитсен тин вăл Вутланти пуçламăш шкулăн пĕрремĕш класне мар, тӳрех иккĕмĕш класа вĕренме кайнă. Анна Константиновна, унăн малтанхи учительници, ăна ăшшăн кĕтсе илнĕ. Элекçей класран тухнă хушăра ыттисене хытă асăрхаттарнă: кулас-йĕкĕлтес таврашĕ ан пултăр!

Элекçей вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пынă. Каччă пулса çитнĕ çын Ассакассинчи тулли мар вăтам шкула вĕренме кайнă. Ун хыççăн Элĕкре сакăр çул пĕтернĕ те Татмăш ял Совет ĕçтăвкомĕнче секретарьте ĕçлеме пуçланă. Анчах кунта нумаях ĕçлеймест: 1939 çулта ăна çара илеççĕ. Малтан Житомир облаçĕнчи Бердичев хули, унтан Львов, кайран — Перемышль.

Алексей Пыркина чаçе çитсенех вĕренме яраççĕ. Вăл 52 миллиметрлă минометăн наводчикĕ пулса тăрать. Анчах июнĕн 22-мĕшĕнче вăл фашистсене минометпа мар, çыран хĕрринчен инçетрех те мар вырнаçнă ДОТра кĕтсе илет. Курсра чухне вĕсене пулеметран пеме те вĕрентнĕ. Шыв урлă каçакан фашистсене пирĕннисем винтовкăсенчен переççĕ, патнерех çывхарнисем çине гранатăсем ывăтаççĕ, çырана тухма хăтланакансене штыкпа тиреççĕ.

Алексей Пыркин гашетка çине пусать те фашистсене кĕске черетсемпе айккинчен çунтарать. Йывăр самантсенче пулемет кĕпçи хĕрсе кайичченех шатăртаттарать вăл. Иккĕмĕш номерĕ пулемет лентине аран майлаштарса тăма ĕлкĕрет.

ДОТра, икĕ пулемет та пĕр тупă патĕнче, Пыркин пĕччен пулман. Асли — Чаплин кĕçĕн лейтенант.

Тепĕр кунне фашистсене каялла хăваласа яраççĕ. Çак

çапăçура пирĕн боецсемпе командирсем тăшманпа хире-хирĕç тăрса кĕрешеççĕ. Пыркинăн сулахай фланга пытанса ларнă «максимки» çаплах хăй ĕçне тăвать: шăлать те шăлать тăшмана. Ун çине нимĕçсем тупăсенчен тӳрĕ наводкăпа переççĕ, пулемет шăпланнă вăхăтра: тинех пĕтрĕ тесе шутлаççĕ, анчах «вилнĕ» «максимка» каллех чĕрĕлет. Çапла пĕр эрне хушши.

Юлашки икĕ талăкра çăвара пĕр тĕпренчĕк яман. Çĕрле, тавралăх тĕттĕмленсен, иккĕмĕш номерсем Сан хĕррине упаленсе кайса, ик-виçĕ хутчен каскăпа шыв илсе килеççĕ — çавă çеç. Шывне хăйсем те ĕçеççĕ, унпах пулеметсене те «апатлантараççĕ»...

Çапăçусемпе чакса пынă чухне Винница хули патĕнче Алексей Ксенофонтович йывăр аманнă. Тăшман пули, мăйран кĕрсе, янахран тухса кайнă, тăватă шăла ӳкерсе-çĕмĕрсе хăварнă. Ана Белая Церковь хулине илсе çитернĕ.

Çак вăхăтра ку хулара суранланнисен шучĕ калама çук пысăк пулнă. Госпитальсене шăнăçманнине пула, вĕсене чиркĕве, уйрăм çуртсене вырнаçтарнă. Акă, хула çине нимĕç самолечĕсем вĕçсе килни курăнса кайнă. Çăмăлрах суранлисем, чиркӳ çине бомбăсем пăрахмĕçха, турăран хăрĕç тесе, пурте унта кĕрсе пытанма тăрăшнă. Анчах фашистсем тытса пыракан хура хĕреслĕ самолетсем тӳрех чиркӳ тĕлне вĕçсе çитеççĕ те таттисыпписĕр бомба тăкма пуçлаççĕ.

— Кунта мĕнле хăрушла ĕç пулса иртнине сăмахпа каласа пама çук. Ана çавăн чухне ăнсăртран чĕрĕ юлнă çынсем çеç пĕлеççĕ. Алли-ури татăлнă, пыршисем урайне тухса ӳкнĕ, кăкăрне е çурăмне снаряд ванчăкĕ çĕмĕрнĕ, суранĕсенчен юн юхтарса выртакан, хӳтлĕх шыраса кĕнĕ салтаксемпе командирсем çине чиркĕвĕн чул стенисем ишĕле-ишĕле анаççĕ. Çын ӳчĕсемпе кирпĕч кӳмерккисем хутшăнса кайнă вырăна бомбăсем ӳксе çурăлаççĕ. Пурте пĕрле пăтрашăнса-хутшăнса сывлăша çĕкленеççĕ, унтан, каялла ӳксе, нимпе танлаштармалла мар асар-писер купа пулаççĕ. Çын ӳчĕ-тирĕ, атти-пушмакĕ, кирпĕчĕ-çĕрĕ йăлтах хутăшса кайнă. Йывăр аманнисем чуна пырса тивмелле ахлатаççĕ, — аса илет Алексей Ксенофонтович.

Пыркин, хӳтĕрех вырăнта пулнă пулин те, çакăнта тепĕр хут суранланать. Сипленнĕ хыççăн Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи 6-мĕш армие лекет. Кунта тăшманпа Саламатов майор чаçĕнче çапăçать. Донбасри Ворошиловск, Каменец хулисем çывăхĕнчи çапăçусене хутшă-

нать, унтан Кăнтăр фронтĕнче, Хура тинĕс ушкăнĕнчи А. А. Гречко ертсе пыракан армире пулать.

Пыркина 1943 çулхи июльте Мускава вĕренме яраççĕ. Часах вăл 216 артиллери полкĕнче, зенит туппин командирĕ пулса, Гомель хулине çитет, Белоруссие ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусене хутшăнать. Унăн кăкăрĕ çинче II степень Отечествăллă вăрçă орденĕ йăлкăшма пуçлать. Минск хулине ирĕке кăларнă чухне вăл 76 миллиметрлă тупă командирĕ. Çакăнта харсăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Алексей Пыркин «Паттăрлăхшăн» медаль илме тивĕç пулать. Унăн хăйне командовани çирĕм хутчен ытла тав тунине çирĕплетсе паракан документсем упранаççĕ.

ТАХХАРМĔШ ТĔЛПУЛУ

Элĕкрен çичĕ çухрăмри Тени ялне юр ларас умĕн, кĕркунне, çитрĕм. Колхоз правленийĕ, пĕлетĕп-ха, çӳлте, ял хĕрринче вырнаçнă. Çитрĕм. «Прогресс» колхоз ĕçченĕсем тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртнĕ. Государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç памалли плансене ирттерсе тултарнă. Ку мана савăнтарчĕ.

Колхоз председателĕ пулмарĕ те — эпĕ кунти çын семпе паллашрăм. Вĕсем хушшинче хам лайăх пĕлекен ватă çын Афанасий Васильевич Иванюк та пурччĕ.

— Эсир Роман Федотович Федотов патне килнĕ пулсан, сире ертсех каям. Эпир ылмаш пурăнатпăр, — терĕ вăл.

Тухрăмăр. Вăл-ку çинчен калаçса пыратпăр. Икĕ хутлă шкул çурчĕ умĕнчен иртсе пынă чухне Иванюк сасартăк чарăнчĕ те çапла ыйтрĕ:

— Эсир çак шкулăн историне пĕлетĕр-и?

— Çук. Чиркӳрен тунăскер пулмалла, — тавăртăм эпĕ.

— Тĕрĕс. Вăтăрмĕш çулччен чиркӳ пулнă унта. Вăхăтăр пур-и? Айтăр, малтан ман пата кĕрер. Эпĕ сире пĕр тĕлĕнтермĕш япала каласа кăтартатăп. Шăпах çак чиркӳпе унăн пупĕ çинчен. Çав ĕçе çамрăк Роман та хутшăнчĕ. Тен, хăçан та пулин пичетлесе кăларăн.

Эпĕ, Роман пирки урăх çын мĕн каласа пани маншăн тата кăсăкрах тесе, килĕшрĕм.

Вырăсла хапхаран хĕçтимĕр витнĕ пысăк çурта кĕтĕмĕр. Ăшчикĕ хулари чаплă хваттерсенчен пĕрре те кая мар. Чечеклĕ пусма хупăлча тăхăнтартнă диван çине

вырнаçса лартăмăр. Афанасий Васильевич — 1950 çултанпа парти членĕ. 1931—1933 çулсенчех действительнăй службăра тăнă, каярах вăрçăн пĕтĕм вăрăм çулне утса тухнă, орденсемпе медальсем илме тивĕç пулнă, çирĕм çул хушши колхоз председателĕнче ĕçленĕ. Кунашкал çынпа калаçса ларма чăнах та кăмăллă.

— Çамрăк чухне эпĕ чылай çулсем хушши ялти комсомол организацине ертсе пытăм. Тĕрĕссипе, ăна йĕркелесе яраканĕ те хамах пулнă. Вăт, вăтăрмĕш çулсем çитсе перĕнчĕç. Колхоз йĕркелерĕмĕр. Комсомол йышĕ те ӳсрĕ. Пухусене ирттерме вара вырăн çук. Пуçа шухăш пырса кĕчĕ — чиркĕве хуптарса, хамăр алла ярса илмелле мар-и? Çывăх юлташсене пуçтартăм та хам шухăша пĕлтертĕм. Роман Федотов та кунтах. Комсомол ретне кĕме çулĕ çитеймен пулсан та, ман таврах çӳретчĕ вăл. Чиркӳ картишĕнчи пысăк мар çуртра пурăнакан хуралçă патне кайрăмăр. Шăпах хура çăкăрпа çĕрулми çисе ларать. Пупа чĕнсе килме ыйтрăмăр. Итлерĕ старик. Тепĕр вунă минутран Якку атте пĕчченех килчĕ. Вăрăм çӳçĕ çинчен хăлхасăр çаврака çĕлĕк тăхăннă. Сайрарах хура сухалĕ, шĕвĕрĕлсе, кăкăрĕ çинех анать. Пурте ура çине тăтăмăр, çĕлĕксене хывса пуç тайрăмăр.

Афанасий Васильевич пуппа мĕн-мĕн калаçнине питĕ вăрăм та тĕплĕ каласа пачĕ. Юлашкинчен пупĕ те:

— Эпĕ ку ремеслана хам ирĕкпе мар, атте ятланипе кăна вĕреннĕ, — тесе хунă.

Çамрăк Иванюк хăюлансах ĕнентернĕ:

— Ыран аслă çăварни кунĕ. Чиркӳре эпир те пулатпăр. Эпир паян мĕн хушнă пек тусан, Наркомпрос сире хăвăр хăш шкула ĕçлеме каяс тетĕр, çавăнта ярать. Çĕнĕ вырăнта эсир халиччен пуп пулса ĕçлени çинчен никам та пĕлмĕ.

Тепĕр кунне чиркӳ тăрринчи чансен хăватлă сасси пĕтĕм таврана сарăлнă, халăха уяв кĕллине пухăнма йыхăрнă. Чиркӳ халăхпа тулсах пынă: шурă çӳçлĕ стариксем, хура тутăр çыхнă карчăксем, вăтам çулхисем, яшсемпе хĕрсем, ачи-пăчи.

Пуп тăмалли вырăна çӳçсĕр, сухалсăр Якку атте пĕр-пĕччен тухсан, чиркӳри халăх шанкĕ хытса тăнă. Вăл хăй сăмахне çапла пуçланă:

— Хаклă юлташсем, тăвансем, ман прихутри пĕтĕм халăх, каçарăр эсир мана. Вăхăт çитрĕ, халĕ эпĕ сире хамăн айăпсене йăлтах калатăп. Ку таранччен эпĕ сире суйса та улталаса, иртĕнсе пурăнтăм. Текех капла пу-

рăнма пултараймастăп. Малашне ку чиркӳре халăх клубĕ пултăр. Эсир кунта кĕлтума мар, кĕнекесем, хаçат-журнал вулама пуçтарăнăр, çамрăксем юрă юрлама, ташă ташлама килччĕр. Паянтан эпĕ священник мар. Çакă çутă тĕнчере пĕр тĕрĕс пуп та çук. Акă, хам мĕн каланине çирĕплетсе, çапла тăватăп... — Якку атте малтан мăйĕнчен çакнă пысăк хĕресе, унтан çийĕнчи рясине хывса, урайне ывăтнă. — Текех ку чиркӳре эпĕ хуçа мар. Унăн хуçисем комсомолецсем пулаççĕ.

Чиркӳри халăх вĕллери хурт пек сĕрлесе-кĕрлесе кайнă. Ваттисем кăшкăрма тытăннă:

— Тытăр Якку аттене!

— Тытас! Шуйттан ернĕ ăна!

— Чиркӳ хĕресĕнчен çакса вĕлерес!

— Вут çине пăрахса çунтарас!

Тепĕр çур сехетрен чиркӳ пуш-пушă тăрса юлнă.

Уйăх иртсен, Тение парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Г. В. Васильев, райĕçтăвком председателĕ М. П. Павлов, комсомол работникĕсем, район центрĕнчи артистсем килсе çитнĕ. Чиркӳ каллех халăхпа тулнă. Ĕлĕкрех чиркӳ хорĕ юрланă вырăнтан «Интернационал» кĕвви янраса кайнă.

— Халиччен чиркĕве турра пуççапма пухăнакан халăх халĕ лекцисемпе докладсем итлеме, концертсемпе кино курма, ташласа, юрласа савăнма пуçтарăна пуçларĕ. Эпир çĕнтертĕмĕр. Пирĕн хушăра Роман Федотов та пулчĕ. Часах эпир ăна комсомол ретне илтĕмĕр, — пĕлтерчĕ Афанасий Васильевич. — Каярах ку чиркӳре колхоз çамрăкĕсен шкулĕ, тулли мар вăтам шкул пулчĕ, халĕ сакăр çул вĕренмелли шкул. Часах кунта вăтам шкул уçмалла, теççĕ. Çав вăхăта колхоз вĕренекенсем валли кирпĕчрен çĕнĕ çурт лартса парать.

— Афанасий Васильевич, çӳлтен кăтарту памасăрах, хăвăр тĕллĕнех çапла хăтланма хăюлăх çитертĕр-и?

— А-а, çӳлтен кăтарту парасса кĕт-ха. Мухтарĕç пире ун чух.

Иванюкпа каласса ларма шутсăр кăсăкчĕ. Нимĕн те суймастчĕ вăл. Фактсене илемлетсе каласа пама ăстаччĕ. Эпĕ каяс умĕн çапла пĕлтерчĕ:

— Роман Федотович — шутсăр лайăх çын. Ĕçлеме юратать. Вăл пĕлмен ĕç çук та пуль. Аллисем ылтăн. Вăрçăра нумай тертленнĕ вара.

...Эпир Роман Федотовичпа, ватă салтакпа, чылайччен калаçса лартăмăр, çар документĕсемпе паллашрăмăр.

— Авалтан килекен йăлапа пире, ялти тăватă çамрăка, 1939 çулхи сентябрьте пĕтĕм ялйыш ăсатса ячĕ. Районти çар комиссариатне вара ытти ялсенчен аллă ытла çын пуçтарăннă. Малтан Канаша илсе çитерчĕç. Кунта пулас салтаксен шучĕ те çук. Пĕтĕм республикăран пухăннă, ахăртнех. Виççĕмĕш кунне вакунсене лартрĕç те анăçалла илсе кайрĕç. Бердичев хулинче антарчĕç пире, — каласа парать Роман Федотович.

Кунта çамрăксене çарти йĕркесене вĕрентеççĕ. Каярахпа салтаксем Тăван çĕршыв умĕнче тупа тăваççĕ, уншăн, кирлĕ пулсан, юлашки юн тумламĕ юлмичченех çапăçма сăмах параççĕ, тупа туни айне алă пусаççĕ.

Федотов стрелок Хĕвеланăç Украинăна ирĕке кăларассишĕн пархатарлă похода хутшăнать. Çакăн хыççăн унăн чаçĕ Перемышль хулине çул тытать.

— Вăрçă пуçланас умĕн пирĕн полка Перемышльтен кăнтăрарах, пĕр пĕчĕк вăрмана, çуллахи лагере илсе кайрĕç. Çав çулхине çанталăк хĕвеллĕ те шăрăх тăчĕ. Лагерьте дисциплина çирĕпчĕ. Çар ĕçне тăрăшсах вĕрентетчĕç: ара, юнашарах юхса выртакан Сан шывĕн тепĕр енче фашистсем тăраççĕ-çке-ха.

Роман Федотович вăрçăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш кунĕсенче мĕн-мĕн пулса иртнине каласа парать. Вăл эпир маларах çырса кăтартнă фактсемпе событисене асăнать. Унăн сăмахĕ йăлтах тĕрĕс.

Михайлов сержант отделенийĕнче пулнă Федотов. Çак отделение хулан кăнтăр енне, чикĕрен пурĕ те 60—70 метрта çеç вырнаçнă ДОТ паттăрĕсене пулăшма янă. Вĕсене приказ панă: снарядсемпе пулемет лентисем тата патронсем çителĕклĕ илсе килмелле.

Сан леш енчи нимĕçсем ку ДОТ çине çаплах татти-сыпписĕр тенĕ пек персе тăраççĕ. Кайран шутласа пăхнă тăрăх, фашистсем çак тĕле сахалтан та 500 снаряд кăларса янă, анчах ДОТ çаплах «вилмен», самантлăха шăпăртланнă та тăшмансем «тинех пĕтрĕç большевиксем» тесе лаштах сывланă вăхăтра ДОТри тупăпа пулеметсем каллех «чĕрĕлнĕ». Михайлов сержант ертсе пынипе, Федотовпа унăн юлташĕсем çав паттăррăн çапăçакан ДОТри çынсем патне çар хатĕрĕсем вутпа çулăм витĕр вĕçĕмсĕр илсе пырса тăнă.

Ак тамаша! Федотов ДОТри çынсем çине тинкерсе пăхать те — тĕлĕнсе хытсах каять!

— Элекçей, ара, эсĕ мар-и ку?! — Роман, пĕр савăнса, пĕр тĕлĕнсе, пулемет наводчикĕ патне пырать.

— Эпĕ, Роман, — сиксе тăрать Пыркин. Çара пĕрле

тухса килнĕ пĕр район çыннисем пĕр-пĕрне ыталаса илеççĕ. — Эсĕ мĕнле майпа кунта килсе лекрĕн?

— Сире пулăшма, нимĕçсем валли «кучченеçсем» хатĕрлесе пама ячĕç, — тавăрать Роман Федотов.

— Апла, Роман, «кучченеçне» нумайрах хатĕрле. Эпир вĕсене тăраничченех çитерĕпĕр, — хавхалантарать янташ.

— Ан иккĕлен, Элекçей, чăваш ятне ямăпăр. Мĕнле, ялтан çырусем илетĕн-и?

— Шăпах шăматкун илнĕччĕ. Ответне канмалли кун çырăп тенĕччĕ те, пулмарĕ. Акă, фашистсене хуларан хăваласа кăларатпăр та, хĕрлĕ кĕтесри сĕтел хушшине ларсах çыратăп. Ман пата пырса çӳре. Çырусене те пĕрлех çырăпăр, — хуравлать Пыркин.

— Тавах, Элекçей. Çапла пултăрччĕ. Пирĕн «кучченеçсем» патне васкамалла. Хĕрхенсе ан тăр вĕсене. Çителĕклех пулаççĕ, — юлташне алă памасăрах каялла васкать Роман.

Пыркин та, Федотов та ку вăрçă мĕн чула тăсăласса, хăйсене ăçта-ăçта илсе çитерессе пĕлмен çав ун чухне. Нимĕç эшкерĕсене Перемышльтен тасататпăр та — вăрçи те пĕтĕ тесе шутланă.

...Днепр çывăхĕнче Романсен батальонĕ ункăна лекет. Кунĕпе те çĕрĕпе çапăçнă вĕсем тăшманпа. Сурансланнисем тыткăна лекеççĕ. Вĕсен шутĕнче — Федотов та: йывăр аманнă. Пăртак сывалсанах, Романа Люблинри лагере илсе çитереççĕ.

— Пире илсе пынă чухне кунти лагерьте тĕрлĕ государство çыннисем хĕрĕх пин шутланнă. Нумайăшне, уйрăмах вăйсăрланса çитнисене, крематорире çунтаратчĕç, — аса илет Федотов. Вăл ку лагерьте вăрах ларман. Сăртлă-туллă вырăна чул кăларма илсе кайсан, вĕсем, унă çын, тараççĕ. Ушкăнпа кайма юрамасть: çийĕнчех асăрхама пултараççĕ. Вара икшерĕн-икшерĕн, юлташ пултăр тесе ĕнтĕ, çĕрле хĕвелтухăçнелле утаççĕ.

Роман юлташĕ — Çĕпĕр çынни, çирĕп сывлăхлă, кĕрнеклĕ Егор Краснов. Нумай терт те инкек, нуша тӳсеççĕ вĕсем. Партизансене шыраççĕ, вĕсемпе пĕрлешме тăрăшаççĕ. Пĕррехинче, вăрман сукмакĕпе тĕлсĕр-йĕрсĕр тенĕ пек пынă чухне, вĕсен умне автоматлă икĕ çын тухса тăраççĕ.

— Стойте, руки вверх! — хушаççĕ вĕсем.

Вырăс сăмахĕсене илтсен, кусем савăнсах каяççĕ, тинех хамăрăннисене тупрăмăр иккен теççĕ. Анчах хĕпĕртеме иртерех пулнă-ха.

Вĕсене партизансен штабне илсе çитереççĕ. Штаб начальникĕ тĕпчеме пуçлать. Кусем йăлтах тĕрĕсне каласа параççĕ, анчах сăмаха документсемпе çирĕплетсе параймаççĕ. Штаб начальникĕ пысăк опытлă офицер пулнă. Пĕррехинче, отряда йĕркеленĕ чухнех, штаба çакнашкал икĕ çын килнĕ. Иккĕшин çинче те селĕм тумтир. Эпир çав-çав чăсран, çав-çав лагерьсенче пулнă, аран-аран тарса ӳкрĕмĕр, тархасшăн, хăвăр отряда илĕр тесе тархасласа ççĕ. Штаб начальникĕ вĕсене кăмăлласах йышăнать. Лешсем часах шанăçа кĕреççĕ, задание кайсан, лайăх хĕçпăшалланнă нимĕçсен взводне ертсе килеççĕ, партизансен отрядне чутах аркатса тăкмаççĕ.

Кам пĕлет, тен, кусем те, Федотовпа Краснов, çавнашкал йышшисемех мар-и?

— Каçарăр та, эпĕ сире, отряда иличчен, задани паратăп. Эсир иксĕр те хĕçпăшалсăр килнĕ. Пирĕн отрядра та ытлашши çук. Малтан хăвăр валли хăвăрах хĕçпăшал, лайăх çипуç тупăр. Вара курăнать унта. Халĕ апатланăр. Кайран сире ăсатса яраççĕ, — тет штаб начальникĕ.

Авă мĕнле иккен пурнăç. Тем тĕрлĕ те тĕрĕслет çынна. Тыткăнран тарма та йывăр, партизан пулма та çăмăл мар.

Икĕ юлташа, Çĕпĕр вырăсĕпе чăваш каччине, паçăрхи автоматчиксемех ăсатаççĕ.

— Ырă канаш парсамăр пире. Ку приказа ăçта, мĕнле пурнăçлама пулать? — ыйтать Краснов партизансенчен.

— Фашистсем çук, полицайсем çеç хуçаланакан пĕрпĕр ялта ансатрах. Унашкал ял пур ку таврара, анчах инçетре, — тавăрать аслăраххи.

— Тархасшăн, калăр, ăçта çав ял?

Партизан тĕплĕ ăнлантарса парать, ăнăçлăх сунать.

Федотовпа Краснов çав ял патне çутăлнă тĕле çитеççĕ. Ялĕ çырма хĕррине, лапама, вырнаçнă. Меллĕ позици йышăнмалла — вĕсене никам та ан куртăр, хăйсем вара йăлтах сăнама пултарччăр. Вĕсем пĕр пахчари утă капанĕ çине вырнаçаççĕ. Кунта юнашарах мунча та, çăл та пур. Ял варринчи пысăк çурт ыттисенчен уйрăм ларать. Пуçламăш шкул çурчĕ пулма кирлĕ. Утăпа витĕннĕ «таркăнсем» тавралăха тимлĕн сăнаççĕ. Урамсенче (пурĕ те икĕ урам çеç) çынсем пăч-пач çеç курăнкалаççĕ. Хĕвел çӳлтен çӳле хăпарать. Акă, шкул пулма кирлĕ текен çуртран икĕ çын тухрĕ. Хул урлă автоматсем çакнă. Хăйсем гражданла тумпах. Тем каласа чи-

каркка чĕртсе ячĕç те урампа тăвалла уттарчĕç, часах пĕр çурта кĕрсе кайрĕç. Кĕтрĕç-кĕтрĕç сăнакансем, çук, каялла тухмарĕç лешсем. Акă, шкул çуртĕнчен тепри тухрĕ. Ку та автомат çакнă. Каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ те каялла кĕрсе кайрĕ.

Кăнтăрлапа кил хушшинчен пахчана хĕрарăм тухрĕ. Кĕвентепе. Икĕ вĕçне витресем çакнă. Çăл патне шыва анать. Мĕн тумалла? Пăшăлтатса илчĕç: «Каласар-и?»— «Каласар».

Хăмăр тутăрне çамки çине антарса çыхнă хĕрĕхсенчи хĕрарăм витрисене çăл çумĕнчи сак çине лартрĕ. Пĕр витрине шалча çекĕлĕнчен çаклатрĕ, çăла ячĕ, часах туп-тулли шыв кăларса, тепĕр витрине ячĕ. Икĕ витрине те тултарса сак çине лартсан, çекĕллĕ шалчине çăл çумне таянтарса хучĕ, кайма хатĕрленчĕ. Кусем пĕр-пĕрне тĕксе илчĕç.

— Кинеми, э, кинеми, эсĕ пиртен ан хăра, — терĕ шăппăн Егор.

Хĕрарăм шартах сикрĕ, икĕ чавсипе кăкăрне хĕстерчĕ.

— Пире сиртен пулăшу кирлĕ. Эпир усал çынсем мар. Сирĕн ялта фашистсем пур-и? — çаплах йăваш сасăпа ыйтрĕ Çĕпĕр çынни.

— Полицайсем кăна. Эсир мунчана кĕрсе ларăр. Эпĕ сирĕн пата ывăла яратăп. Вăл лайăх пĕлет. Ан хăрăр. Ним чул та ан хăрăр. Полицайсем кунта килмеççĕ. Вĕсем ял тăрăх ĕçкĕ шыраса çӳреççĕ. — Хĕрарăм, кĕвентинчен тулли витресене çакса, килнелле уттарчĕ.

Часах вунă-вуникĕ çулхи шап-шурă çӳçлĕ ача вĕçтерсе тухрĕ, утă капанĕ патнелле чупрĕ. Аллинче çыхă.

— Анăр. Ан хăрăр. Кунта эпĕ хуçа, — терĕ çакскер. Мунчана кĕрсе ларчĕç.

— Эсир выçă пуль-ха. Мейĕр, малтан апат çийĕр. — Ача, çыххине салтса, çăкăр чĕллисемпе сысна çăвĕ татăкĕсем кăларса хучĕ. — Сирĕн хĕçпăшал та çук, çипуç та начар. Эсир партизансем мар-им? — тĕлĕнчĕ ача.

— Эсĕ мĕн ятлă-ха?

— Володя.

— Вăт, Володя, итле. Пирĕн ĕçсем начар. Лагерьтен тартăмăр, партизансене те тупрăмăр. Анчах пире йышăнмарĕç. Хăвăр валли хĕçпăшалпа çипуç тупса килсен тин йышăнатпăр терĕç, — пĕлтерчĕ Краснов.

— Тĕрĕс тунă партизансем. Аçта тăрать вĕсен отрячĕ?

Красновпа Федотов пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç: те калама юрать ку ачана, те çук?

— Ан хăрăр. Авă çав енчи, кунтан вуникĕ çухрăмри отряда лекнĕ эсир. Унта çирĕп дисциплина. Манăн атте шăпах çавăнта. Штаб начальникне те паллатăп. Кĕçĕр ĕçне тăвăпăр та, хамах ертсе кайăп сире. Манăн унта рапорт памалла. Эсир çийĕр-ха, çийĕр.

Вырăспа чăваш тĕлĕнсех кайрĕç. Апла хăйсене ăсатса янă партизан Володя ашшĕ пулмарĕ-ши?

— Каçчен кунтах выртса канăр. Эпĕ халь унти ларутăрăва кайса тĕрĕслетĕп. Нимрен те, никамран та ан хăрăр, — терĕ Володя, унтан ним пулман пекех тухса вĕçтерчĕ.

Каçпа Володя апат-çимĕç тултарнă туп-тулли кутамкка, пĕр пистолет тата икĕ шертешнĕк илсе килчĕ.

— Операцие 24 ноль-ноль пуçлатпăр, — терĕ.

— Володя, ытла çăмăл калатăн-çке. Мĕнле операци? Анлантар пире, — тĕлĕннĕ пек пулса ыйтрĕ Краснов.

— Эсир ман командăна итлĕр. Каларăм-çке сире кунта эпĕ хуçа тесе, — касса татрĕ Володя. — Йăлтах хатĕр. Ĕçне çеç тумалла. Икĕ полицайĕ ӳсĕр выртаççĕ. Акă сире иксĕре икĕ шертешнĕк. Вĕсемпе пуçран çапса полицайсене тирпейлетĕр те çипуçне хывса тăхăнатăр, автомачĕсене илетĕр. Кайран, май пулсан, тепĕр ĕçне те тăвăпăр.

Çур çĕр çитрĕ. Володя кусене паçăр икĕ полицай кĕрсе кайнă çурта илсе çитерчĕ.

— Хăвăртрах. Хĕрарăмсене эпĕ кайма приказ панă, — пăшăлтатса каларĕ партизан ачи.

Кĕчĕç. Иккĕшĕ те ним пĕлми çывăраççĕ. Аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕмпе çеç. Апла салтăнтарса тăрасси те çук. Йăлтах Володя каланă пек пулчĕ.

Тухрĕç. Шкул çурчĕ патне çывхарчĕç.

— Эсир кунта юлăр. Эпĕ тĕрĕслем-ха. — Володя чӳрече патне пĕшкĕнсе пычĕ, пăхрĕ, каялла çаврăнчĕ. — Эпĕ алăка шаккаса унти дежурнăя кăларатăп. Эсир ăна тухнă-тухманах пуçран. Кайрăмăр.

Дежурнăя та тирпейлерĕç. Унăн автоматне тата сĕтелти документсене илсе, виçĕ тус çухалчĕç.

— Çапла, партизан ывăлĕ Володя пулăшнипе Егор Красновпа иксĕмĕр чăн-чăн совет партизанĕсем пулса тăтăмăр,— аса илет Роман Федотович.

Тăшман тылĕнче сахал мар сăтăрла ĕçсем тăваççĕ вĕсем. Хĕрлĕ Çарпа пĕрлешсен, Тăван çĕршыв умĕнче тепĕр хут тупа тăваççĕ, каллех нумай çапăçусенче пуласçĕ.

Роман Федотович яла 1946 çулхи май уйăхĕнче тав-

рӑннӑ та тӳрех колхозра ӗçлеме пуçланӑ. Ытларах вӑл строительство ӗçӗсене хутшӑннӑ. Ватӑ салтака ялйыш 1987 çулта юлашки çула ӑсатрӗ.

ВУННАМЁШ ТЁЛПУЛУ

Мӑн Вылӑ ялне эпӗ Шураç енчен кайрӑм. Масар çумӗпе иртсе, пӗчӗкçеç вӑрмана кӗтӗм. Сукмак мана чылаях çӳллӗ, самаях чӑнкӑ сӑрт çамкине илсе тухрӗ. Кунтан Мӑн Вылӑ ал тупанӗ çинчи пекех курӑнать. Чӑнах та пысӑк иккен ку ял. Çурчӗсемпе хуралчӗсем тӑррине пурне те тенӗ пекех хӗрлӗ сӑрӑллӑ хӗçтимӗрпе витнӗ. Кашнийӗнех сад. Ялӑн тепӗр вӗçӗнче, хӗвеланӑç енче, икӗ хутлӑ çурт курӑнать. Ахӑртнех, шкул çурчӗ пулмалла. Ку ялти шкул икӗ хутлӑ тенине илтнӗччӗ эпӗ.

Сӑрт çамкинчен пӑрӑнакан сукмакпа анса, ял çумӗпе юхса выртакан пысӑк мар çырма хӗррине çитрӗм. Ун урлӑ çӗрӗшнӗ хӑмасем тӑрӑх сиккелесе каçса, яла кӗтӗм. Тӑкӑрлӑк хӗрринчи садра пӗр ватӑ çын кӑштӑртатать.

— Э-э, Арсений Ефимович-и? Акӑ, çак тӑкӑрлӑкпа кайса, урам урлӑ каçатӑн та тепӗр урама тухатӑн. Унтан сулахая пӑрӑнатӑн. Вара сылтӑмалла тепӗр тӑкӑрлӑк кӗрсе каять. Шӑпах çавӑнта, урампа тӑкӑрлӑк кӗтесӗнче, пурӑнать вӑл. Унӑн сачӗ самай. Паян канмалли те, ман пекех садра айланать пуль-ха. Ӗçчен, тирпейлӗ, ялта ятлӑ-сумлӑ учитель вӑл. Темле çӑмӑлпаччӗ? — старик, те кӑштах канас, те палламан çынпа пӑртак та пулин калаçас тесе, манпа решетке патне пырсах пуплерӗ.

Вӑл тӗрӗс каларӗ. Çавӑн хыççӑн никамран пӗр сӑмах ыйтмасӑрах Арсений Ефимович килне тӗп-тӗрӗс пырса кӗтӗм. Кил хуçи, чӑн та, садра ӗçлет. Çӗрӗ тулӑх. Тӳп-тӳрӗ йӑрансем çинче хӑяр, кишӗр, помидор, сухан, çарӑк вӑй илсе çитӗнеççӗ. Пур çӗрте те ӗçчен алӑсен йӗрӗ яр-уççӑнах курӑнать. Пахчан тепӗр енче, йывӑçсем хыçӗнче, шурӑ мунча.

Вӑтам пӳллӗ, самаях типшӗм, çивӗч хура куçлӑ, шурӑ çӳçлӗ кил хуçи мана ӑшшӑн кӗтсе илчӗ. Эпӗ ун патне маларах çыру çырса янӑччӗ те, вӑл мана ыйтса-туса тӑмасӑрах палларӗ.

— Çуранах килтӗр-и? — ыйтрӗ вӑл, кӑмӑллӑн алӑ парса.

— Çуранах.



А. Е. Ефимов, аслă сержант, штаб писарĕ.

— Апла пӳрте кĕрсе пĕрер курка квас ĕçер-ха. Эпĕ хам та самаях ĕшентĕм.— Перемышлĕн тепĕр паттăрĕ, Арсений Ефимович Ефимов, мана пӳрте ертсе кĕрсе кайрĕ.

Пӳрт ăшчикки тирпейлĕ. Пурте йĕркеллĕ, пур япала та вырăнта.

Хĕрĕх-аллă çул каяллах пулса иртнĕ ĕçсене те паянхи пекех астăвакан тăнлă-пуçлă, сăпайлă çынпа калаçса ларма ытла та кăмăллă.

Арсений Ефимович 1933—1936 çулсенче тăван ялĕнче учительте ĕçленĕ иккен. 1936—1938 çулсенче Шупашкарти учительсен институтĕнче вĕреннĕ. Ун хыççăн вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Хĕрлĕ Çара ăна 1939 çулхи ноябрьте илнĕ. 1940 çулта вăл Перемышльте тăракан 99-мĕш стрелковăй дивизин 1-мĕш полкне лекет. Кунта полк шкулĕнчен вĕренсе тухать, кĕçĕн сержант званине илет. Ăна 1-мĕш стрелковăй полкри боепитани уйрăмĕн аслă писарĕ туса хураççĕ.

1941 çулта, вăрçă пуçланас умĕн, 1-мĕш стрелковăй полк Перемышль хулинчен кăнтăралла, Боратычи ялĕ çывăхĕнчи вăрманта лагерьте тăнă. Полк командирĕ Кутейкин майор, штаб начальникĕ Гичка капитан, полк командирĕн политпай заместителĕ Розенштейн капитан пулнă.

— Вăрçă пуçланичченхи каç эпĕ полк штабĕнче дежурнăй писарь пулнă. Çав каç полк командирĕ те, штаб начальникĕ те киле каймарĕç, çĕр каçма штабрах юлчĕç. Эпĕ телефон аппарачĕ умĕнче ларатăп. Ир енне кайсан (ку ĕнтĕ июнĕн 22-мĕшĕнче) 99-мĕш стрелковăй дивизин Перемышль хулинче тăракан штабĕпе çыхăну татăлчĕ. Вăрманти лагерьте шăпах-ха. Салтаксемпе командирсем тутлă ыйхăпа çывăраççĕ.

— Сасартăк... — хавхалантарасшăн пулатăп шурă çӳçлĕ учителе. Анчах Арсений Ефимович хыпăнса-ăшталанса ӳкекен йышши мар иккен. Вăл йăлтах йĕркипе,

ним хумханмасăр-пăлханмасăр каласа пама тăрăшать. Вăрçă пăтăрмахĕсем те, хĕрĕх çул ытла ачасемпе ĕçлени те унăн нерв системине пăсма пултарайман, тейĕн. Вăл мĕн тери лăпкă та йĕркеллĕ калаçнине сăнатăп та ирĕксĕрех: «Ку çыннăн нервисем чăнах та хурçăран пуль»,— тесе шутлатăп.

— Çапла, сасартăк, кĕтмен-туман çĕртен пулчĕ ку. Хĕвел тухнă-тухманах вăрманти полк лагерĕ çине тăшман истребителĕсем вĕçсе çитрĕç. Эпĕ çийĕнчех Кутейкин майорпа Гичка капитана вăратрăм. «Çапăçу тревоги парас!» — хушрĕ мана полк командирĕ. Вăрçă пуçланнă кун мана пуçласа полк командирĕн пĕрремĕш приказне пурнăçлама тӳр килчĕ. Командир мĕн хушнине эпĕ телефонпа çийĕнчех чăçри дежурнăй офицера пĕлтертĕм. Пĕлтертĕм çеç — çар лагерĕ çийĕн тревога сигналĕ янрама пуçларĕ. Полкри подразделенисем, виçтăват минут хушшинче тумланса, хĕçпăшалланса, малтанах палăртнă вырăна стройпа тăрса тухрĕç.

— Эсир боепитани писарĕ терĕр те...

— Боепитани начальникĕ Московцев аслă лейтенант мана штаб документчĕсене сыхлама хушрĕ. Эпĕ çав приказа чыслă пурнăçларăм. Çав вăхăтрах боепитани начальникĕн связнойĕ те пултăм. Ана подразделенисен командирĕсемпе çыхăну тытма пулăшрăм. Мĕнле çар хатĕрĕсем ăçта тата мĕн чухлĕ кирлине пĕлсе тăма лайăх, шанчăклă çыхăну кирлĕ.

Арсений Ефимович сасартăк калаçма чарăнчĕ, унтан çапла сĕнчĕ:

— Мĕншĕн-ха эпир çак ырă çанталăкра килте пăчăхса ларатпăр? Айтăр, сада тухар. Мунча умĕнче ларса калаçмалли сак та, сĕтел те пур.

Кунашкал сĕнӳпе кам килĕшмĕ. Тухрăмăр. Çанталăкĕ лайăх. Йывăççенчен тутлă шăршă сарăлать. Анчах Арсений Ефимович çине пăхатăп та унăн сăнĕ кичемленнĕçемĕн кичемленсе пынине сисетĕп.

— Каялла чакасси вăл питĕ йывăр япала иккен, — пуçларĕ ветеран пусăрăнчăк сасăпа. — Тăван хуласемпе ялсем, вăрмансемпе уй-хир, ватă-вĕтĕ, хĕрарăмсем тăшман аллине тăрса юлаççĕ. Куляннипе чĕре татăлса анать, çав хушăрах хаяр çилĕ, тарăху туйăмĕ хăпарать.

Арсений Ефимович каллех шăпланчĕ. Унтан вăл усăннă пуçне картах çĕклерĕ:

— Чим-ха, эпĕ унтан пуçламарăм... Ах, çав хăрушă кунсене аса илсен, çӳçпуç вирелле тăрать, пĕтĕм ăшчик вĕреме пуçлать. — Вăл çавăнтах шăпланнă пек пулчĕ,

вара çапла каласа хучĕ: — Пирĕн çинчен манман çынсем те пур иккен-ха. Чылай пулатчĕ чуна уçса калаçманни.

Эпир унпа каç пуличченех калаçса лартăмăр. Акă мĕн каласа пачĕ мана Арсений Ефимович. Халиччен эпĕ ун пек тĕплĕ, пур ĕçе те пĕлсе, ăнланса каласа паракан çынсемпе тĕл пулманччĕ-ха.

— Дивизи вырăнтан июнĕн 29-мĕшĕнче тул çутăласпа хускалчĕ. Тăшманпа çичĕ талăк пĕр канмасăр, çывăрмасăр арăслан пек çапăçнă салтаксемпе командирсем, шăл çыртса, чикĕри вут-çулăмпа ялкăшакан хулана тăшман аллине хăварса, шăппăн тухăçалла утаççĕ. Чакнине курса, тăшман пирĕн çине тӳрех вуншар самолет вĕçтерсе ярать. Вĕсем уйрăмах пирĕн Перемышль—Самбор—Дрогобыч çулĕпе чакакан сылтăм фланга пысăк сиен кӳчĕç, мĕншĕн тесен ку çулпа пирĕн дивизи чаçĕсем çеç мар, 72-мĕш горно-стрелковăй дивизи те чакнă иккен.

Çирĕм-çирĕм пилĕк çухрăм чакнă хыççăн Журавне ялĕ патне çитрĕмĕр. Кунта пурте вилсе пĕтнĕ, тейĕн. Нимĕçсем те, ял çыннисем те курăнмаççĕ. Площадьре çеç маскировкăсăр-мĕнсĕрех нимĕç автомашинисем çуталса лараççĕ. Кунта çитме ĕлкĕрнĕ фашистсем хăйсемшĕн текех нименле хăрушлăх та çук тесе шутланă пулĕ ĕнтĕ. Кунтан инçех те мар Ходоров ялĕ. Унтан кăнтăр-хĕвеланăç еннерех Днестр урлă хывнă тимĕр кĕпер. Вăл тĕрĕс-тĕкелех иккен-ха. Çав кĕпере пурĕ те темиçе пулемет расчечĕ çеç хӳтĕленĕ. Нимĕçсен тĕп вăйĕсем ялсенче пулнă, унта хуçаланнă.

Пирĕннисем çав расчетсене çĕмĕрсе тăксан, эпĕ дивизи штабĕпе пĕрле лав çинче кĕпер урлă шарт сиккипе каçса кайрăм. Кайран çакна пĕлтĕм. Пире кĕпер урлă каçма çăмăлрах пултăр тесе, 197-мĕш стрелковăй полк Журавне ялĕнче тăракан нимĕçсен гарнизонĕ çине тапăннă. Çак ответлă операцие полк командирĕ хăй ертсе пынă. Кĕтмен-туман çĕртен тапăнса, полк тăшманăн икçĕр ытла салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, нумайăшне амантнă. Чĕрĕ юлнисем хĕçпăшалĕпе мĕнпур техникине пăрахса тарнă. Пирĕннисем тăшманăн çичĕ автомашинипе пилĕк мотоциклне çунтарса янă.

Анчах сулахай флангри 1-мĕшпе 206-мĕш стрелковăй полксем çак питех те меллĕ самантпа усă курма ĕлкĕреймен. Çавна пула нимĕçсем икĕ полкне те хупăрласа илнĕ. Нумай салтакпа командир, тăшман ункине татса, дивизин тĕп вăйĕсемпе пĕрлешнĕ. Анчах 1-мĕш стрел-

ковăй полкăн командирĕ Кутейкин майор та, 206-мĕш полкăн командирĕ Тюленев подполковник та, штабсем те текех сасă парайман ĕнтĕ.

Тăшман ункинчен тухнисем каярахпа çапла каласа пачĕç: тăшман çарĕсем пухăнаççĕ те пухăнаççĕ. Старый, Лисятыче, Лавчище тата ытти хăшпĕр ялсене фашистсем лăках тулнă. Мĕнпур урама автомашинăсем тултарса лартнă. Артиллерипе ытти техника та темĕн чухлех. Малашне тăшман пире хăватлă вăйсемпе хăвалама пуçласси пуриншĕн те паллă.

Анчах пирĕн штаба аслăрах штабсемпе çыхăнма май килмен. Дивизи командирĕсен пĕтĕм решенисене хăйсен йышăнмалла пулнă. Кашниех çакна ăнланнă: текех ку вырăнта пĕр минутлăха та тытăнса тăма юрамасть. Унсăрăн фашистсем пĕтĕм дивизие çавăрса илме пултараççĕ.

Эпир чакма пуçларăмăр. Темиçе çĕр, темиçе кун. Пирĕн çине çаплах нимĕç авиацийĕ вĕçе-вĕçе килет. Вĕри апат хутран-ситрен çеç параççĕ. Пурте йăлтах ывăнса çитрĕмĕр. Вăйсем кашни кунах чакса пыраççĕ.

Июлĕн 5-мĕшĕ ир-ирех хĕвеллĕ пулчĕ. Эпир Литяти-. Подгонцы текен рубеж патне пырса тухрăмăр. Кунта пире, окопсем чавса, оборона йышăнма приказ пачĕç.

Июлĕн 7-мĕшĕнче пиртен çурçĕр енче тăшман артиллерийĕ пени илтĕнме пуçларĕ. Калас пулать, çак икĕ кун хушшинче эпир самаях кантăмăр, вăй илтĕмĕр. Çар хатĕрĕсем те, апат-çимĕç те чылай хушăнчĕç. Ку вăл салтаксемпе командирсен пичĕ çине пăхсанах сисĕнет: вĕсем каллех хавасланă.

Малтан хурал отрячĕ енче çапăçусем пуçланчĕç. Унтан шăпăртах пулчĕç. Пĕр-ик сехет иртрĕ-и, çук-и — пирĕн тупăсемпе минометсем çĕр кисрентерсе пеме пуçларĕç. Каярахпа çакна пĕлтĕмĕр: нимĕçсем пирĕн оборонăна татса кĕресшĕн пулнă, анчах ĕçĕ ăнсах кайман. Çĕрле пур çĕрте те шăпăртах пулчĕ. Гитлеровецсем çĕрле çапăçмаççĕ тесен те тĕрĕс пулать. Вĕсем каçхине вунă сехетре çапăçма чарăнаççĕ те, лайăх апатланса, лайăх канаççĕ иккен. Вара ирхине çĕнĕ вăйпа çапăçма пуçлаççĕ. Кăна эпир каярах хамăр та лайăх пĕлсе çитрĕмĕр.

Июлĕн 8-мĕшĕ ир-ирех канăçсăр пуçланчĕ. Нимĕç самолечĕсем вĕçсе килчĕç, анăçран артиллери пеме пуçларĕ. Кунĕпех вăйлă çапăçу пычĕ, анчах эпир пĕр утăм та чакмарăмăр. Каçпа пире çапла ăнлантарса пачĕç: июлĕн 8-мĕшĕнче пирĕннисем тăшманăн ми-

нометсен тăватă тата тупăсен икĕ батарейине аркатса тăкнă. Пирĕн оборона линийĕ çине тапăнса килекен нимĕçсене темиçе хутчен те сире-сире пăрахнă, фашистсем, çĕршер виле хăварса, каялла чакнă.

Пирĕн политработниксем чăннипех те ырми-канми ĕçлекен паттăр çынсемччĕ. Хăçан канса, хăçан кăшт та пулин çывăрса илме ĕлкĕретчĕç-ши вĕсем! Июлĕн 13-мĕшĕ пирĕн полкшăн çав тери йывăр кун пулнине пĕлетпĕр-ха эпир. Анчах пĕтĕм дивизийĕпе мĕн пулса иртнĕ-ши? Çав кун, кăнтăрла иртсен, нимĕçсен Гусятин еннелле куçакан колоннине пирĕннисем йăлтах аркатса тăкнă иккен. Нимĕçсен çитмĕле яхăн машинине çунтарса янă, çĕршер фрица леш тĕнчене ăсатнă.

Çĕрле фашистсем пирĕн позицисене пĕрмай прожекторсемпе çутатса тăчĕç, тăтăшах пулеметсемпе автоматсенчен шатăртаттарчĕç. Анчах дивизи унта çук ĕнтĕ — оборонăна ячĕшĕн çеç пĕчĕк вăй хăварса, тухăçалла чакрăмăр.

Винница хули патĕнче пире уйрăмах йывăр тиврĕ. Çав йывăрлăха июлĕн 23-мĕшĕнче илнĕ тĕлĕнмелле хыпар çăмăллатса янă пекех туйăнчĕ: пирĕн 99-мĕш стрелковăй дивизие СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлани çинчен пĕлтерчĕç. Ку хыпар мĕнпур салтакпа командир кăмăлне хăпартлантарса ячĕ. Тăван çĕршыв аслă вăрçин историйĕнче пирĕн дивизи чи малтан çак ордена илме тивĕç пулчĕ. Салтаксем пĕр-пĕрне ыталаççĕ, пилоткисене çӳлелле ывăтаççĕ. Пирĕн паттăрсем пĕтĕм Хĕрлĕ Çарти боецсемпе командирсене чĕнсе калани пичетлесе кăларма, унăн айне чи пултарулла, чи хастар салтаксемпе командирсене алă пустарма ыйтрĕç. Халĕ ĕнтĕ çакна лайăх пĕлетпĕр: ыран июлĕн 24-мĕшĕ тенĕ каç политпай начальникĕ П. С. Ильин полковник чĕнсе каланин текстне çырнă. «Пирĕн мăн асаттесемпе асаттесен чапĕпе тавĕ, аттесен юнĕ, аннесен, арăмсен, ачасен телейĕ, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн шанăçĕ пире пур хăрушлăха та çĕнтерме, çынçиен фашистсемпе çапăçнă чух пĕр утăм та каялла чакмасăр юлашки сывлăш тухиччен, юлашки юн тумламĕ юлмиччен, чĕре юлашки хут тапиччен кăнтăрла та, çĕрле те, пур çĕрте те паттăр та хăюллă кĕрешме чĕнеççĕ». Çак текст малтан фронт хаçатĕнче, унтан «Красная Звезда» хаçатра пичетленсе тухрĕ.

Винница таврашĕнче икĕ талăка яхăн хăрушла çапăçусем пулчĕç. Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юрата-

кан салтаксемпе командирсем çакăнта хăйсем чăн-чăн патриотсем пулнине кăтартса пачĕç. Уйрăм батальонсем тăшманăн полкĕсене хирĕç, ротăсем — батальонсене, взводсем — ротăсене, пĕр совет салтакĕ виç-тăватă фашиста хирĕç тăрса çапăçнă кунта, çапах та чакман. Батальон командирĕ Завадский капитан, сурăнланнă пулин те, вăрçă хирĕнчен пăрахса кайман. Унăн позицийĕ çине нимĕç танкĕсем çĕмĕрсе кĕрсен, вăл граната çыххи тытса, танк айне ыткăннă. Хăй те вилнĕ, нимĕç танкне те пĕтернĕ.

Çĕрле, Винницăна тăшман аллине хăварса, каялла чакрăмăр. Хула çине çаврăнса пăхма хăрушă: пур çĕрте те пушар.

Çапла, эпир тĕлли-паллисĕр пăтрашăнса мар, йĕркене çирĕп пăхăнса, тăшмана çине-çинех аркатса, ăна нумай вырăнсенче тытса чарса, ытти чăсене чакма условисем туса патăмăр. Гранов хули патнелле чакса пынă чухне пирĕн командовани Мытково ялĕнче нимĕçсен пысăках мар чăçĕн штабĕ çĕр каçма чарăннине пĕлнĕ. Нимĕçсем çĕрле япăх çапăçнине пĕлсе, çав яла Вакулин аслă лейтенант ертсе пыракан подразделение янă. Штаба аркатса тăкнă, 40 нимĕçе вĕлернĕ, пĕтĕм техникине аркатса хăварнă, пĕр офицерне штаба илсе килнĕ. Фашист вара хаклă сведенисем панă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, Краснополкра нимĕçсен пысăк вăйĕ тăнă. Унăн тĕллевĕ — эпир тухăçалла чакакан çула пӳлсе лартасси, дивизие йăлтах тыткăна илесси. Хамăр разведка та çакнах çирĕплетсе панă.

Пирĕн дивизи, пĕтĕм вăя пухса, Краснополк хулине туртса илчĕ. Тăшман юлашкийĕсем Поддубный патнелле чакрĕç. Пирĕн алла нумай трофей лекрĕ.

Чи йывăрри Умань çывăхĕнче пулчĕ. Подразделенисемпе чăсем уçă уйра тăраççĕ, ниçта пытанмалли те çук. Çӳлтен вĕçĕ-хĕррисĕр бомба пăрахаççĕ, çĕр çинчен çĕршер тупăпа миномет çунтарса тăраççĕ. Пире приказ пачĕç: тăшман ункинчен ушкăнăн-ушкăнăн тухма тăрăшмалла. Каçпа, тĕттĕмленсен, эпир, икçĕр-виççĕр çын, политпай начальникĕ Ильин полковник ертсе пынипе, ункăран тухма хăтланса пăхрăмăр. Анчах ĕç тухмарĕ: тăшман пулемечĕсем пире çĕр çумне лапчăтрĕç. Эпир, чĕрĕ юлнисен пĕр ушкăнĕ, ăçта чупса, ăçта упаленсе, силослăх акнă хĕвелçаврăнăш уйне çитсе ӳкрĕмĕр. Уйĕ пысăк, хĕвелçаврăнăшĕ çынран та çӳллĕ. Тăшман çак уя та хупăрласа илчĕ. Нихăш енчен те пуçа кăларма çук. Кăнтăрла хĕвел пĕçертет. Пĕр тумлам шыв, пĕр тĕп-

ренчĕк çăкăр çук. Тăшман танкĕсем, автоматчиксене лартса, урлă та пирлĕ çӳрерĕç, татти-сыпписĕр пуля çумăрĕ çутарчĕç, анчах пире тытаймарĕç те, вĕлереймерĕç те. Çакнашкал блокада шăп та лăп пĕр эрне хушши пычĕ. Эпир çак хушăра пĕр тĕпренчĕк çăкăр çимен, пĕр тумлам шыв ĕçмен. Этем чунĕ час тухмасть иккен. Эпĕ утайми пулса çитрĕм, куçсем хуралса килекен пулчĕç, çине-çинех тăна çухатма пуçларăм. Нимĕçсем, коммунистсем пĕтнĕ ĕнтĕ тесе, блокадăна хăйсемех сирнĕ. Мана икĕ салтак Синюха юханшыв урлă сĕтĕрсе каçнă та пулса çитнĕ тырă пуссине илсе çитернĕ. Кунта эпĕ тăна кĕтĕм, шыв ĕçрĕм, тырă пучахĕ шĕкĕлчесе чăмларăм. Пĕлетĕр-и, вăй кĕме пуçларĕ. Пуç та лайăх ĕçлет. Каç пулчĕ. Эпир, хамăрăннисемпе пĕрлешме ĕмĕтленсе, хĕвелтухăçнелле утрăмăр. Çапла темиçе кун иртрĕ. Кăнтăрла тырă ăшĕнче выртатпăр, çĕрле утатпăр. Йĕри-тавра тăшман. Ăçтарах вăл фронт линийĕ — эпир нимĕн те пĕлместпĕр.

Эпĕ вар чирĕпе чирлерĕм. Мĕн тумалла? Ăçта каймалла? Апла та, капла та вилĕм тесе, пĕр пысăках мар ял хĕрринчи çурта пырса шаккарăм. Карчăкпа старик пĕр сăмахсăрах йышăнчĕç. Пытарса усрарĕç. Сывалма пуçларăм. Анчах мана, полицайсем тытса, нимĕçсен аллине пачĕç. Мана Адабалири лагере персе чикрĕç. Унтан Польшăри Седльце патĕнчи концлагере илсе кайрĕç. Мĕн чухлĕ асап курмарăм, мĕн чухлĕ патак çимерĕм пулĕ, вилĕмпе юнашар миçе хутчен тăман-ши, вĕсем çинчен каламастăп. Каласан та каласа пĕтереймĕн. Теприсем ăна ĕненмесĕр тăма та пултараççĕ.

Мана 1943 çулхи августра тыткăнран тарма май килчĕ. Пĕлетĕр-и, эпĕ тыткăнран тартăм! Мĕн ку? Эпĕ мĕн халичченех хама хам ответ параймастăп. Тыткăнран тарса хамăр партизансемпе пĕрлешни паттăрлăх-и вăл е çук-и? Чернигов çывăхĕнчи вăрманта август вĕçĕнче мана партизансем хăйсен отрядне илчĕç. Партизансен ку соединенине халĕ Украина халăхĕн паллă писателĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Юрий Збанацкий ертсе пыратчĕ. Пĕлетĕр-и, эпĕ хĕрлĕ партизан! «Чернигов таврашĕнче тăшмансемпе çапăçнă партизан отрядĕнче 1-мĕш стрелковăй полкра А. Е. Ефимов сержант та пулнă, халĕ вăл Чăваш АССРĕнче пурăнать», — тесе çырнă ман пирки Юрий Стрижков хăйĕн «Герои Перемышля» кĕнекинче.

Партизансен соединенийĕ 1943 çулхи октябрь варринче Хĕрлĕ Çарпа тĕл пулчĕ. Пире пурне те Остер ху-

лине илсе кайрĕç. Кунта çарĕç комиссарначĕ урлă Хĕрлĕ Çара илчĕç. Эпĕ каллех совет салтакĕ! Пĕлетĕр-и, эпĕ совет салтакĕ-автоматчикĕ! Текех мана нимĕн те хăрушă мар. Эпĕ темĕнле приказа та пурнăçлама хатĕр! — Арсений Ефимович сиксе тăчĕ те, çýçне сăтăрасăтăра, каллĕ-маллĕ утса çаврăнчĕ, ман умах пырса тăчĕ. Хуп-хура куçĕсем вут пек йăлкăшаççĕ.

— Лăпланма тăрăшăр, Арсений Ефимович, — тетĕп.

— Халĕ ĕнтĕ лăпланатăп,— каллех юнашар ларчĕ вăл, малалла калама пуçларĕ: — Пирĕн чаçсем пĕр тăхтаса тăмасăр тăшмана хĕвеланăçнелле хăваласççĕ. Днепр урлă каçса, Киевран çурçĕререх иртсе кайрăмăр. Житомир патне çитрĕмĕр. Эпĕ связист-телефонист. Львов хулине ирĕке кăлартăмăр. Манăн чĕре вăйлах тапма пуçларĕ. Нивушлĕ манăн телейĕм çав териех пысăк? Нивушлĕ 1941 çулхи июнь вĕçĕнче тăшман аллине хăварнă Перемышле хамăнах ирĕке кăларма тивет? Куç умне ун чухнехи йывăр çапăçусем, вăрçă хирне выртса юлнă юлташсем туха-туха тăраççĕ. Çук, эпĕ ĕмĕтленнĕ пек пулмарĕ: эпир Перемышльтен çурçĕререх иртсе кайрăмăр. Ăна урăх чаçсем ирĕке кăларнă.

Польша çĕрĕ çинчи Жешувпа Дамбице хулисене ирĕке кăлартăмăр. Эпĕ каярах тин пĕлтĕм: «Молодая гвардия» романри Иван Туркенич пирĕн дивизире политработник пулнă, вăл шăпах Жешув хулинче вилнĕ.

Мана аслă сержант званине пачĕç. Шав малалла, шав малалла, хĕвеланăçнелле. Пирĕн дивизи Румыни урлă каçрĕ, Венгрире тăшманпа хаярăн çапăçрĕ. Часах Дунай урлă каçса, Будапешт хулине ирĕке кăлартăмăр. Ку хулана ирĕке кăларма çăмăл пулмарĕ. Кунта питех те йывăр çапăçусем пулчĕç.

Австри çĕрĕ çине 1945 çулхи март пуçламăшĕнче кĕрсе кайрăмăр, Вена хулине ирĕке кăлартăмăр. Каллех Дунай урлă каçса, Чехословакири Братислава хулине çитрĕмĕр. (Пирĕн дивизи çитиччен ăна ирĕке кăларнă ĕнтĕ.) Чехословаки территорийĕпе анăçалла вирхĕнтĕмĕр, Нетолице хулине йышăнтăмăр. (Вăл Германи чиккипе юнашарах.) Кунта майăн 10-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешýллĕ Штатсен çарĕпе тĕл пултăмăр.

Çавăнта вăрçă вĕçленчĕ. Эпир ирсĕр тăшмана çĕнтертĕмĕр. Вăрçă хирĕнче эпĕ пĕтĕмпе 651 кун пултăм, икĕ хутчен амантăм, анчах госпитале е санбата кайман.

Июнь уйăхĕнче пирĕн чаççене хĕвелтухăçнелле куçарма пуçларĕç. Пирĕн дивизи Чехословаки, Венгри,

Румыни территорийĕсем урлă, çĕнтерӳ юрри юрласа, çуран утса тухрĕ. Хуласемпе ялсем витĕр маршпа утса пынă чухне çĕр кисренетчĕ. Çулăн икĕ енĕпе халăх пăхса юлатчĕ. Çынсем çĕнтерӳçĕсем çине пăхса хĕпĕртенипе йĕретчĕç, çăкăр-тăвар сĕнетчĕç, чечексем ывăтса паратчĕç, Хĕрлĕ Çар вăрçă хыççăн та çав тери хăватлă пулнăран тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетчĕç.

Хамăр территорие кĕрсен, пирĕн дивизие теплушкăсене вырнаçтарчĕç. Эшелон Инçет Хĕвелтухăçнелле çул тытрĕ. Пĕлетпĕр: пирĕн тухăçри тăшмана — самурайсене çапса аркатмалла. Вара тинех пĕтĕм совет халăхĕ, мире юратакан пĕтĕм прогрессивлă халăх ирĕккĕн сывласа ярĕ. Кунти çапăçусем çинчен каласа тăмастăп. Унта эсир хăвăр та пулнă. Киле 1945 çул вĕçĕнче таврăнтăм. Килте ватă аттепе анне кăна. Эпĕ вĕсене ултă çул ытла курман. Икĕ çул хушши вĕсем мана пачах çухалнă тесе шутласа пурăннă, анчах çав вăхăтра та кĕтме пăрахман.

Каллех учительте ĕçлеме пуçларăм. Вырăс чĕлхипе литературине вĕрентетĕп. Педагогика институтне, виççĕмĕш курсран пуçласа, заочно вĕренсе пĕтертĕм. Пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ хĕрĕх ултă çул. Шкулта, ачасем умĕнче, хĕрĕх çул тăратăп. Миçе пин тетрадь тĕрĕслемен пулĕ çак хушăра? Миçе теçетке, миçе çĕр ачана вырăсла калаçма вĕрентмен пулĕ? Чăваш ачисене вырăсла вĕрентессине хамăн чи хисеплĕ ĕç тесе шутлатăп.

Эпĕ парăнман. Мĕн пулăшнă-ха мана пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма тесе ыйтсан, эпĕ çапла ответленĕ пулăттăм: «Тăван çĕршыва виçесĕр юратни, коммунизм идейисене пĕтĕм чун-чĕререн парăнни».

Çапла вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне манăн çĕнĕ юлташ Арсений Ефимович Ефимов. Кун пек çынпа эпĕ вута кĕме те хатĕр.

Саккăрмĕш теçетке пухакан Арсений Ефимович халĕ тивĕçлĕ канура. Вăл районти «Ленин çулĕпе» хаçатăн хастар корреспонденчĕ.

ВУНПĔРМĔШ ТĔЛПУЛУ

Мануил Дмитриевич Дмитриева шыраса, эпĕ Вăрнара çитрĕм. Вăл Николаев урамĕнчи 14-мĕш çуртра пурăнать.

— Салтăнăр, килти пекех пулăр, — теççĕ мана кăмăллă кил хуçисем.

Кăштах ун-кун çинчен калаçкаласа илнĕ хыççăн тĕп йĕр çине ӳкрĕмĕр.

Пулаççĕ-çке çын пурнăçĕнче каласан та ĕненмелле мар япаласем. Мануил Дмитриевич ашшĕ Дмитрий Петрович Петров пĕрремĕш империализм вăрçинче тем тĕрлĕ инкек-синкек тӳссе ирттернĕ паттăр салтак пулнă. Патша генералĕ ăссăр-пуççăр Брусилов, нимĕçсен оборонине татса, анăçалла наступлени пуçласа яма хăтланни мĕн тери хакла ларнине халĕ истори страницисем тăрăх лайăх пĕлетпĕр. Ку вăл Львовпа Перемышль таврашĕнче пулнă. Нимĕçсем малтанах тĕплĕ хатĕрленĕ серепере вырăс çарĕ пĕр усăсăр пиншер салтакпа офицера çухатать. Д. Петров хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле Перемышль çывăхĕнчи вăрман хĕррине, лачакаллă вырăна тарса кĕме ĕлкĕрнĕ. Анчах кунта та вилĕм кашни минутрах, кашни утăмрах кĕтнĕ. Пуç çийĕн шрапнель вĕçнĕ, унта та кунта снарядсем ӳксе çурăлнă. Çитменнине, юна лачакари вăрăмтунасем ĕмнĕ. Темиçе кунран çар Сан шывĕ хĕррине тухнă, кунта, окопсем чавса, оборона йышăннă. Салтаксем выçăпа аптăранă. Вир пăттисĕр пуçне урăх нимĕн те паман вĕсене. Выçăпа начарланса пыракан салтаксене часах пыйтă ерет. Кĕпе-йĕм таврашне улăштармаççĕ, мунча пирки шухăшламалли те çук. Тарăхса çитнĕ салтаксем йĕркесĕрлĕхсене хирĕç хăйне евĕрлĕ тавăрма шутлаççĕ — вир пăтти тултарнă пăхăр котелоксене винтовкăсенчен пере-пере шăтараççĕ. Çавăн пек самантсенчен пĕринче тревога пулать те, Д. Петров хăй котелокне окопах манса хăварать...



М. Д. Дмитриев, старшина,

Брестри мир хыççăн Дмитрий Петрович тăван ялне таврăнать. Анчах вăрах пурăнаймасть вăл килте. Ана каллех çара илеççĕ. Халĕ ĕнтĕ патша çарне мар, Хĕрлĕ гварди ретне тăрать вăл. Тĕрлемес патĕнче Колчакăн Мускавалла талпăнакан ĕмĕтсĕр çарне тытса чараççĕ,

ăна каялла хăвалама пуçлаççĕ. Часах Хусана илеççĕ. Тухăçалла наступлени пуçласа яраççĕ.

Пире ытларах ку мар-ха, Перемышль интереслентерет. Ашшĕ Перемышль патĕнче нимĕçсемпе çапăçнă чухне урайĕнче чупса çӳренĕ Мануил тепĕр çирĕм пилĕк çултан хăйне те çав вырăнсенче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçма тӳр килесси, унтах ашшĕн пăхăр котелокне тупма пултарасси çинчен, паллах, тĕлĕкĕнче те курма пултарайман.

Апла йĕркипех каласа каяр-ха. Мануил 1915 çулхи кăрлачра хальхи Çĕрпӳ районне кĕрекен Импӳрт ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Революци ялти чухăнсене нумай çăмăллăхсем панă. Дмитрий Петрович ывăлне мĕнле те пулин вĕрентме тăрăшнă. 1935 çулта Мануилăн çара каймалли черечĕ çитет. Анчах ăна, Новосибирскри планпа экономика институтĕнче вĕренекен студента, кĕске вăхăтлăха унтах хăвараççĕ. 1939 çулта вăл Шупашкарта, Юстици халăх комиссариатĕнче, главнăй бухгалтерта ĕçлет. Çав çулхине, кĕркунне, халиччен кĕске вăхăтлăха хăварнă служащисене йăлтах тенĕ пек çара мобилизацилеççĕ. Сентябрьте Мануил Дмитриевича та черет çитет. Тăруках фронта илсе каймаççĕ-ха вĕсене. Малтан çарти йĕркесене вĕрентеççĕ.

Ноябрьте пĕр çил-тăманлă кун вĕсене строя тăратаççĕ. Строй пуçĕнче — оркестр. Çапла вĕсем, «Ыран вăрçă пулас-тăк», «Виçĕ танкист» тата ытти юрăсене шăрантарса, музыкăпа пĕтĕм Шупашкар витĕр чугун çул станцине çитеççĕ. Шупашкар çыннисем вĕсене ăшшăн саламласа ăсатаççĕ.

Вăрăм çул пуçланать. Малтан вĕсене Мускава илсе çитереççĕ, унтан, Винница таврашĕнчи Гансин хулинче эшелонран антарса, казармăсене вырнаçтараççĕ. Икĕ уйăхран, Тăван çĕршывшăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр пулнине çирĕплетсе, тупа тăваççĕ. 1940 çулхи кăрлачра вĕсене Перемышль хулине куçараççĕ.

— Малтан эпĕ 99-мĕш стрелковăй дивизин 1-мĕш полкĕнчи разведчиксен взводне лекрĕм. Институтра вĕреннине тата комсомолец пулнине шута илсе, мана ротăра кашни кун икĕ сехет политзаняти ирттерме шанса пачĕç. Политзанятисем ирттерме ятарласа тунă план пурччĕ. Çав планпа килĕшӳллĕн полк комиссарĕ кашни эрнерех семинарсем ирттеретчĕ.

Эпĕ Мануил Дмитриевича калама чăрмантармарăм. Вăрçă умĕнхи служба пирки вăл нумай каларĕ. Сисетĕп,

хăй патне унăн вăрçăри ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ыйтса тĕпчеме ятарласа çын килнĕшĕн вăл çав тери савăннă. Пĕр чарăнмасăр калать. Чăн та, çирĕп сывлăхлă, кĕрнеклĕ, маттур салтак пулнă Мануил. Эпĕ унран пĕр çĕнĕ япала пĕлтĕм. 1941 çулхи майăн 10-мĕшĕнче пирĕн çарăн пĕр складне аркатса сирпĕнтерни çинчен мана халиччен никам та каламанччĕ. Çакăн хыççăн пирĕн салтаксем уйрăмах сыхă тăма пуçланă.

Часах М. Дмитриева алă пулемечĕ шанса параççĕ.

— Эпĕ ăна хамăн пилĕк пӳрнене пĕлнĕ пекех тĕплĕ пĕлеттĕм. Тĕрĕслев вăхăтĕнче мишеньсене персе, яланах чи лайăх паллăсем илеттĕм. Эпĕ унпа мĕн Умань патне чакса çитичченех уйрăлмарăм. Вăл чăхăмлани пĕрре те пулман, — çирĕплетсех калать Мануил Дмитриевич.

Вăрçă умĕн 1-мĕш полк та, ыттисем пекех, çуллахи лагерьте тăнă. Хурал взводĕнчи Дмитриев вара хăйĕн пулемечĕпе Перемышльтех юлнă. Хаçатсемпе журналсем, çырусемпе телеграммăсем почта урлă Перемышле килсех тăнă. Почтăпа мĕн килнине Дмитриев кашни кунах полка, лагере илсе кайса панă, каçалапа каялла хулана таврăннă. Июнĕн 22-мĕшĕнче те çапла тумалла пулнă унăн...

Хурал взводĕнчи салтаксенчен çуррине яхăн постра пулнă — складсене, штаба сыхланă. Постран таврăннисем казармăра тутлă ыйхăпа çывăрнă.

Дмитриев полигон таврашĕнче снарядсем шартлатса çурăлнипе вăранса каять, хăвăрт вырăн çине тăрса ларать. Мĕн ку? Ара, паян вырсарникун-çке, вăхăчĕ те тул çутăлнă-çутăлман кăна. Тепĕр снарячĕ казармăпа юнашарах ӳксе çурăлать — пурте шартах вăранса сиксе тăраççĕ, анчах малтанах нимĕн те ăнланса илеймеççĕ. Штаба шăнкăравлаççĕ — телефон ĕçлемест: линие татнă. Пĕри чупса кĕрет те фашистсем Перемышль хулине тапăнни çинчен кăшкăрса пĕлтерсе хăварать. Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ Дмитриевăн? Кунта командир та çук. Вăл хăйне хăй хуçа. Çавăнтах пуçа шухăш пырса кĕрет. Ара, ун пек-кун пек пулсан, унăн хăйĕн пулемечĕпе чугун çул кĕперĕ патĕнчи малтанах хатĕрленĕ позицие йышăнмалла-çке. Вăйлă, кĕрнеклĕ салтак пирамидăран алă пулемечĕ тата икĕ диск илет, тӳрех унта чупать.

П. Нечаев лейтенанта М. Дмитриев лайăх пĕлнĕ. Хăй кунта, кĕпер çывăхĕнче, позици йышăннине ăна пĕлтернĕ.

— Питех те аван. Пограничниксене кĕпере хӳтĕлеме пулăш.

Дмитриев хăйĕн пулемечĕпе кĕпер патнех пырса выртать. Маларах эпир кĕпер çинче нимĕçсене темиçе хутчен те мĕнлерех ăшаласа каялла çавăра-çавăра янине, унта мĕн чухлĕ фашист вилсе юлнине тĕплĕ çырса кăтартнăччĕ. Çавăнта Гитлер йыттисене вут-çулăмпа ăшалакансенчен пĕри пирĕн янташ Мануил Дмитриев пулнă.

Каярахпа Нечаевпа чылай пограничник вилнĕ хыççăн та, Дмитриев пулеметне пăрахман. Чакса пынăçемĕн, меллĕ вырăнсенче чарăна-чарăна, юлашки дискри патронсене перекетлесе, кĕске черетсемпе пере-пере, нимĕçсен речĕсене сайратнă. Каçпа чĕрĕ юлнă пограничниксемпе пĕрле хулан хĕвелтухăç енчи масар çине çитсе ӳкнĕ.

Дмитриев кунта пулемет валли авăрланă икĕ диск илме май тупать. Фашистсене çуртсемпе подвалсенчен, чартаксенчен, чугун çул станцийĕнчен сирпĕнтерсе кăларса Сан патнелле хăваласа каякан, вĕсене вут-çулăмпа ăшалантарса леш тĕнчене ăсатакан чи хастар боецсенчен пĕри пирĕн янташ Мануил Дмитриев пулнă.

— Ун чухне кам миçе фашиста вĕлернине шута илсе пыма май çукчĕ. Пиртен ытларахăшĕ винтовкăсенчен перетчĕ, тăшманпа куçа-куçăн тăма вăхăт çитсен, гранатăпа аркататчĕ. Эпĕ, кĕске черетсемпе персе, пĕр харăсах виç-тăватă нимĕçе йăвантартăм, — аса илет ватă салтак, кăшт тăрсан, каласăвне малалла тăсать: — Июнĕн 23-мĕшĕнче каçхине 10 сехетре эпĕ хамăн батальона шыраса тупрăм. Рота командирĕ Колос аслă лейтенант мана пулеметпа хăй патне хăварчĕ. Пирĕн унченех хатĕрленĕ позицисем пурччĕ. Анчах дивизи командирĕ Дементьев полковник вĕсем çителĕксĕр тесе шутланă пулас. Ывăнса, ĕшенсе çитнĕ боецсем çав каçах Сан çыранĕ тăрăх окопсем чавма пуçларĕç. Эпĕ, Колос приказне пăхăнса, постра нимĕçсене çивĕччĕн сăнаса тăратăп, фашистсен ушкăнĕ пирĕн еннелле каçма хатĕрленнине асăрхасанах, шăлса тăкма тăрăшатăп. Паллах, эпĕ пĕччен мар кунта. Çырма тăрăх алă пулемечĕсем çеç мар, «максимкăсем» те сахал мар. Тӳрĕ наводкăпа перекен 45 миллиметрлă тупăсем те пирĕн хыçрах. — Мануил Дмитриевич кĕпе тӳмисене вĕçертсе ячĕ. — Эпĕ çеç мар, пурте çапла çапăçнă. Манран маттуррисем те нумай пулнă унта. Нимĕçсене взвочĕ-взвочĕпе, ротиротипе çулнă вăхăтра Сан шывĕ юнпа хĕрелсе-хуралса юхатчĕ. Ирĕк памарĕç. Ирĕк панă пулсан-и, вĕсене, хăйсен çĕрĕ çинче ăшаласа, таçта çити хăваласа кайнă пу-

лăттăмăр, — хавхаланса кайрĕ кăвак çӳçлĕ салтак, унтан лаштах сывласа ячĕ.

Мануил Дмитриевич Тăван çĕршыв аслă вăрçи историйĕнче пĕрремĕш хут нимĕçсене Перемышльтен хăваласа кăларнă чухне чун-чĕререн хĕпĕртенĕ. Унтан, нимĕç чаçĕсене арката-арката тухăçалла чакса пынă вăхăтра, савăнмаллинчен ытларах хурланмалли пулнă. Тăшман аллине пĕр пулăшусăр тăрса юлакан хĕрарăмсемпе ача-пăча, ваттисем çине пăхса, куççуль тухни те пулнă унăн.

Пĕр çапăçура ăна амантнă. Свердловскинче госпитальте сипленнĕ чухне ун патне çав çулсенче колхоз председателĕнче ĕçленĕ савнă мăшăрĕ Антонина Григорьевна пырсан, мĕн тери савăннă вăл!

— Тоня пырса кайни те часрах сывалма пулăшрĕ мана. Тавах сана уншăн, Тонечка, — тет кил хуçи, хăйне хирĕç ларакан мăшăрĕ çине ăшшăн пăхса.

— Саншăн тăрăшса-çунсах ватăлтăм ĕнтĕ, — тавăрать арăмĕ, йăл кулса.

Тĕрĕссипе Антонина Григорьевна пĕртте ватă марха: куçĕ-пуçĕ йăлкăшса-выляса тăрать, тăнĕ лайăх, чĕлхи çивĕч, пичĕ çинче йĕрсем те çукпа пĕрех.

— Амăшĕ, эсĕ маншăн çеç мар-ха, ачасемшĕн те нумай тăрăшрăн. Акă, халь иккĕн тăрса юлтăмăр та, пĕри теприншĕн тăрăшас пулать ĕнтĕ.

Сăпайлă мăшăр тăватă ача пăхса çитĕнтернĕ. Викторпа Борисĕ Вăрнарти химзаводра ĕçлеççĕ, Альбина — Саратовра, главнăй бухгалтер, Владимир Инçет Хĕвелтухăçĕнче службăра пулнă хыççăн химзаводра вăй хурать.

Госпитальте выртса тухсан, татах нумай çапăçура пулнă Мануил Дмитриевич. Вăрçă хирĕнче харсăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн «Паттăрлăхшăн», «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» медальсем илме тивĕçлĕ пулнă. Вăрçа Австрири Гниц хулинче вĕçленĕ. Гварди старшини Мануил Дмитриевич Дмитриев килне 1946 çулта таврăннă. Тĕрлĕрен ĕçре вăй хунă вăл. Нумай хутчен Хисеп грамотисем илме тивĕç пулнă.

— Чимĕр-ха, кайиччен сире Гитлер «кучченеçне» кăтартам. Вăл мĕн халичченех сулахай урара упранать,— Мануил Дмитриевич сулахай уринчи снаряд ванчăкне тытса кăтартрĕ. — Вăрçă инкекĕсем мĕн халичченех тасалса пĕтмеççĕ.

Фронтра йывăр аманнă салтак 1986 çулта çĕре кĕчĕ.

* * *

Элĕк районĕнче Перемышль хулипе крепоçне хӳтĕленĕ паттăрсем татах пур. Сăмахран, Шĕмшеш ял Советĕнчи Ишпарайккă ялĕнче Николай Матвеевич Соколов пурăнать. 99-мĕш дивизири 1-мĕш стрелковăй полкра рядовой пулнă.

Мăн Вылă ялĕнче 1919 çулта çуралнă Петр Прокопьевич Михайлов пурăнать. Вăл та 99-мĕш дивизири 1-мĕш полкăн салтакĕ пулнă.

Сурăмпуç Мучикасси ялĕнче Василий Никитич Никитин пурăнать. Вăл 1919 çулта çуралнă, 99-мĕш дивизин 1-мĕш полкĕнчех службăра тăнă.

Леонид Никифорович Сорокин, 1919 çулта çуралнăскер, Ехремкассинче пурăнать. Вăл та 99-мĕш дивизири 1-мĕш полкрах пулнă.

Асăннă дивизири 1-мĕш полкра Юнтапа çынни, 1908 çулта çуралнă Лаврентий Иванович Иванов та службăра тăнă. Унтах Тукач ялĕнчен Андриян Семенович Суриков та пулнă.

Маларах эпир 99-мĕш дивизири 1-мĕш полк кунçулĕ çинчен самаях тĕплĕ çырса кăтартнăччĕ. Асăннă юлташсем пурте çав стрелковăй полкра пулнă. Паллах, вĕсен вăрçăри, çавăн пекех вăрçă хыççăнхи шăпи хăйне евĕр пулнă. Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, вăрçăра вĕсем те ыттисем мĕн курнинех тӳссе ирттернĕ. Пĕрре калани-не тепĕр хут калас мар тесе, асăннă юлташсем пирки уйрăмшарăн тĕплĕн чарăнса тăмарăмăр. Унăн автор пуринчен те каçару ыйтать.

Вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенче пограничниксен 92-мĕш отрячĕ тăшманпа мĕн тери паттăррăн çапăçни çинчен те эпир самаях пĕлтĕмĕр ĕнтĕ. Ку отрядри хăюллă воинсем Перемышль хыççăн ăçта-ăçта тата еплерех çапăçни çинчен каярах каласа хăварăпăр. Асăннă отрядра чăвашсем те пулнă. Мана çавсенчен пĕринпе, Иван Михайлович Михайловпа, курса калаçма тӳр килчĕ.

Пирĕн янташ Иван Михайлович 12-мĕш заставăра службăра тăнă. Ку застава Перемышльте хăйĕнче мар, хулан çурçĕр енче, тăвалларах вырнаçнă. 1939 çулхи августра Хĕвеланăç Украинăна ирĕке кăларса государствăн çĕнĕ чиккине çирĕплетсен, Сан çыранĕн оборони-не тĕреклетмелле пулнă. Пирĕн пограничниксем, чикке хуралланипе пĕрлех, вăрçă ăсталăхне, çĕнĕ техникăпа хĕçпăшала вĕреннĕ, оборона ĕçĕсене те тунă.

— Хĕрĕхмĕшпе хĕрĕх пĕрремĕш çулсенче чикĕри ĕç-сем самай йывăрланчĕç. Пирĕн заставăран инçех те мар

темиçе ял пурччĕ. Çав ялсенче, паллах, таса чунлă çынсем кăна пурăннă теме йывăр ĕнтĕ. Чикĕ леш енчен тĕрлĕ заданипе ку енне, ку енчен леш енне каçма хăтланса пăхакансем сахал марччĕ ун чухне. Леш енчен пăшал пени те, чикĕ урлă самолетсем вĕçсе каçни те пулкалатчĕ. Çавăнпа чикĕре тăракансене шутсăр сыхă пулма хушатчĕç, — аса илет Михайлов.

Çакăн пек канăçсăр лару-тăрура вăл вăрçă пуçланичченех нумай хутчен пулнă, палламан, иккĕлентерекен çынсене застава штабне пĕрре çеç мар ăсатнă, çавăншăн командовани ăна темиçе хутчен тав тунă.

Пограничникшăн ăнсăртлăхсем пулмалла мар. Унăн кирек мĕнле инкек-синкеке те вăхăтра сиссе, ăна çийĕнчех пĕтерме пĕлмелле. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсен яланах пурте хатĕр. Юнашар пирамида çинче автоматсем, граната ещĕкĕсене уçсах хунă, гимнастеркăпа шăлавар койка çумĕнчех. Кунтах, урайĕнче, пуртенккепе атă. Тревога парсан, виçĕ минутран—пограничник стройра. Вăл кирек мĕнле приказа та пурнăçлама хатĕр.

Кăнтăрла оборона ĕçĕнчен таврăнса икĕ сехет кансан, Михайлов июнĕн 21-мĕшĕнче юлташĕпе пĕрле «секрета» кайнă.

— «Секрет» тени çавнашкал вăл. Эсĕ ăçта выртнине никам та пĕлмелле-курмалла мар, ху вара йăлтах курса-илтсе тăмалла. Сан шывĕн леш енче, пирĕнтен инçех те мар, нимĕçсен застави вырнаçнăччĕ. Малтанласа çыран хĕррипе ытлашши нимех те çукчĕ вĕсен. Хăйсем те пăч-пач çеç курăнкалатчĕç. Анчах юлашки кунсенче нимĕçсем çырма тăрăх уççăнах утса çӳреме пуçларĕç. Пирĕн еннелле бинокльтен пăхаççĕ, аллисене тăскаласа, тем каласаççĕ. Ку ырра мар иккенне сиснĕ-ха эпир. Юлашки вăхăтра командирсемпе политработниксем те пире уйрăмах сисĕмлĕ, асăрхануллă пулма хушатчĕç,— аса илсе каласа парать Иван Михайлович. — Юлташпа иксĕмĕр бинокльтен пăхса выртатпăр. Ак тамаша! Тепĕр енчи çыран хĕрринелле темле хура япаласем шуса килеççĕ. Татах тинкеретпĕр. Аванах уйăратăп — çăмăл тупăсем шăвăнаççĕ. Хыçалтан вĕсене çынсем тĕртсе пыраççĕ. Мĕн тумалла? Хĕрлĕ ракетăпа çутатса тревога пама юрамасть: вĕсем чикĕ урлă каçмаççĕ-ха. Юлташа чавсапа тĕртетĕп. Каласмастпăр. Пĕр-пĕрин çине пăхнипех ăнланатпăр. Нимĕçсен ушкăнĕ нумайланнăçемĕн нумайланса пырать...

Иван Михайлов хăй мĕн курнине заставăри дежурнăя пĕлтерет. Лешĕ — застава начальникне. Пилĕк

минут хушшинче пограничниксем малтанах палăртса хунă позицисене йышăнаççĕ. Вăхăт нумай та иртмест, фашистсем застава çине тӳрĕ наводкăпа пеме пуçлаççĕ. Заставăна вут хыпса илет, анчах унта никам та çук ĕнтĕ.

Фашистсем, лавсем çинчен кимĕсем антарса, шыва яраççĕ. Кĕретĕнех, пĕр хăрамасăр-тумасăр вĕсем çине лараççĕ, кунталла ишме пуçлаççĕ, ура çинче тăраканнисем çав хушăрах тĕлсĕр-йĕрсĕр автоматсенчен шатăртаттараççĕ. «Пĕлĕр: эпир пыратпăр. Аллăрсене çĕклĕр»,— теççĕ пулмалла. Чăнах та çапла. «Русь, сдавайся! Русь, капут!» — кăшкăраççĕ хайхисем.

Русь салтакĕ аллине çĕклекен йышши мар. Командăпа пурте пĕр харăс пеме пуçлаççĕ. Фашистсенчен нумайăшĕ шыва чăмать, ĕлкĕрнисем киммисене каялла çавăраççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем çырма леш енчен минометсенчен пеме тытăнаççĕ. Персен-персен, каллех кимĕсем çине лараççĕ, каллех кунталла ишеççĕ. Пограничниксене минăсем нимех те тăвайман иккен. Вĕсем каллех вутçулăмпа ăшалаççĕ. Ирсĕр çĕленсем каллех каялла чакаççĕ.

Капла юрамасть, тăварах кайса, унтан каçас та хыçалтан çавăрса илес терĕç пулас вĕсем. Чăнах та çапла. Анчах пирĕн унта та шанчăклă «йăвасем» пур. Аптăраса çитнĕ фашистсем юлашкинчен тупăсемпе минометсенчен татти-сыпписĕр пеме пуçларĕç, çав хушăрах кимĕсемпе те, ахаль те каçма тытăнчĕç (ку тĕлте Сан шывĕ 1—1,2 метр тарăнăш çеç, сарлакăшĕ те 50—60 метртан ытла мар). Застава начальникĕ пулăшу ыйтать. Анчах ăçтан памалла ăна? Сан шывĕ тăршшĕпех çапăçусем пыраççĕ,— аса илет Иван Михайлович.

Приказ илнĕ хыççăн чакаççĕ. Чĕрĕ юлнисем пограничниксемпе ополченецсен своднăй батальонĕпе пĕрлешеççĕ. Малалла Иван Михайлов шăпи мĕн вăрçă пĕтичченех пограничниксемпе çыхăннă. Вăл рядовой салтакран лейтенанта çити ӳснĕ, взвод командирĕ пулнă.

Тăван çĕршывăн чиккине вăрçăн малтанхи самантĕнчен пуçласах 92-мĕш погранотрядри 10-мĕш застава начальникĕ Я. Н. Николаев паттăррăн хӳтĕленĕ. Вăл вăрçăччен час-пасах Перемышле, 92-мĕш погранотряд штабне пыра-пыра çӳренĕ, тепĕр чухне кунти чăваш салтакĕсемпе курса калаçма та вăхăт тупнă.

Медыка патĕнчи пĕр хаяр çапăçура Николаев сурăннă, тыткăна лекнĕ. Ана хыпарсăр çухалнă тесе шут-

ланă, 1941 çулхи декабрьте личнăй состав списокĕнчен те кăларса пăрахнă. Нумай çул иртсен тин, чăваш журналисчĕсем çине тăрса шыранăран, Николаевăн чăннипех те паттăрла биографине тĕпчесе пĕлме май килнĕ. Юлашкинчен Альберт Пономаревпа Михаил Иванов журналистсем ун çинчен «Человек из легенды» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă.

Я. Н. Николаев çинчен сахал мар çырнă. Ун пирки хаçатсемпе журналсенче нумай статья пичетленнĕ, халĕ те пичетленеççĕ. Ю. К. Стрижков та хăйĕн кĕнекинче пограничник-герой çинчен самаях тĕплĕ çырса кăтартнă. Николаев çинчен уйрăмах Польшăра нумай çыраççĕ. Ăна пĕтĕм Польша халăхĕ ырăпа асăнать. Влодава хулинчи пĕр площаде Николаев ятне панă. СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1966 çулхи мартăн 22-мĕшĕнче кăларнă Указпа Я. Н. Николаева вилнĕ хыççăн Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Тыткăнра Яков Николаев вăрах пулман. 1941 çулхи ноябрьте вăл çывăх юлташĕсемпе пĕрле Бела-Подляска лагерĕнчен тарнă та поляк патриочĕсен пĕр ушкăнĕпе пĕрлешнĕ.

1941 çулхи декабрьте Николай Мелюх, Михаил Сикорский тата Микола Крупка поляксем Парчев вăрманĕнче партизансен хĕçпăшаллăнă пĕрремĕш ушкăнне йĕркелесе ярсан, вĕсен командирĕ «Чăваш» пулса тăнă. Унта тыткăнран тарнă совет воинĕсемпе çамрăк поляксем пулнă. Ушкăнра пурĕ вăтăра яхăн çын шутланнă. Часах тыткăнран тарнă совет офицерĕсем, Михаил Петросянпа Николай Колосов, партизансен тата икĕ отрядне йĕркелеççĕ.

Парчев вăрманне 1942 çул пуçламăшĕнче совет офицерĕ Федор Ковалев ертсе пынипе партизансен утмăл çынлă тепĕр отрячĕ килсе çитет. «Чăваш» отрячĕ те унпа пĕрлешет. Либартов, Парчев, Влодав, Радзин тата Вяльуск районĕсенче «Чăваш» ертсе пыракан отряд нумай-нумай диверсилле ĕç тăвать. Отряда Адам Мицкевич ятне параççĕ. Унăн йышĕ хушăнсах пырать. «Федько» соединенийĕ, унăн командирĕ Федор Никитич Ковалев ячĕ историе ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлнă. Ăна Гвардии Людовойăн майорĕ звани панă, вăл поляксен чи пысăк наградине — «Грюнвальд Хĕресне» илме тивĕç пулнă. Акă мĕнле тĕлĕнмелле çынна тĕл пулнă Яков Николаев Польша вăрманĕнче.

«Чăваш» отрячĕ Остров Любельский тата Тысменницы ялĕсенчи тăшмана аркатса тăкнă хыççăн

Я. Николаева партизансен соединенийĕнче разведчиксен взвочĕн командирĕ туса хураççĕ. Ĕçе лайăх пĕлсе йĕркеленĕ разведка штаба хаклă сведенисем парса тăнă, йывăр самантсенче отряда çăлăнма, сывă юлма сахал мар пулăшнă.

Буг леш енче партин Брест обкомĕн секретарĕ Сикорский ертсе пыракан партизансен соединенийĕ тăшманпа хăюллă кĕрешнĕ. Çакăн çинчен пĕлсен, «Чăваш» хăйĕн командирне çапла калать:

— Федор, пĕр отряд парса яр мана çавсемпе çыхăнма.

Ковалев килĕшет. Сикорский патне пысăк çыру çырать, ăна «Чăваша» парать. Часах «Чăвашăн» çĕр çынран тăракан отрядне тухăçалла ăсатса яраççĕ. Анчах чикĕре юхса выртакан Буг шывĕ патĕнче Я. Николаева йывăр амантаççĕ. Отрядри партизансем ăна наçилккапа каялла илсе тухаççĕ. Малтан сăрт айĕнчи пĕр вăрттăн çуртра, унтан Холозно ялĕнчи Стефан Зеленко патĕнче сыватаççĕ. Стефан «Чăваша» лайăх пĕлнĕ. Икĕ уйăхран, туяпа çӳреме пуçласан, партизансем ăна отряда илсе кайнă, вĕсемпе пĕрле «Чăваша» сыватнă Стефан хĕрĕ Анели те пынă. Кайран нимĕçсем Стефана персе вĕлернĕ, унăн арăмне Майданек лагерĕнче чĕррĕнех çунтарса янă.

«Чăваш» малтанхи операцие туяпах каять: йăлтах сывалса çитеймен-ха вăл. Унăн ĕçĕ яланах ăнса пынă. «Кĕпепе çуралнă пуль çав «Чăваш». Унсăрăн вăл тахçанах вилме пултарнă», — тенĕ Яков Николаев пирки партизансем.

Ковалев отрячĕ вырнаçнă Парчев вăрманне 1942 çулхи февральте тăшманăн пысăк вăйĕ çавăрса илнĕ. Виçĕ кун та виçĕ çĕр çапăçнă партизансем. СС бригаденфюрер Одель Глобоцнихĕн танксемпе, тупăсемпе хĕçпăшалланнă 3000 çынран тăракан çарĕ партизансене пурпĕрех пысăк сиен кӳреймен.

1943 çулхи апрель уйăхĕнче кĕтмен япала пулса иртет. Гитлеровецсен Францири дивизийĕсене эшелонсемпе Хĕвелтухăç фронтне куçараççĕ. Нумайăшне кунта Люблин, Холи, Луков, Бела-Подляска станцийĕсенче антарса хăвараççĕ. Апрелĕн 21-мĕшĕнче карательсем операци пуçлаççĕ. Унта фашистсен çичĕ пине яхăн салтакĕпе командирĕ, темиçе артдивизион тата çирĕм самолет хутшăнать. Çакă карательсем 1943 çулта Польша территорийĕнче ирттернĕ чи пысăк операци пулнă.

Акă, нимĕçсем тӳперен бомбăсем тăкаççĕ, çĕр çинчен

тупăсемпе ăшалаççĕ, тăшман унки партизансене хĕссех пырать.

«Чăваш» хаваслă хыпар илсе килет: Тысменницы çырмин шурлăхлă-лачакаллă вырăнĕнче, Яма ялĕ çывăхĕнче, тăшман унки татăк. Паттăрсем Тысменницы шывĕ урлă (вăл тарăнах мар), унтан шурлăхлă лачака çиййĕн улăха тухаççĕ. Акă, Яма ялĕнчи çуртсем те палăрма пуçлаççĕ. Çак вăхăтра нимĕç ракетисем çутатса яраççĕ те, гитлеровецсем пулеметран пеме пуçлаççĕ. «Чăвашпа» Юзеф поляк çав пулемета аркатма каяççĕ. Тăшман пур енчен те пеме пуçлать. Отрядăн пĕр пайĕ татăлса юлать. «Теодор Альбрехт» (Федор Ковалева çапла чĕннĕ) сакăрвунă партизанпа, пахчасем витĕр тухса, вăрмана çитсе ӳкет. Татăлса юлнисем йăлтах пĕтрĕç тесе шутлать. Командир вĕсене пулăшма пултарайманшăн чĕререн кулянать. Тамаша! Тепĕр кунне урисем çинче аранаран тăракан «Чăвашпа» Юзеф тата тăватă партизан отряда çитеççĕ. Ковалев ыйтса-туса тăмасть, вĕсене кирлĕ пек канмашкăн тивĕçлĕ майсем туса пама хушать.

«Чăваш» хăйĕн партизанĕсемпе паттăр ĕçсем татах та сахал мар тунă. Тăшманăн Хĕвелтухăç фронтне каякан икĕ эшелонне сывлăша сирпĕтсе аркатни кăна мĕне тăрать!

Русила хуторĕнчен çур çухрăмра Микола Адамюк хăй çемйипе пурăннă. Пирĕн паттăр янташ çакăнта часчасах чарăннă, кунта хăйне килти пекех туйнă. Анчах пĕррехинче унăн отрядне кунта нимĕçсем çавăрса илеççĕ, пулеметсенчен персе, çуртне чĕртсе яраççĕ. Тĕтĕмлĕ çурта нимĕçсем кĕрсен, «Чăваш» юлашки гранатине пăрахать, нимĕçсемпе пĕрле хăй те пĕтет. Çак тамăкран вырăс партизанĕ «Никитăпа» «Мишка» поляк çеç вăрмана тарса ӳкме ĕлкĕрнĕ. Нумай çул иртсен, «Чăваш» мĕнле вилни çинчен çав паттăрсем каласа панă та ĕнтĕ.

Яков Николаев мăшăрĕ Анастасия Константиновна Николаева хăйĕн Эмма ятлă хĕрĕпе халĕ Шупашкарта пурăнать.

ВУНИККĔМĔШ ТĔЛПУЛУ

Эпĕ ĕçрен килме кăна ĕлкĕртĕм — арăм мана çапла хыпарларĕ:

— Сана Иван Корнилович мăшăрĕ Шура хăйсем патне пыма чĕнчĕ.

Ак тата, тем инкек пулман-ши кӳршĕре тесе, эпĕ



Н. И. Ильин, сержант, пулеметчик.

васкасах çăвăнса тасалтăм, çипуçа улăштартăм, чĕннĕ çĕре васкарăм.

Кĕретĕп. Виçĕ пӳлĕмлĕ пысăк хваттерĕн пĕр типтерлĕ пӳлĕмĕнче палламан çын ларать. Çӳллĕ, кĕрнеклĕ, тĕреклĕ. Çине вĕр-çĕнĕ хăмăр костюм тăхăннă, орденсемпе медальсен лентине çакнă.

Эпĕ кĕрсен, çак улăп пек çын сулахай аллипе хыпашласа сĕтел хĕррине тытрĕ, сылтăммине ман еннелле тăсрĕ. Тӳрех ăнлантăм — унăн куçĕ курмасть. Алă парса, хам ята каларăм.

— Питĕ хавас. Эпĕ кунта больницăна килтĕм те сирĕнпе курса калаçма шут тытрăм. Элĕкре пурăнакан пĕр журналист Перемышль хулипе крепоçне хӳтĕленĕ çынсене шырать тесе пĕлтерчĕç мана Çĕмĕрлере çар комиссариатĕнче,— систерчĕ вăл тĕлпулу тĕллевне, мана хăйпе юнашар ларма сĕнчĕ.

Ку çын 1916 çулта Элĕк районĕнчи Пиçенерте çуралнă Николай Ильич Ильин пулчĕ. Вăл сывлăхлă, куçлă-пуçлă чухне ашшĕ-амăшĕ, пĕлĕшĕсемпе юлташĕсем çинчен темиçе тетрадь асаилӳсем çырма ĕлкĕрнĕ. Çав тетрадьсене мана пачĕ. Николай Ильичпа эпир яра кунa тенĕ пекех калаçса лартăмăр. Апла сăмаха аякранах пуçлар-ха эппин.

Илья Игнатьевич Игнатьевпа Анна Семеновна Семенован пилĕк ача пулнă. Коля — тăваттăмĕш. Выçлăх çулхине тĕп апат юман йĕкелĕ, мăян, йăмрапа хурăн кăчки, тĕрлĕ курăк, уткăшкар, уйран çӳпçи пулнă. Кĕçĕнни, Агафи, амăш кăкăрне ĕмнĕ, Кольăна, пĕчĕкки тесе, кашни кун пĕрер çĕрулми икерчи панă. Мĕн пытармалли, курак, чавка, çерçи йăвисенчи çăмартасене пухса пĕçерсе çини те пулнă.

Вунвиçĕ çула çитсен Коля сӳрелеме пуçланă, сухапуç тытнă, вутă хатĕрленĕ, юлташĕсемпе пĕрле лаша çитерме çӳренĕ. Ĕлĕкхи йăлапа, Микул кунĕччен пĕвере,

кӳлӗре е çырмара çичӗ хутчен шыва кӗмелле пулнӑ иккен. Çав йӑлана пӑхӑнса, пӗр çулхине Коля пӑр ирӗлсе пӗтичченех шыва кӗме пуçланӑ та, шӑнса пӑсӑлса, йывӑр чирленӗ, вилӗмрен аран хӑтӑлса юлнӑ. Шкулта вӗреннӗ вӑхӑтрах харсӑр ача колхозра та ӗçленӗ. Çичӗ класс пӗтернӗ хыççӑн ӑна малтан конюх, унтан аслӑ конюх туса хураççӗ. Часах вӑл виçӗ уйӑхлӑх курсран вӗренсе тухать те колхоз счетовочӗ пулса тӑрать, каярах комсомол ретне кӗрет. Бухгалтерсем хатӗрлекен ултӑ уйӑхлӑх курсран вӗренсе тухсан, 1939 çулта Хӗрлӗ Çара иличенех Тавӑтри ялпора бухгалтерта ӗçлет.

— Эшелон Брянск хулине çитсе чарӑнсан, шурӑ финсем пирӗн Тӑван çӗршыв çине тапӑнни çинчен пӗлтерчӗç. Эпир, хамӑр вагонти çамрӑксем, çавӑнтах канашларӑмӑр та, хамӑр ирӗкпе финсемпе çапӑçмашкӑн яма ыйтса, заявлени çыртӑмӑр, ӑна эшелон начальникне патӑмӑр. Ытти вагонрисем те çаплах тунӑ иккен. Анчах пирӗн ыйтӑва тивӗçтермерӗç, — аса илет ватӑ салтак.

Житомир облаçӗнчи Бердичев хулинче çамрӑксене казармӑсене вырнаçтараççӗ, карантин срокӗ иртнӗ хыççӑн, мунча кӗртсе, салтак тумӗ тӑхӑнтартаççӗ. Ильина стрелковӑй полка яраççӗ. Ку полкра тӗрлӗ наци ывӑлӗсем нумай пулнӑ. Ытларахӑшӗ узбексемпе таджиксем, туркменсем. Куптан вӗсене Мелитополе, унтан Чудно-Волынска, юлашкинчен Перемышль хулипе крепоçне илсе пыраççӗ. Ак япала: Ильин 99-мӗш дивизири 1-мӗш полка, 1-мӗш батальона, 1-мӗш ротӑна, 1-мӗш отделение лекет. Ку ротӑра 17 наци ывӑлӗ пулнӑ. Чылайӑшӗ аслӑ шкулсенче вӗреннӗ учительсем, инженерсем. Ильина рота писарӗ туса хураççӗ. Тепри пулсан савӑнсах каймалла: заняти таврашне каясси, стройпа çӳресси, хӗçпӑшал йӑтса асапланасси çук, лар штабра саркаланса. Анчах чӑваш ачи Микула ун йышши пулман. Кӑнтӑрла юлташӗсемпе пӗрле пур занятисене те çӳренӗ, писарь ӗçне каçпа туса пынӑ. Турник çинче тӗрлӗ упражнени тӑвассипе унӑн ӗçсем питех ӑнӑçман, анчах ыттисемпе пуринчен те малта пынӑ. Уйрӑмах винтовкӑран тӗл пересспипе палӑрнӑ. Çавна май ӑна снайпер винтовкине шанса панӑ. Йӗлтӗрпе 20 е 25 километр чупмалли кроссенче вӑл полкра 1-мӗш е 2-мӗш вырӑнсене йышӑннӑ.

Полка çӗнӗ техника — минометсем килсен, ротӑсенче минометсен отделенийӗсем туса хураççӗ. Ильин та минометчик пулса тӑрать.

Акӑ «Роман-газета» журналӑн 1983 çулхи 2-мӗш номерӗ. Унта Евгений Долматовскин «Зеленая брама»

(«Симĕс хапха») ятлă документлă легенди пичетленнĕ. Автор августăн 9-мĕш кунне çапла çырса кăтартать: «Халĕ ĕнтĕ кĕрешӳ ункăран тухассишĕн мар, хăв пурнăçна хаклăрах парассишĕн çеç пырать. Тăшман аллине пĕр япала та лекмелле мар: снарядсемсĕр юлнă тупăсене, пушă баксемпе, çĕтĕк скатсемпе юлнă автомашинăсене, пĕтĕм техникăна, штабри пичетлемелли машинкăсем таранах аркатаççĕ. Çынсем миçе талăк çименнине, çывăрманнине калама йывăр... «Симĕс хапхаран» çăлăнса тухма пултарнă отрядсемпе ушкăнсем халĕ ĕнтĕ тăшман тылĕнче вырăнтан вырăна куçса çӳреççĕ...» Çав пĕчĕкçеç ушкăнсенчен пĕринче пирĕн янташ Николай Ильин стрелок-минометчик та çĕр çинчи тамăк хуранĕнче вĕренĕ, çапах та тăшмана парăнман.

Вилĕм ункинчен темле асамлă вăйпа çăлăнса тухнă виçĕ çын пĕр çирĕп чăмăр пулса тăрать. Пĕрремĕш рота командирĕ Игнатьев аслă лейтенант, Кизилов сержант тата Ильин хĕрлĕ армеец. Вĕсем виççĕшĕ те пĕр шухăшпа, пĕр ĕмĕтпе пурăнаççĕ, пĕр сывлăшпа сывлаççĕ, çимелли тавраш тупăнсан, ăна пĕр тан валеçсе çиеççĕ. Сăмах Николай Ильича паратпăр.

— Темиçе çĕре вырнаçтарса лартнă репродукторсем кĕрлесе тăчĕç. Вĕсем ункăран тухма ĕлкĕрнисене парăнма чĕнеççĕ. Ирĕкпе парăнсан, çăтмахри пурнăçпа пурăнма пуçлатăр, парăнмасан, пире ан ӳпкелĕр — чĕр тамăка лекетĕр, теççĕ. Çутăлса çитсен, пирĕн еннелле фашистсен пысăк ушкăнĕ кашкăр кĕтĕвĕ пек çуйхашса килнине асăрхарăмăр. Пирĕн тавра вилнĕ салтаксемпе командирсен шучĕ те çук. Вĕсем хушшине эпир те «вилсе» выртрăмăр: аслă лейтенант пистолетĕнче те, пирĕн автоматсенче те пĕр патрон та çук. Нимĕç эшкерĕсен ушкăнĕ вилнисене, çав шутрах пире те, таптаса, кулса-шавласа иртсе кайрĕ. Хĕвел çӳлтен çӳле хăпарать, хĕртнĕçемĕн хĕртме пуçлать. Кăнтăрла иртсен шутсăр ĕçес киле пуçларĕ. Эпир çаплах вилнĕ пек хускалмасăр выртатпăр. Çапла каç пулчĕ. Рота командирĕ хушнипе эпир вилнисен медальонĕсене кăлара-кăлара илтĕмĕр. Кам пĕлет, тен, хăçан та пулсан пире çав çынсен тăванĕсене çырса пĕлтерме те тӳр килĕ.

Пластунла шуса, унтан пĕшкĕнсе чупса, эпир пысăк мар вăрмана çитсе ӳкрĕмĕр. Кунта, пĕр пĕчĕк çырма тĕпĕнче, çăл тупса, тăраниччен ĕçрĕмĕр. Вара пысăк юман айне çывăрма выртрăмăр. Иккĕн çывăратпăр, виççĕмĕшĕ сыхлать. Виçсĕмĕр те черетленсе канатпăр. Манăн çумран хăпман противогаз сумкинче телее тенĕ пекех

пĕр татăк сысна çăвĕ тата икĕ концентрат пурччĕ. Сысна çăвне тс, концентрата та виçĕ пĕр пек пая пайларăмăр, çăкăрсăр-мĕнсĕр чĕрĕллех çисе ятăмăр. Унтан куплпех вăрман тăрăх çӳрерĕмĕр. Вăрманăн пĕр хĕррине, тепĕрне, виççĕмĕшне çитсе тухатпăр — пур çĕрте те нимĕçсем. Пĕрисем çуран утаççĕ, теприсем мотоциклсемпе, грузовиксемпе тухăçалла васкаççĕ. Вăрман хĕррипе окопсемпе блиндажсем. Вĕсене кĕре-кĕре пăхатпăр. Кĕриччен рота командирĕ малтан вырăсла, унтан нимĕçле: «Кам пур, тухăр!» — тесе кăшкăрать. Çаплах вăрман тăрăх çӳретпĕр-ха. Акă, унтан та кунтан пирĕн салтаксем сике-сике тухма пуçларĕç. Ытамлашатпăр, чуптăватпăр. Каç пулнă тĕле пирĕн ушкăн вунçичĕ çынна çитрĕ. Пĕтĕм ушкăнпа вăрман хĕррине çитсе тухрăмăр. Пăхатпăр: инçех те мар, вăрмантан çур çухрăмра, пирĕн виçĕ совет автомашини ларать. Калаçса татăлтăмăр: тĕттĕм пулсан çавăнта çитсе ӳкмелле. Автомашинăсем патне çитме çирĕм-вăтăр метр çеç юлнăччĕ, сасартăк фарăсем çутатса ячĕç. Эпир нимĕн те курмастпăр. Çав хушăра пире нимĕçсем хупăрласа та илчĕç. Тӳрех ăнлантăмăр — ку вăл ултавлă серепе пулнă. Пире çырмана хăваласа антарчĕç. «Тарас тесе ан шутлăр. Йĕри-таврах пирĕн хурал», — пĕлтерчĕ пире пĕри вырăсла. Чăнах та, тăватă кĕтесрен черетпе кашни пилĕк минутра автоматран сывлăша переççĕ. Ку вăл августăн 29-мĕшĕнче пулчĕ. Апла эпĕ вăрçăра 68 кун пулнă. Пĕр кунĕ те тытăçусăр-çапăçусăр иртмен.

Ирхине пăхатăп та тĕлĕнсех каятăп: кунта эпир кăна мар иккен, çак серепене икçĕр çын ытлашшипех лекнĕ.

Пире тимĕр кĕреçесем пачĕç те стройпа Высоцкий хули еннелле хăваласа кайрĕç. Ак тамаша, мĕн япала, мĕн куратпăр эпир? Асар-писер тăвăл вăхăтĕнче вăрманти йывăçсем урлă-пирлĕ йăваннă пекех, пирĕн салтаксемпе командирсен виллисем выртаççĕ. Пире, виçшерĕн-виçшерĕн уйăрса, шăтăксем чавтарчĕç. Хамăрăннисене хамăрах икĕ кун хушши пытартăмăр. Нимĕçсем автоматсемпе аякра тăраççĕ: кунта чăтмалла-тӳсмелле мар йывăр шăршă сăмсана перет.

Виççĕмĕш кунне пире, икçĕре яхăн çынна, этап тăрăх анăçалла илсе кайрĕç. Эпир, виçĕ юлташ, виçĕ ĕмĕр манми тус, пĕрле, пĕр чăмăрта. Аслă лейтенант вăрмантах рядовой салтак пек пулса тăчĕ — кубикĕсемпе чĕн пиçиххине аяккалла ывăтрĕ, брезент пиçиххи çыхрĕ.

Этап тăрăх пынă май, пирĕн строя çĕнĕрен те çĕнĕ ушкăнсем хушăнаççĕ. Каç пулнă тĕле тăватçĕр çынна

яхăн пухăнчĕ. Пĕр ялта лаша витине хупса хучĕç. Ирхине, ял витĕр тухнă чухне, стариксемпе хĕрарăмсем пире панулми, хăяр, чĕкĕнтĕр пăрахса пачĕç, анчах вĕсене стройран тухса илме юрамасть иккен. Эпĕ хăтланса пăхрăм та, мана çавăнтах купарчаран прикладпа шаплатарчĕç. Иккĕмĕш кунне уй варринче çĕр каçрăмăр. Ирхине каллех конвойпа анăçалла хăваласçĕ. Строй хушăнсах пырать. Каç пулнă тĕле пин çынна та çитрĕ пулĕ. Виççĕмĕш кунне пире Умань патне илсе çитерчĕç.

Евгений Долматовский хăйĕн «Зеленая брама» кĕнекинче «Умань шăтăкне» çапла çырса кăтартать:

«Украина çĕрĕ çинчи концлагерь — Умань шăтăкĕ, пирĕн халăхăн асапĕпе терчĕ, хĕн-хурпа хурлăхĕ — фашизм палачĕсен историйĕнчи хура кĕнеке çине ĕмĕрлĕхех çырăнса юлнă... Вилĕм фабрики 1941 çулхи август пуçламăшĕнче ĕçлеме пуçланă. Тыткăнрисем уçă пĕлĕт айĕнче, çара çĕр çинче. Йывăр сураннаннисем унччен кирпĕч типĕтнĕ сарайсенче. Кухньăсем те, уборнăйсем те çук. Кунта Подвысоцкое ялĕ, «Симĕс хапха» таврашĕнче паттăрла кĕрешнĕ, халĕ тыткăна лекнĕ 6-мĕшпе 12-мĕш армисенчи хĕрлĕ армеецсемпе командирсене илсе килсе хупнă... Вĕсен шучĕ 74 пине çитнĕ. Çулталăк хушшинче çакăнти çынсен 80 процентне яхăн е чирпе, е суранпа, е выçă вилнĕ».

Долматовский Нюрнбергра Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕнче 1945 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнче хурал ротин командирĕ ыйтусем çине мĕнле ответленине илсе кăтартать.

«ЫЙТУ. Тыткăнрисене ăçта вырнаçтарнă?

ОТВЕТ. Ăçта вырнаçтарнă тесе калама май çук пулĕ. Кирпĕч типĕтмелли сарайсенче йывăр сураннаннă 200—300 çын пулнă. Ыттисем йăлтах уçă пĕлĕт айĕнче.

ЫЙТУ. Ку лагерьте мĕнле режим пулнă?

ОТВЕТ. Лагерьте çирĕп режим пулнă теме çук. Лагерь комендантчĕ Боккор капитан йĕрке тума та, унти халăха тăрантарма та пултарайман... Ку лагерьте тĕп вăй чукмар пулнă.

ЫЙТУ. Ку лагерьте вилнисем пирки мĕн калама пултаратăр?

ОТВЕТ. Лагерьте кунсерен 60—70 çын вилетчĕ. Апат валеçнĕ вăхăтра та... Пĕтĕмĕшпе илсен, талăкĕпех вĕлеретчĕç...»

Малалла Долматовский трибунал протоколĕн пĕр вырăнне илет: «...Тыткăнрисенчен нумайăшĕ Киевпа Умань таврашĕнче паттăрла кĕрешнĕ çынсем пулнă...»

Тылри районсен начальникĕ трибуналта çапла каланă: «1942 çулхи январĕн 13-мĕшĕ тĕлне лагерьте тыткăнрисен хисепĕ 46 371 çын шутланнă... Вилнисен шучĕ пысăк пулнине пула, апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне унта 15 пин çын çеç юлнă...»

Нюрнберг тĕрминче ларакан Гальдер генерал-полковникран çапла ыйтнă: «Вăрçă умĕнхи канашлура Гитлер сире мĕн каларĕ?»

ГАЛЬДЕР. Российăпа Германи хушшинчи кĕрешӳ вăл — расăсем хушшинчи кĕрешӳ. Вăл çапла хушрĕ: вырăссем Гаагăра йышăннă конвенцие йышăнмаççĕ, эппин, вĕсен тыткăна лекнĕ çыннисем тĕлĕшпе ку конвенцие пăхăнмалла мар.

Тыткăна лекнĕ совет салтакĕсемпе офицерĕсене фашистсем тĕрмене пысăк айăппа лекнисем, приговорпа çакса вĕлермеллисем вырăнне хурса асаплантарнă.

Нюрнбергри процесра Совет Союзĕн тĕп айăплаканĕ пулнă Роман Андреевич Руденко «Правда» хаçатра 1969 çулхи мартăн 24-мĕшĕнче çапла çырнă: «Оккупацие лекнĕ СССР территорийĕнче кăна фашистсем Совет çĕршывĕн тыткăнри 3 912 283 салтакĕпе офицерне персе е асаплантарса вĕлернĕ...»

«Çынсем мар вĕсем, çынсем мар — фашистсем», — тесе çырать Евгений Долматовский.[1]

Н. И. Ильин çапла каласа парать:

— Умань шăтăкĕнче эпĕ шăп та лăп пĕр эрне пурăнтăм. Çак хушăра миçе çын вилчĕ-ши е персе пăрахрĕç-ши унта? Çĕршер кăна мар, пиншерĕн пĕтрĕç. Апат панă чух пĕр-пĕрне таптанипе-хĕстернипе те нумай вилетчĕç. Эпĕ унта çитиччен миçе пин çын, эпĕ кайсан тата мĕн чухлĕ совет çынни пĕтмен-ши унта?! Ахальтенех «Вилĕм шăтăкĕ» тесе ят паман ĕнтĕ ăна.

Репродуктор каласма пуçларĕ. Вырăсла тап-таса каласать диктор. Автомехаником сене, пĕрремĕшпе иккĕмĕш класлă шоферсене тата тимĕрçĕсене шăтăкран çӳле хăпарма хушрĕç. Паллах, эпĕ нимĕнле тимĕрçĕ те мар, анчах мĕн пулать те мĕн килет тесе, ыттисемпе пĕрле эпĕ те хăпартăм. Часах пире (пурĕ çĕр çынна яхăн) хула хĕрринчи икĕ хутлă çуртăн çӳлти хутне вырнаçтарчĕç. Кунта çав кунах Куйбышев облаçĕнче çуралса ӳснĕ Саша ятлă салтакпа паллашрăм. Туслашсах кайрăмăр. Виççĕмĕш кунне хамăн вăрттăнлăха уçса патăм. Вăл

[1] Долматовский Е. Зеленая брама. М., 1985. С. 174—176.

мана: «Ан пăшăрхан. Сутмастпăр сана. Пĕрле хăнăхатăн», — тет.

Кунта пĕр эрне усрарĕç. Кунне виçĕ хутчен пиçсе çитмен хывăхлă вир, çакнашкал хуратул параççĕ. Хурал вăйлă пулин те, сывлăш уçă, шыв çителĕклĕ. Шăтăкрипе танлаштарсан, çăтмах темелле.

Эрне иртсен, пире витнĕ автомашинăсем çине лартрĕç те тухăçалла илсе кайрĕç. Эпир — Кировоград хулинче. Пире виçĕ хутлă çуртăн çӳлти хутне вырнаçтарчĕç, унти пĕчĕк-пĕчĕк пӳлĕмсене çапса хĕснĕ пек тултарчĕç. Ирхине тăнă çĕре сывлама сывлăш çитмест. Çитменнине, çавăнтах парашăна тула тухмалла.

Пире гаражра ĕçлеттерме пуçларĕç. Кивĕ, çĕмрĕк машинăсене çăватпăр, сӳтетпĕр. Кашнинех пĕр нимĕç мастер çумне çирĕплетрĕç. Ватă нимĕççем пирĕнпе лайăхчĕ. Вăрçмастчĕç, ятлаçмастчĕç. Çамрăккисем вара, ай тур-тур! Тӳссе кăна тăр.

Каярах пире, çирĕм пĕр çынна, пурăнма гаража куçарчĕç. Çĕрле тул енчен пысăк çăрапа питĕрсе илеççĕ. Хурал та вăйлă сыхлать. Ноябрь уйăхĕнче мана ĕçлеме тимĕрçĕ лаççине куçарчĕç. Кунта икĕ чех ĕçлет. Ватти— ăста тимĕрçĕ, çамрăкки — мăлатукпа çапса тăраканни. Пыра-киле эпĕ те мăлатукпа ĕçлеме хăнăхрăм.

Тыткăнри совет салтакĕ мĕн тӳссе ирттернине хăй унта пулнă, пĕтĕм йывăрлăха тӳссе ирттернĕ çын çеç чунĕпе те чĕрипе пĕлет. Вĕсен пурин те пĕр шухăш, пĕр тĕллев пулнă: тыткăнран мĕнле те пулин тарса, хамăрăннисем патне çитмелле, вĕсемпе пĕрлешмелле, вара тепĕр хут фашистсемпе чĕре тапма чарăниччене кĕрешмелле.

Ильин хамăрăн янташпа — Ишлей районĕнче çуралса ӳснĕ Жирнов шоферпа туслашать. Иккĕшĕ, меллĕ вăхăт тупса, гаражран тараççĕ. Сывăхри çырма тăрăх чупаççĕ, пĕчĕкçеç вăрмана çитсе ӳкеççĕ. Ирхине вĕсем вăрман хĕрринчи тулă уйĕнче сурат ăшне кĕрсе выртаççĕ. Тулă пучахĕсене шĕкĕлчесе çиеççĕ. Акă, вĕсем патне гражданла тумланнă икĕ çын пырать.

— Эпир партизансем. Сире хамăр пата илсе каятпăр, — шантараççĕ çаксем.

Кусем ĕненеççĕ, лаштах сывласа яраççĕ. Тинех пирĕн телей, пирĕн ĕмĕт çитрĕ теççĕ. Анчах лешсем полицайсем пулнă. Вĕсем Ильинпа Жирнова партизансем патне мар, нимĕççен штабне илсе кайнă.

Тыткăнрисен хĕн-асапĕ, нушипе тертленĕвĕ, вĕсен çын ĕненмелле мар паттăрлăхĕ, тӳсĕмлĕхĕ çинчен пай-

тах кĕнеке çырнă, çыраççĕ, ĕмĕр-ĕмĕрех çырĕç —çырса пĕтереймĕç.

Кун хыççăн кун иртет. Перемышль паттăрне, Николай Ильина, Австрин Дунай шывĕ хĕрринчи Кремс хулинех илсе каяççĕ. Кунти асап-нуша çинчен çырмастăп. Кĕскен çеç калатăп. Вĕсене, фашизмăн хăрушăран та хăрушă асапне тӳснĕ, тыткăнра вăй-халран кайнă, ура çинче аран тăракан таса чунлă çынсене, Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă.

Тыткăнран хăтăлнă совет воинĕсене çав Кремс хулинчех кирлĕ органсем тĕплĕ тĕрĕслеĕ, вĕсем таса чунлă чăн-чăн совет патриочĕсем пулнине палăртсан, Тăван çĕршыв умĕнче тепĕр хут тупа тутарнă, алă пустарнă.

— Пирĕн хушăра çакнашкал сăмах сарăлчĕ: халĕ анăçра вăрçă пĕтрĕ; тухăçри самурайсене пĕтеретпĕр те, вара çĕр çинче ĕмĕрлĕхех мир пулать. Эпир, миçе кун, миçе уйăх, миçе çул юн юхтарнă совет салтакĕсем, Австри, Венгри, Румыни ялĕсемпе хулисем витĕр юрă юрласа, çирĕп утăмсемпе утса тухрăмăр. Хамăрăн государство чиккинче чарăнса, тепĕр хут тупа турăмăр: «Тăван çĕршыв-анне, пире, хăвăн ывăлусене, шан. Эпир сана нименле тăшмана та памастпăр!» — терĕмĕр. Çак вăхăтра репродуктортан «Сарлака ман Тăван çĕршывăм» юрă янăраса кайрĕ. Эпир савăнса-хĕпĕртесе алă çупрăмăр.

Тăван çĕршыва, тăван ялне Николай Ильич 1945 çулхи июньте таврăннă та тӳрех çара кайиччен вăй хунă Тавăтри ялпора бухгалтерта ĕçлеме пуçăннă. Каярах пурăнма Çĕмĕрлене куçнă, кунта та пенсие кайиччен бухгалтери енĕпе вăй хунă.

ÇЫРУ ТĂРĂХ ПАЛЛАШНИСЕМ

Перемышле хӳтĕленĕ паттăрсене шыранă май мана чылай çыру çырма тиврĕ. Вĕсем çийĕнчех хуравларĕç. Хашĕ-пĕри 10—12 страница таранах çырса ячĕ. Ытларахăшĕ хăйсем патне пыма чĕнеççĕ, вара тĕплĕ калаçса ларăпăр теççĕ.

Малтанах Етĕрне районĕнчен килнĕ икĕ çырупа паллашар. 1918 çулта Лапракассинче çуралса ӳснĕ, халĕ те унтах пурăнакан Николай Васильевич Могонин чăвашла, Палтайран Иван Борисович Охтярев вырăсла çыраççĕ.

Николай Васильевич Перемышле мĕнле хӳтĕленине, мĕнле чакнине, ăçта-ăçта пулнине йăлтах тĕрĕс çырса кăтартать.

Хăйĕн вăрçă хыççăнхи пурнăçĕ пирки те çырма манман. Вăл яла 1946 çулхи май уйăхĕнче таврăннă. Советски МТСĕнче ултă çул трактористра вăй хурать. Премисем илме тивĕç пулать. Каярах тăван ялĕнчи «Вперед» колхозра кладовщикра ĕçлет, МТФра çĕрлехи хуралта тăрать, çав хушăрах çичĕ лаша пăхать. Унăн çемйи те питĕ ĕçчен иккен. Мăшăрĕ, Юлия Максимовна, хăмла пахчинче ĕçлет. Аслă ывăлĕ Валерий — летчик, аслă лейтенант, хĕрĕ Зина — Шупашкарти паллă каменщица. Унăн сăнӳкерчĕкĕ яланах Хисеп хăми çинче. Кĕçĕн ывăлĕ Петр вăтам шкулта вĕренет.

Пĕтĕм çыру тăршшĕпех оптимизм туйăмĕ тапса тăрать. Апла Николай Васильевич — пурнăçра телейлĕ çын. Фашистсемпе ахаль çапăçман вăл.

Иван Борисович Охтярев — учитель. Ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Ăста, илемлĕ, тĕрĕс çырать вăл. Унăн çырăвне пĕр улăштармасăр, пĕр кĕскетмесĕр куçарса пичетлесен те аванччĕ, анчах унта эпир малта каланă фактсем тепĕр хут тĕл пулаççĕ. «Çапла, вăрçăччен эпĕ 99-мĕш дивизири 197-мĕш полка кĕрекен 2-мĕш батальонри 2-мĕш ротăра пулеметчикчĕ. Шăпах вăрçă пуçланас умĕн кĕçĕн сержант ятне пачĕç те 2-мĕш батальонăн писарĕ туса хучĕç. Пирĕн батальона çуллахи лагере ямарĕç. Вăл хĕллехи казармăсенчех юлчĕ. Пирĕн казармăсем Перемышль хулин хĕвелтухăç енче, Тутар тăвĕсемпе юнашарахчĕ. Пиртен хĕвелтухăçнерех, пĕр çухрăмра, виçĕ тăванла вилтăпри пурччĕ. Унта пĕрремĕш тĕнче вăрçинче, тăшман оборонине Брусилов планĕпе татса кĕнĕ чухне вилнĕ пирĕн аттесемпе асаттесене пытарнă. Тĕмесен тăршшĕ сахалтан та çĕр метр. Вĕсем мĕн халичченех ман куç умĕнче тăраççĕ.

Охтярев Ясса патĕнчи çапăçăва хутшăннă, кунта III степень Мухтав орденĕ илме тивĕç пулнă. Уринчен суранланса госпитальте выртнă хыççăн каллех хăйĕн чăн таврăннă. Венгрире, Чехословакире çапăçнă, Венăна ирĕке кăларассишĕн çапăçăва хутшăннă, Комарно патĕнче контузи пулнă. Вăрçа Линц çывăхĕнче вĕçленĕ. Ана «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă.

М. А. АЛЕКСЕЕВĂН ИКĔ ÇЫРĂВĔ

Пĕрремĕш çыру

«Хаклă юлташăм, вăрçăри тусăм Меркурий Владимирович, сывă-и? Аллăра парăр. Сирĕн çырăвăрпа посылкăра илтĕм. Вĕсемшĕн чĕререн тав тăватăп. Пĕр полкра çапăçнă туссене, уйрăмах сирĕнпе Киев хулинче тĕл пулнине, ĕмĕрне те манмастăп. Чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе калаçса манпа пĕрле сăпайлă çӳренĕшĕн мĕнле тав тумаллине те пĕлместĕп сире. Сăмах майăн каласан, эпĕ нумай чăвашпа çакнашкал туслă пурăннă. Пирĕн саперсен батальонĕнче çав тери культурăллă, питех те нумай пĕлекен Федоров хушаматлă чăваш пурччĕ. Вăл нимĕçле нимĕç пекех таса калаçатчĕ, çав хушăрах хăй тĕллĕн акăлчан чĕлхине вĕренетчĕ. Казармăра-и, окопра-и, кăвайт умĕнче-и — унăн аллинче яланах кĕнекеччĕ. Пĕр сăмахпа каласан, ăçта кăна май пур — çавăнта. Анчах, шел пулин те, эпĕ унăн малаллахи шăпине пĕлместĕп. Ăна ураран суранлатнăччĕ. Вăл халиччен нихăш писатель те çырса кăтартман чăн-чăн геройччĕ. Кĕрнеклĕ, пĕвĕпе, сан пекех, чутах икĕ метр пулмастчĕ.

Эпĕ çапла шутлатăп. Çулсем, вуншар çулсем иртĕç, пирĕн 99-мĕш дивизин чапĕ, Чапаевăн 25-мĕш легендарлă дивизийĕн чапĕ пекех, ӳссе, хăпарса, сарăлса пырĕ. Унăн историне, унти чăн-чăн паттăрсен ячĕсене ученăйсем тĕпчĕç, кĕнекесем çырĕç. Çакна эпĕ чĕререн шанса, ĕненсе тăратăп.

Хисеплĕ Меркурий, çавăн пек мухтавлă дивизире службăра пĕрле пулни, иксĕмĕр тăшманпа улăпла кĕрешни — пысăк хисеп. Эпĕ сана хăвăр республикăра çав тери хисеплĕ çын, пур тĕлĕшпе те ятлă-сумлă çын тесе шутлатăп.

Институт пĕтернĕ хыççăн, 1956 çултанпа, эпĕ учительте ĕçлетĕп. Мана Ленин орденĕ, ЯАССР тава тивĕçлĕ учителĕ ятне, РСФСР тата ЯАССР Верховнăй Совечĕсен Президиумĕсем Хисеп грамотисем парса чыс турĕç. Эпĕ кунта та 99-мĕш дивизири пекех ĕçлетĕп. Урăхла пулма та пултараймасть. Хам вĕрентекен ачасемшĕн пур тĕлĕшпе те хамăрăн командир Смуглый капитан пек пулма тăрăшатăп.

Миша ывăлăмпа Роза хĕрĕм иккĕшĕ те лайăх вĕренеççĕ.

Пур тĕлĕшпе те телейлĕ пулăр. Ырлăх-сывлăх сунса — М. А.»

Çак çырăва мана М. Никифоров вулаттарчĕ. Эпĕ ăна калатăп:

— Чим-ха, чим, Меркурий Владимирович, 99-мĕш дивизи пирки сирĕн шкулти «Чайка» клубра та, манăн хамăн та материалсем нумай пухăнчĕç. Комсомолăн пĕрпĕр активисчĕ çинчен тĕплĕ каласа паракан лайăх материал çук вара.

— Акă çак çырăва çыраканĕ — якут каччи. Саперсен уйрăм батальонĕнчи комсомол организацийĕн секретарĕ. Батальонта вара йăлтах çамрăксемччĕ. Унта чăвашсем те нумайччĕ. Маттурччĕ, паттăрччĕ. Лар та халех сăрла. Алексеев Михаил Андреевич вăл, — хистерĕ Никифоров. Эпĕ çав кунах Алексеев патне çыру çырса ятăм. Часах унран машинкăпа пичетленĕ 18 страницăллă çыру илтĕм. Эпĕ ăна выränĕ-выränĕпе çаплипех хăвартăм, хăшпĕр выränсене кĕскетсе каласа паратăп. Пĕтĕмпех пичетлеме вăрăмрах.

Иккĕмĕш çыру

«Хисеплĕ Пласкин юлташ, Перемышль хулине хýтĕленĕ çынсемпе интересленнĕшĕн чĕререн тав сире», — тенĕ унта чи малтанах. Унтан хăй çинчен çырнă. Вăл Якут АССРче Вилюйск районĕнчи Ваппачайск ялĕнче 1917 çулта чухăн çемьере çуралнă. Ашшĕпе амăшĕ 1923 çулта пĕр вăхăтрах шатраллă тифпа вилсе кайнă. Государство пулăшнипе Михаил педтехникум вĕренсе пĕтернĕ, 1932 çулта комсомола кĕнĕ. 1939 çулта ăна Хĕрлĕ Çар ретне илеççĕ. Вăл саперсен уйрăм батальонне лекет. Çитсенех комсомол комитетне суйлаççĕ, часах старшина-политрук ятне параççĕ. Алексеев — 1941 çулта парти членĕн кандидачĕ.

«Фашистсен пĕрремĕш снарячĕсемпе бомбисен тискерлĕхне пирĕн курса тýсмелле пулчĕ. Фашистсем, чăн-чăн вăрă-хурахсем пекех, пирĕн çĕршыв, пирĕн чикĕри Перемышль хули çине ним систермесĕр тапăнчĕç. Батальон штабĕн начальникĕ Петр Иванович Смащеров çичĕ лаша кýлме хушрĕ. Лавсем çине çар хатĕрĕсем тиесе, Германовичи вăрманне турттарса каймалла. Ку манăн çапăçури пĕрремĕш задани пулчĕ. Эпир, ППД, пистолетсем, гранатăсем, пулеметсем, патронсем тиесе, çитес çĕре çитрĕмĕр. Çак ĕçсем йăлтах таврара

снарядсемпе бомбăсем çурăлнă вăхăтра пулчĕç. Каçхине, 6 сехетре, тепĕр задани. Пирĕн, 13 комсомолецăн, Вара лейтенант ертсе пынипе, Мостиска хули патĕнчи кĕпере аркатмалла, кайран кирлĕ вырăна минăласа хăвармалла. Ку операци те ăнăçлă иртрĕ.

Пирĕн саперсен пĕрремĕш роти йăлтах кадрти комсомолецсенчен тăратчĕ. Рота автоматсемпе, пулеметсемпе тата 45 миллиметрлă икĕ тупăпа хĕçпăшалланнăччĕ. Тепĕр кунне, 99-мĕш дивизин ытти полкĕсемпе уйрăм чаçĕсем килсе çитиччен, çав тупăсем питех те кирлĕ пулчĕç. Тӳрĕ наводкăпа пенĕ картечь нумай фашистсене леш тĕнчене ячĕ. Перемышльти çапăçусенче çĕршер фашист пĕтрĕ. Пирĕн те çухату сахал пулман. Хамăрăн пĕрремĕш ротăран çеç 13 комсомолеца çухатрăмăр. «Боевой листоксен», дивизи хаçачĕн кашни номерĕнчех саперсен хушамачĕсене курма пулатчĕ. Комсомолецсен пĕр ушкăнне, мана тата Вара лейтенанта Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ пама тăратнăччĕ. Июнĕн 25-мĕшĕнче дивизири комсомол активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Кунта пирĕн ротăри комсомолецсем мĕн тери хăюллă кĕрешнине уйрăмах палăртрĕç. Çакă пире чĕререн савăнтарчĕ, малашне тата хăюллăрах пулма вăй пачĕ.

Эпир чикĕ урлă каçма ирĕк паракан приказ кĕтнĕччĕ, пире вара чакмалли приказ пачĕç. Саперсене ответлă приказ пулчĕ: Сан урлă хывнă тимĕр кĕпере аркатмалла. Пирĕн артиллери вĕçĕ-хĕррисĕр пеме пуçларĕ — тăшман Хĕрлĕ Çар наступление каясшăн иккен тесе шутлатăр. Çакăнпа усă курса, эпир, комсомолецсем, кĕперĕн сылтăм енне йăлтах аркатма ĕлкĕртĕмĕр. Дивизи чакма июнĕн 29-мĕшĕнче çутăласпа пуçларĕ. Кунта каллех пире, сапер-комсомолецсене, ответлă ĕç шанса пачĕç. Пĕтĕм дивизи фронт линийĕнчен тухасса кĕтмелле, пирĕн кайран, команда илсен, хула хĕррине минăлама тытăнмалла. Минерсем пурте минăсем лартма пуçларĕç. Ку ĕç питех те ответлă, çав хушăрах шиклентерет те. Эпир хамăрăннисенчен татăлса юлма пултаратпăр. Чăн та, пирĕн урлă фашистсем çинне нумай тупă персе тăрать, çав хушăрах нимĕçсен снарячĕсем те пирĕн таврарах ӳксе çурăлаççĕ. Пирĕн батальон командирĕ Смуглый капитан яланхи пекех халĕ те кунтах, пирĕнпех. Вăл пире нихçан та ятламан, вилĕм умĕнче тăнă чухне пĕр салтака та пăрахса хăварман. Унăн пичĕ çинче яланах кăмăллă кулă палăратчĕ. Хура çӳçлĕ, илемлĕ, ăслă командирăн темле асамлă вăй пурччĕ. Ана такам та пĕрре курнипех юратса пăрахмалла. Шӳтлесе те хи-

сеплесе, эпир ăна батальон командирĕ мар, дивизи командирĕ теттĕмĕр... Акă, эпир юлашки минăсене чавса хутăмăр. Вăрманта пире ЗИС-5 машинăпа Иван шофер кĕтет. Ку вăхăт тĕлне фашистсем Сан урлă ҫăмăллăнах каҫма пуҫларĕҫ. Юнашар вăрмантан пирĕн ҫывăхрах автоматсенчен пени илтĕнсе кайрĕ. Сывлăшран разведчик-самолет пулеметран пеме пуҫларĕ. Анчах капитан пур чухне пире нимĕн те хăрушă мар. Çул çине тухатпăр та хамăрăннисем патне васкатпăр. Машина вĕçнĕ пек пырать. Ивана ĕнтĕ эпир тахҫанах шофер-истребитель тесе чĕнетпĕр. Пĕр сехет ытла каятпăр, анчах хамăрăннисем çаплах курăнмаççĕ-ха. Малалла! Машина полковник патне çитсе чарăнчĕ, капитан ăна приказа пурнăҫлани çинчен пĕлтерчĕ. Дивизи командирĕ Григорий Спиридоновича ыталаса чуптурĕ те: «Тавтапуҫ. Сирĕн пек ҫынсемпе эпир ҫĕнтеретпĕрех!» — терĕ.

Вăрҫă пуҫлансан чи йывăр самантсенче те эпир çухалса каймарăмăр. Пирĕн тĕллев паллă — эпир хамăрăн Тăван ҫĕршыва, тĕнчери пĕртен-пĕр пролетари государствине хŭтĕлетпĕр. Çакна эпир вăрҫăн малтанхи кунĕсенчех нихҫанхинчен те тарăн ăнланса илтĕмĕр. Тăван ҫĕршыв пирĕншĕн кунсеренех хаклăран та хаклăрах пулма пуҫларĕ. Чи йывăр, тĕксĕм, текех ĕнтĕ пурăнма шанăҫ та юлман пек самантсенче Тăван ҫĕршыв пире хаклăран та хаклă туйăнать... Вăрҫă пуҫламăшĕнче пысăк инкексем тŭсрĕмĕр. Тепĕр чухне çурма выҫă, çарран та çапăҫма тиветчĕ, анчах пирĕн комсомолецсем нихҫан та найкăшмастчĕҫ. Пачах урăхла, вĕсем чи йывăр, чи ответлă заданисене кайма тăрăшатчĕҫ. Пирĕн учительсем — коммунист-командирсем, çакна лайăх ăнланатчĕҫ, пире чăннипех те ответлă заданисем паратчĕҫ».

Малалла Михаил Андреевич хăйĕн çывăх юлташĕсем — комсомолецсем — Гитлера çапса аркатсан кам мĕнле аслă шкулсене вĕренме кайма ĕмĕтленни çинчен тĕплĕ çырса кăтартать. Куратăр-и? Хăйсем вилĕм ункинче, анчах вилесси çинчен мар, çĕнтересси çинчен, малалла вĕренесси çинчен ĕмĕтленеҫҫĕ.

Июльте Алексеева кĕҫĕн политрук ятне параҫҫĕ, Лакзузовский политрук вилнĕ хыççăн ăна рота политрукĕ туса хураҫҫĕ.

Пире канăҫ памасăр йĕрлесе пыракан нимĕҫ автоматчикĕсемпе минометчикĕсем июлĕн 20-мĕшĕнче Китайгород таврашĕнчи пĕр пĕчĕк хутора канма, çĕр каҫма чарăнаҫҫĕ. Çав отряда пĕтерсе тăкма Вара лейтенант взводне приказ параҫҫĕ. Взводпа пĕрле Алексеев полит-

рук та каять. Кĕскен: вĕсем 13 фашиста ĕмĕрлĕхех пĕтереççĕ, 5 фрицпа пĕр лейтенантне батальона илсе çитереççĕ. Пирĕн енчен 7 çын вилнĕ. Çакăншăн Вара лейтенантпа Алексеев политрука Хĕрлĕ Ялав орденĕ памалла тăваççĕ. Ун çинчен пĕтĕм дивизие пĕлтереççĕ. Зельман комиссар çав орденсене Киева çитсен парасси çинчен пĕлтерет, анчах орденсене курма та, илме те май килмест.

Август пуçламăшĕнче 13-мĕш армин каллех çав тери йывăр лару-тăрăва лекет. Вăл Киевран инçех мар вăрманта тăрать. Кунта ытти соединенисем те лăках иккен. Фашистсем кунсеренех çунтармалли бомбăсем, çунакан бензин пичкисем пăрахаççĕ, пулеметсенчен ăшалаççĕ. Çанталăк пăчă. Шыв, апат-çимĕç, медикаментсем çук. Пушара сӳнтермелле. Çак «тамăк хураннĕнче» вĕсем сакăр кун тăраççĕ.

«Августăн 3-мĕшĕнче каçхине 10 сехетре пирĕн 13-мĕш армин командованийĕ командирсемпе комиссарсене, политработниксене çапла пĕлтерчĕ: ирхине, тăватă сехет çитеспе, пирĕн çĕр самолет вĕçсе килет те тăшман тăракан вырăна бомбăсем тăкма пуçлать. Çав вăхăтра эпир, тăшманпа хăюллă кĕрешсе, çак вилĕм ункинчен тухса, Киева çитмелле, унтан, Днепр урлă каçса, хамăрăннисемпе пĕрлешмелле. Ку хыпара пĕлсен, аран ура çинче тăракан, аран сывлакан салтаксем пĕр-пĕрне ыталаса чуптума пуçларĕç. Çак çурма çарран, çурма выçă, анчах та мораль тĕлĕшпе хурçăран та çирĕп çар çыннисем совет çĕрĕн кашни метрне, утăмне хӳтĕлеççĕ. Вăрмантан пирĕн виçĕ сехетре тухмалла. Никам та тăшман аллине лекесшĕн мар. Салтаксем вăрмантан та çӳллĕ вышкăна тăратса лартрĕç, ун тăррине «Фашистсене Украина мар, чышкă карланкăран» тесе çырнă хĕрлĕ хăмач çакрĕç. Шăпах виçĕ сехетре пирĕн соединенисем вăрмантан тухма пуçларĕç. Фашистсем пĕр çур сехете яхăн шăпăртах тăчĕç-ха. Эпир хӳме пек стройпа шăппăн, пемесĕр, Киев еннелле утатпăр. Сасартăк сывлăшра тĕрлĕ тĕслĕ ракета çурăлса кайрĕ. Фашистсем пирĕн çине 30 танк ячĕç, минометсенчен пеме пуçларĕç, каярахпа самолетсем вĕçсе хăпарчĕç... Кунта мĕн пулса иртнине халĕ çыраймастăп... Каçарăр... Куççуль мана итлемест... Тепринче... Чăваш ачисем çинчен те... Нумайччĕ вĕсем... Маттурччĕ...

Аллăра парăр. Сирĕн М. А.»

ВĔҪĔНЧЕ КАЛАНИ

Августăн 7-мĕшĕ тĕлне 99-мĕш стрелковăй дивизи икĕ ушкăна уйрăлнă. Пĕрне дивизи командирĕ П. П. Опякин полковник, тепĕрне штаб начальникĕ С. Ф. Горохов ертсе пынă.

Опякин генерал-майор вăрçă хыççăн Горохов патне акă мĕнле çыру çырса янă:

«Августăн 7-мĕшĕнче çутăласпа ниçталла кайма та май килмерĕ. Хĕвел тухса çӳлелле хăпарма пуçласан, таврара мĕн пулса иртни йăлтах куç умне тухса тăчĕ. Паянхи кун пирĕн дивизишĕн чи хăрушши пуласси куç умĕнче. Пире пур енчен те — флангсенчен те, тылран та ăшалаççĕ. Ниçта кайса кĕме те çук. Халĕ ĕнтĕ эпир çакна ăнланса илтĕмĕр: ункăна çĕмĕрсе тухма нимĕнле шанăç та çук, пирĕн героикăлла походăн трагедиллĕ юлашки кĕрешĕвĕ инçе мар, куç умĕнчех.

Ман тавра пурĕ те 200—300 çын çеç юлчĕ. Эпĕ, дивизи командирĕ пулнă май, вĕсене тӳрременех чăннине каларăм: çак лару-тăрура эпир, комиссарпа иксĕмĕр, вĕсене ирĕке илсе тухма пултараймастпăр. Спецгруппа пирĕнтен татăлса юлнă, унпа нимĕнле çыхăну та çук. Халиччен мĕн тума пултарнине эпир йăлтах тунă. Юлашкине хăвăр куратăр.

Полк комиссарĕ А. Т. Харитонов боецсемпе командирсене çапла каларĕ: «Павел Прокопьевич пиртен нимĕн те пытармарĕ, йăлтах тĕрĕсне каларĕ. Эпир тата пирĕн кӳршĕсем мĕнле пăтăрмаха лекнине хăвăр куçпа хăвăр куратăр. Ункăран пĕчĕк-пĕчĕк ушкăнпа тухмалли вăхăт çитрĕ. Чĕрĕ юлнисем çакна нихçан та ан манăр: пирĕн мухтавлă дивизин личнăй составĕ пĕр çывăрмасăр, канмасăр тискер те хăрушă фашистсемпе хĕрĕх ултă талăк паттăр та хăюллă кĕрешрĕ. Пирĕн командирсемпе политработниксем, боецсем, пĕтĕм личнăй состав Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслă пурнăçларĕ. Кăна

эсир ман сăмахсăрах ăнланатăр. Мана юлашки кунсенче çухатнă паттăр командирсене уйрăмах шел...»

Комиссар сăмахĕсене нимĕçсем кăшкăрашни, автоматсенчен пени, гранатăсем ӳксе çурăлни татрĕç.

Ку вăл августăн 7-мĕшĕнче ирхине 5 сехет тĕлнелле пулса иртрĕ. Фашистсем, автоматран персе, А. Т. Харитонова вĕлерчĕç. Вăл тĕлĕнмелле хăюллă, шиксĕр, паттăр, çав хушăрах çав терĕн ăшă кăмăллă, шанчăклă сыннăччĕ. А. Т. Харитонов граждан вăрçинче пулнă, В. И. Чапаев дивизийĕнче çапăçнă, рядовой салтакран пуçласа полк комиссарне çити ӳснĕ. Акă, халĕ ĕнтĕ вăл та ĕмĕрлĕхех куçне хупрĕ. Тăван çĕршывăн паттăр ывăлĕсен пĕрин хыççăн теприн пурнăçĕ татăлать. Ман куç умĕнче тенĕ пекех пĕрремĕш стрелковăй полк командирĕн паттăр та хăюллă заместителĕ, батальон комиссарĕ Е. Л. Розенштейн, тăшмана хирĕç штыкпа çапăçнă чухне саперсен батальонĕн командирĕ Г. С. Смуглый капитан, боецсене атакăна ертсе кайнă вăхăтра 196-мĕш полк парторгĕ Н. С. Астафуров лейтенантпа 6-мĕш рота командирĕ И. Ф. Кужима вилчĕç. Йывăр суранланнă М. Г. Снегов генерал-лейтенант тыткăна лекрĕ. Уйрăм-уйрăм пĕчĕк ушкăнсем çеç çырма хĕрринче хăйсене хӳтĕлеççĕ. Юлашкинчен, нимĕнле шанăç та çук пулин те, тăшманпа алла-аллăн тытăçса пăхма шутларăмăр. Пистолетсенче пĕрер е икшер патрон çеç юлнă. Çакă пирĕн мĕнпур çар запасĕ.

Çыран хĕррипе пĕчĕкçĕ вĕтлĕхсем, ланккама вырăнсем пур, пирĕн юлашки салтаксемпе командирсем çавăнта пытаннă. Хирĕç пеме патронсем пĕтсе çитнĕ, хăшĕсем юлашки патрона хăйсем валли хăварнă. Эпир лаптăкăшĕпе çирĕм тăваткал метр пулнă-пулман вĕтлĕхе пытантăмăр. Пăхатпăр, йĕри-тавра фашистсем хĕвĕшеççĕ, унтан та кунтан пирĕн салтаксемпе командирсене сĕтĕре-сĕтĕре тухаççĕ, вĕсене автомат кӳпчекĕсемпе е пистолетпа çапса анăратаççĕ, тыткăна илеççĕ. Мана та, манпа пĕрле юлнă виç-тăватă юлташа та халь-халь çак самант килсе çитесси паллă. Анчах эпĕ чĕррĕн парăнас çук-ха: хама валли пĕрне хăварнă. Çапла шутласа тăнă вăхăтра манăн пите пĕçертсе кайрĕ, куçпуç хуралса килчĕ... Эпĕ тыткăна лекнĕ...»

99-мĕш стрелковăй дивизин 2-мĕш ушкăнне С. Ф. Гороховпа дивизи артиллерийĕн командующийĕ И. Д. Романов полковник ертсе пынă. Ку ушкăна штаб чăçĕсемпе подразделенийĕсем, артполксемпе дивизионсем кĕнĕ. Вĕсем тăшманăн пĕрремĕш вутлă линине çĕмĕрсе-аркат-

са тăкнă, кайран ушкăнăн-ушкăнăн тарса ӳкме ĕлкĕрнĕ. Вара, штаб начальникĕ малтанах асăрхаттарнине асра тытса, Харьков çывăхĕнче пĕр çĕре пухăнма пуçланă. Боецсен пĕр ушкăнĕ дивизи ялавне те упраса хăварма пултарнă. Апла 99-мĕш стрелковăй дивизи пĕтмен, вăл çаплах чĕрĕ.

Часах дивизие çĕнĕрен йĕркелеççĕ, ăна йыш хушса параççĕ. Халĕ ĕнтĕ 99-мĕш стрелковăй дивизин командирĕ В. Я. Владимиров полковник, политпай начальникĕ И. Чернов полковник, С. Ф. Горохова урăх çĕре куçараççĕ.

СССР Оборона наркомĕ приказĕ тăрăх, Тăван çĕршывăн нимĕç захватчикĕсемпе кĕрешнĕ чухне паттăрлăхпа хăюлăх, тӳсĕмлĕхпе хастарлăх, çирĕп дисциплинăпа йĕркелĕх кăтартнăшăн 99-мĕш стрелковăй дивизие Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă, дивизие 88-мĕш Хĕрлĕ Ялав орденлă гвардиа стрелковăй дивизийĕ ят панă.

Берлин хули варринче Тиргартен паркĕ пур. 88-мĕш дивизире пулнă боецсемпе командирсем тăшман çине çакăнтан юлашки хут пенĕ. Çĕнтерӳ кунне те çакăнтах кĕтсе илнĕ. Кунтах дивизие Ленин орденĕ параççĕ, унăн пур полкĕсем те наградăсем илме тивĕç пулаççĕ. Вăрçă вĕçĕнче дивизин пĕтĕмле ячĕ çапла пулнă — 88-мĕш Запорожски Ленин орденлă, Хĕрлĕ Ялав, Суворовпа Богдан Хмельницкий орденĕсемлĕ гвардиа стрелковăй дивизийĕ. Ку дивизире Совет Союзĕн Геройĕсем вунтăваттăн çитĕннĕ, унăн 8 пин ытла воинĕ правительство наградисене илме тивĕç пулнă.

Халĕ Европăри кĕнеке лавккисем вăрçă ветеранĕсен мемуарĕсемпе тулса ларнă. Мĕн-мĕн кăна çырмаççĕ пулĕ хăй вăхăтĕнче Гитлера суя сведенисем парса тăнă генералсемпе офицерсем! Хăшĕ-пĕри, хăйне хӳтĕлес тесе, халĕ тĕрĕссине калама та хăю çитерет. Вĕсем вырăс воинĕсем чикĕре хăйсене мĕн тери çирĕп те хăюллă, паттăр та чăрсăр кĕтсе илни çинчен те çыраççĕ.

Генералсемпе офицерсем каппайчăк Гитлер ăнтăлăвне малалла тăсма ĕмĕтленекенсене çапла вĕрентеççĕ: иртнине шута илĕр, хĕвелтухăçĕнче çăмăл çĕнтерĕве ан шанăр. Çĕнтересех тесен, пире, ваттисене, чĕнĕр, пирĕнпе канашлăр, теççĕ вĕсем.

Çапла, Перемышль хулипе крепоçне, ăна хӳтĕленĕ совет паттăрĕсене гитлеровецсем çаплах манаймаççĕ-ха. Ăшă та канлĕ пулман çав вĕсене унта. Ĕмĕр асăнмалăх тăн кĕртнĕ. Анчах пирĕн пограничниксем çеç вăрçăн мал-

танхи эрнинче 5000 фашиста леш тĕнчене ăсатнине те, 99-мĕш стрелковăй дивизи 46 кун хушшинче нимĕçсен виçĕ дивизине тĕппипех аркатса тăкнине те вĕсем шарламаççĕ. Намăс теççĕ пулас.

АВТОРТАН

Кĕнеке авторĕ Перемышль хулине хŭтĕленĕ пур чăвашсене те кăтартас тĕллев лартман. Ун пек тĕллеве пурнăçлама та май çук, мĕншĕн тесен вĕсенчен нумайăшĕ вăрçă хирĕнче выртса юлнă, чылайăшĕ яла таврăнсан çĕре кĕнĕ. Чăвашсем, вырăссемпе тата ытти наци çыннисемпе пĕрле, пĕр танах çапăçнă. Çавăнпа автор чăвашсене уйрăммăн илсе кăтартмасть, вĕсене ытти халăхсен паттăрĕсемпе юнашар тăратать. Кĕнекене пичете хатĕрленĕ вăхăтра пулăшнă юлташсене, Элĕкри Пионерсен çурчĕ çумĕнчи «Чайка» клубăн çамрăк йĕрлевçисене, уйрăмах М. В. Никифоров юлташа, чĕререн тав тăвать.

ТУПМАЛЛИ

Малтан калани 3
Пĕрремĕш тĕлпулу 9
Иккĕмĕш тĕлпулу 17
Виççĕмĕш тĕлпулу 23
Тăваттăмĕш тĕлпулу 24
Пиллĕкмĕш тĕлпулу 34
Улттăмĕш тĕлпулу 40
Çиччĕмĕш тĕлпулу 43
Саккăрмĕш тĕлпулу 47
Тăххăрмĕш тĕлпулу 49
Вуннăмĕш тĕлпулу 54
Вунпĕрмĕш тĕлпулу 66
Вуниккĕмĕш тĕлпулу 77
Çыру тăрăх паллашнисем 85
Пĕрремĕш çыру 87
Иккĕмĕш çыру 88
Вĕçĕнче калани 92
Автортан 95

Геннадий Александрович
ПЛАСКИН

НАШИ ЗЕМЛЯКИ —
ГЕРОИ ПЕРЕМЫШЛЯ

На чувашском языке

Редактор **И. Я. Тенюшев**
Художественный редактор **Г. С. Самсонова**
Технический редактор **В. П. Окина**
Корректор **Н. П. Печникова**

ИБ 2403

Сдано в набор 27.07.88 г. Подписано к печати 03.02.89 г. НТ 26043. Формат 84×108¹/₃₂. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 5,04. Усл. кр.-отт. 5,25. Учетно-изд. л. 5,26. Тираж 3000 экз. Заказ № 2670. Изд. № 109. Цена 20 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР
по делам издательств, полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

20 п.

ЧАВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ